К84.09(=Чув)
Ф53
Ч-44582

Лидия Филиппова

Тӗл пулӑпӑр чунсен ытамӗнче

Национальная библиотека ЧР
4-044582

Лидия Филиппова

Тӗл пулăпăр чунсен ытамӗнче

Художникӗ – Анна Турхан

<u>Кӗнекене кун çути кăтартма пулăшнăшăн И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чăваш патшалăх университечӗн ректорне, маттур чăваш арне Лев Пантелеймонович Куракова таса кăмăлтан тав тăватăп.</u>

Шупашкар 2001

84(2Рос=Чув)6-445-47-52-57 ,444.3
К 84. 09(=Чув)8-4-5
Дарственный экз.

ББК Ч Ш44(2)(=635.1){6}*45
Ф53

Филиппова Л.И.
Ф53 До встречи в объятии душ.
Чебоксары: Изд-во Чуваш.ун-та, 2001.
204 с.

ISBN 5-7677-0592-3

В книгу вошли материалы-произведения разного жанра (стихи, рассказы, зарисовки, переводы, публицистические статьи), написанные автором.

Проверено 6 СЕН 2017

ISBN 5-7677-0592-3
ББК Ч Ш44(2)(=635.1){6}*45

И-44582

© Филиппова Л.И., 2002
© Иллюстрации. Турхан А.О., 2002

Национальная библиотека
Чувашской Республики

Ӑҫта эс, вичкӗн куҫлӑ хӑюллӑ Чӑвашӑм?..

ЧӐВАШ ЕНӖМ

Чӑваш Ен! Сан ҫинчен ман сӑмахӑм.
Ырату, ҫухату... – сан пирки.
Хӗмленет чунӑмри шӗл кӑварӑм,
Тӗнчене ӑшӑтать пайӑрки.

Хушса юрламалли:
Чӑваш Ен! Чӑваш Енӗм!
Янӑрать мӑнаҫлӑн сан яту.
Чӑваш Ен! Чӑваш Енӗм!
Иксӗлми сан пултӑр хӑвату!

Чӑваш Ен! Кулленхи ман ҫулташӑм!
Кӑмӑла хуҫтармӑпӑр ҫукка.
Умӑмра – ман Атӑлҫи Пӑлхарӑм,
Парӑнасшӑн вӑл пулман ютта.

Чӑваш Ен! Ман шанчӑклӑ юлташӑм!
Ҫирӗпрех тӑвас килет утта.
Чӑваш Ен! Ман ӗмӗрхи хӑлатӑм,
Упрасамччӗ авалхи ҫутта...

МĚСКĚНЕХ-ШИМ ЮЛĂПĂР?

/Анатолий Кипече-
“Канашсем” ентешлĕх ертӳçине/

Мĕскĕн пулнă...
Мĕскĕнех-шим юлăпăр?
Вăйсăр юлнă...
Вăйсăрах-шим пулăпăр?
Тĕнчери ăçтиçука
Хăпартса-шим лартăпăр?

Чăваш Юман пулса кашланă.-
Сулмаклă, çирĕп вуллисем.
Ĕмĕрлĕхех тымар та янă,
Шел, çирĕп пулайман вĕçем.
Тав тумалла ăçтиçука,
Касса татать пĕтĕм йăха.

Анваскăр пĕтерме, ан васкăр!
Эпир çавах та вăйсăр мар!
Кар! çĕкленетпĕр те, куратăр,
Чăваш вăл ятсăр çӳпĕ мар!
Шăлатпăр пур ăçтиçука,
Çут кун ан пултăр йăх-яха!

Пурĕпĕрех пурте вилетпĕр,
Чыс-сум пымасть леш тĕнчене.
Кунта укçа вăйне хаклатпăр,
Лере хакласçĕ чыс вăйне.
Вара мĕн-пур ăçтиçука
Тинех çул пулĕ тамăка!

Эп - Канашсем. Эп - Çеçпĕл хĕрачи!
Çак пил сунать малтан-мала утма.
Эп - Канашсем. Эп - Çеçпĕл хĕрачи,
Юрамастех ентешĕмрен юлма!

САМАНА

(Ентешĕме - “Чувашкредитпромбанк” ертӳçине В.В. Гурьева)

Ан çаптар саккăрла, самана!
Ан выля пурнăçпа!
Ан кăтарт усал хăватна!
Ан вăрçтар тăванна!

Шикленетпĕр кайма хăнана.
Савăнма халăхпа.
Пуç çапатăн çав укçана,
Ал тытан пуянпа.

Ан пăтрат, ан пĕтер ыр çынна!
Вăл пурнать хавалпа.
Сăпайли, сапăрри вырăнне
Кĕрешсем усалпа.

Чарăнма пĕлмен вăрçăна
Йăвашлат ырăпа.
Тăлăх юлнă ачан куççульне
Типĕтсем ачашпа.

Нушапа пурăнан çук çынна
Тивĕçтер юр-варпа.
Хайшĕн çеç çунан пуяна
Вĕрентсем пулăшма.

Ан çаптар саккăрла, самана!
Туслаш йăвашпа!
Çырлахтар усал кăмăлна!
Лăплансам сăваппа...

КАНАШСЕНЕ

Куç тулли эс, тăванăм, паян.
Туслăхра, ентешĕм, чунпа вăйланан.
Халăхпа пĕрле чух чуну та пуян.
Çĕклен, Канаш ен, хăватлан!

Канаш ывăл-хĕрĕ! Тинкер те – куран,
Алран тытăнса малалла талпăнан.
Пур Костина пирĕн, вăй пур-ха Петрован,
Сарри, Сарине... – сасси янăрать
пăрчăканăн.
Укçа та тăваççĕ, çынна та сиплеççĕ,
Ташлаççĕ, юрлаççĕ вĕсем – Канашсем.
Хаçат кăлараççĕ, шкулта вĕрентеççĕ,
Кил-çурт хăпартаççĕ – каллех Канашсем.

Куç тулли эс, тăванăм, паян.
Туслăхра, ентешĕм, чунпа вăйланан.
Халăхпа пĕрле чух чуну та пуян,
Çĕклен, Канаш ен, хăватлан!

ЭП - САН ХĔРӲ

Ăçта кăна пулман пуль эпĕ халиччен:
Мускав та Питĕр, Хусанпа Ĕпхӳ...
Çӳренĕ тĕнче тăрăх кăмăл туличчен,
Кансĕрлеймен çил-тăвăл та йĕпхӳ.

Аçтăрхана манаймăп. Вăхăт çитиччен
пулман эп тунсăхлă, пулман салху.
Çӳренĕ урари пушмак çĕтĕличчен,-
Шухăшăмсем нихçан пулман хĕрхӳ.

Çӳренĕ тĕнче тăрăх чунăм каниччен -
Мура çухалтăр пур хуйху-суйху!
Лăпланаймастăп чунăм тухиччен,
Мĕнех тăвам, тĕнче, эп - сан хĕрӳ...

ÇĔР ПУС Е ÇĔР ТУС?

«Çĕр пус пуличчен çĕр тус пултăр!» -
Çапла ахальтен каламан ватăсем.
Паян урăхла: «Кĕсье тулли пултăр!
Укçа çук пулсан, çук санăн туссем».

Хăшне-пĕрне вăлах кирлĕ пултăр.
Тултарччĕр килне телевидеосем.
Сан нишлĕхне кура сĕмсĕррĕн кулччăр,
Туянччĕр пиншер тăракан кавирсем.

Кăмăлăмран капла мĕнех юлтăр, -
Укçа тĕксенех сутăнаççĕ туссем.
Маншăн вара чунах таса пултăр,
Ыттине пурпĕрех тупатăп, туссем...

ИРТЕТ КУН-ÇУЛ

(Аннене - Р.Д.Филиппована)

Тӗнче тивлечӗпе иртет кун-çул,
Ырри, усалӗ - пурте пур, ан кул.
Паян пӗри кӳрентерет, ыран - тепри,
Пурне те тӳсӗмлӗн чӑтать этем чӗри.

"Çынна ан кӳрентер, сӑпайлӑ пул,
Ӑна эс сун тип-тикӗс такӑр çул!" -
Шав вӗрентет чунри анне сасси,
Унпа курнать пек уççӑн пуласси.

Кашни çын чӗринче пулсан çак пил,
Пур çут тӗнче пулатчӗ тӑван кил.
Анчах ялан çука юлать ырри,
Пуç касӑртать хури те начарри.

Тус-тӑвансем! Кирлех-ши пире мул,
Чӗре çинче пулсассӑн йывӑр чул?
Пуç çапар мар нихçан пуянлӑха,
Хаклар-и çынсенче тасалӑха?

ÇĔР-АННЕМ

Çĕр-Анне куççульпе макăрать.
Халăха ăслăрах пулма тилмĕрет.
Çут çанталăк типет, пĕтет,
Çĕр планета кун-çулĕ сÿнет.

Çĕр-Анне куççульпе тинкерет.
Халăха йăвашрах пулма тилмĕрет.
Таçта мар, юнашар вăрçă шавĕ кĕрлет,
Мирлĕ çын мĕншĕнне пĕлмесĕр вилет.

Каçар, Çĕр-Аннем! Сана пĕтерет
Хăвăн ывăл-хĕрÿ. Типĕтет
Çĕр çинчи пурнăçа. Мĕн кĕтет?
Çакна эпир мар, пĕр Турă пĕлет.

Çĕр-Анне куççульпе макăрать...

Тĕттĕм...

Тĕттĕм.
Йĕри-тавра тĕттĕм.
Çутă кун пулсассăн та - тĕттĕм.
Ялтра хĕвел ялкăшсассăн та - тĕттĕм.
Чунсенче пирĕн тĕттĕм.
Пуçсенче те тĕттĕм.
Тĕттĕм...

Суккăр...
Ăслă çын та суккăр.
Витĕр пăхаканни те - суккăр.
Икĕ-виçĕ куçлăх тăхăнсан та - сĕм-суккăр.
Чунпа эпир суккăр.
Шухăшра пурте суккăр.
Суккăр...

Мĕскĕн...
Пĕтĕм тĕнче мĕскĕн.
Кăшкăраççĕ пулсан та - мĕскĕн.
Эх, чăвашăм! Мĕншĕн эсĕ пит мĕскĕн?
Чунпала эпир мĕскĕн.
Туслăхра та мĕскĕн.
Мĕскĕн...

Тĕттĕм. Суккăр. Мĕскĕн. Мĕншĕн?
Ăçта эс, вичкĕн куçлă хăюллă чăвашăм?

СИРТЕ - МАЛАШЛĂХ!

/ЧПУ ректорне Л.П.Куракова/

Шăпа тени кашнин хăй евĕр,
Кун-çул сакки кашнин расна.
Пĕрин - алра ялан кĕлентĕр,
Ним вырăнне хумасть çынна.

Тепри вара, пыл хурчĕ евĕр,
Тупать телей ĕçре кăна.
Кун пек чухне вара, пĕлетĕр,
Пыл мар, сив шыв пырать чуна.

Мĕнех, калаччăр: "Эс - çĕр хурчĕ,
Эс тивĕç мар çут кун курма.
Сана валли - чухăн кил-çурчĕ,
Ан пăх, ан хăй çутта тухма!"

Тепри вара? Вăл - укçа хурчĕ,
Пĕлмест çын евĕр йăл! кулма.
Нухрат сан çук-и? Эппин сурчĕ,
Эс тивĕç мар унпа пулма.

Çук, çук, çимест вăл хура çăкăр,
Ĕçре сан пек тар кăлармасть.
Ун пек çынна, асту, ан сăхăр,
Кирлех-тăк, нимĕн хăвармасть.

Çук унăн тус-тăван, йăх-несĕл,
Пĕчченлĕхре эп вăйлă, тет.
Анчах çакна пĕлмест: çынсемсĕр
Пĕччен вăл пурпĕрех пĕтет.

Пуçра ун - ресторан та шашлăк,
Умра - гранат та ананас.
Мĕнех, ялан çапла пулас-тăк
Мĕн-ма-ха уншăн кулянас?

Анчах чунран капла мĕн юлтăр?
Пурте укçа чури пулсан?
Куççульсĕр йĕрĕ Çĕр-Аннемĕр
Ĕçченсĕр, хўтлĕхсĕр юлсан.

Аллăмăрта - малаш, пуласлăх,
Кам аллинче вăл? Кам хуçи?
Сирте, янташăм, тен малашлăх?
Сирте тен ĕмĕрсен уççи?

...

Шăпа тени кашнин хăй евĕр,
Кун-çул сакки кашнин расна...

САМАНА

/В.И.Филиппова- Сельцована/

Эй, самана! Ăçта илсе çитерĕн?
Тата мĕнле асап кăтартăн малашне?
Мĕн-ма çак таранччен упрарăн,
Кăтартăп терĕн-и чăн пурнăç тутине?
Ăçта ан пăх - выç кашкăрла вăрçаççĕ,
Ăçта ан пăх - «ĕмеççĕ»,çаратаççĕ
çынсене.
Унта - хывăнтараççĕ, мăшкăллаççĕ,
Кайран - кайран сураççĕ нар питӳ çине.
Эй, самана! Ăçта пырса тухатпăр?
Нивушлĕ пирĕн юлчĕ халь пĕр çул?
Тĕпсĕр çырма умне пырса тăратпăр -
Нивушлĕ çукка пирĕншĕн ыр çул?
Тус-юлташсем! Мĕне эпир кĕтетпĕр?
Пĕтерччĕр тетпĕр-шим чи ыррине?
Чун-чĕресем пăрланчĕç пирĕн, курăр,
Çын асапне шута илместпĕр ниепле.
Ăçта тăван? Ăçта йăх-несĕл?
Манатпăр, пытанатпăр вĕсенчен.
Хальхи саманара пĕчченлĕх
Сыхлать, упрать мĕн-пур усалсенчен.
Эй, Атте Турăçăм! Çветтуй Мария!
Шанмастпăр сирĕнсĕр тек никама.
Çĕршыв пуçлăхĕсем ахаль çынна -
сураççĕ,
Мĕн-пур ăçтиçука пуçтарнă хăй тавра.
Çак нишлĕхре телей çинчен каласмăп.
Ку пулĕччĕ хамран кулни пекех.
Пурĕпĕрех çутă куна шанатăп.
Вăл килетех... Вăл ситетех...

Национальная библиотека
Чувашской Республики
И-44582

ТЕПЁР ХУТ-И?

/Аттене - И.Ф.Филиппова/

Тепӗр хут килес пулсан эп тӗнчене,
Улăштармăттăм нимех те хамăн
пурнăҫра.
Пулăттăм-и тен кăшт чеерех тата
Кӳрентерместӗм нихҫан та никама.

Тепӗр хут килес пулсан эп тӗнчене,
Курман пулăттăмччӗ хурапа шурра.
Пăхăттăм пурин ҫине кулса тата
Юрататтăмччӗ тен пӗтӗм тӗнчене.

Тепӗр хут килес пулсан эп тӗнчене,
Пӗччен ӳстерместӗм-и тен Сентиере.
Парнелӗттӗм ăна Сайте, Айтар тата
Кун кунламан тен пулăттăм ӗҫре.

Тепӗр хут килес пулсан эп тӗнчене,
Кун панă ҫынсене "Тайма пуҫах!"
теттӗм.
Вӗсен пилне ăшра, асра тытса вара
тус-тăшмана, тен, уйăрма пӗлеттӗм.

Тепӗр хут килес пулсан эп тӗнчене,
Хам тăван халăхăма ҫаплах савса
юрлаттăм.
Чăваш ҫыннин асаплă кун-ҫулне тата
Хам пурнăҫа урăхларах ҫыраттăм...

САНРА - ПУЛАСЛĂХ

/Н.Е. Лукианова/

Санра чăваш пуласлăхĕ, тăванăм,
Санра вăл хăй пуласлăхне курать.
Эппин, ĕçлер-и çанă таварса,
çулташăм?
Çапла тума пĕтĕм чăваш ыйтать.

Ăçта паян сан хăвату, чăвашăм?
Хăçан вăл хăй çулне-йĕрне тупать?
Мĕн-ма асаплăн тинкерет çулташăм?
Куççуль авăрĕнче мĕскер-ши вăл
шырать?

Ытла та тарăн пулчĕ-шим суранăм?
Аран-аран ентешĕм йăл илет.
Сан асапна, ман Атăлçи Пăлхарăм,
Нивушлĕ тепĕр хут курмах тивет?

Ăçта-ши эс, кĕрнек мăнаç Юманăм?
Санра Чăваш пуласлăхне курать.
Аваллăхран пăхать Ошель, Пăлхарăм,
Чăваш тĕнчи хăй ывăлне сăнать...

ТĂВАНСЕМ

(В. тата О. Филипповсене)

Аннесем çинчен нумай юрлатпăр,
Манăçмаççĕ пирĕн аттесем.
Пиччесем çинчен темшĕн манатпăр,
Хаклă мар-им аппасем, пиччесем?

Тăвансем, пĕрле сахал пулатпăр,
Ах, ытла та вăрăм çулĕсем.
Пурпĕрех тĕл пулăва кĕтетпĕр,
Кăлтлатса тапаççĕ чĕресем.

Тăвана тăван пĕлми пулатпăр.
Çук! Ăмсанса калаçчăр ыттисем.
Пĕрле чух чунпа та вăйланатпăр,
Савăнса тăрайччăр аннесем.

Пĕр-пĕрне пăхса савса юрлатпăр,
Пĕр-пĕриншĕн - ырă сăмахсем.
Яланах çапла туслă пурнатпăр,
Эпир пурте, пурте - тăвансем.

Хушса юрламалли:
Пиччесем, аппасем, шăллăмсем!
Савăнатăп çĕр çинче эсир пурришĕн.
Пиччесем, аппасем, шăллăмсем,
Пулас марччĕ çичĕ ют пĕр-пĕриншĕн.

КУ - ЮЛТАШ МАР !

Кирлĕ мар юлташ сĕтел хушшинче,
Пурнăçра утăмран вăл сутсан.
Куллен пĕрле çӳренĕ çинче,
Тепринпе сан сăмахшăн кулсан.

Кирлĕ мар юлташ сĕтел хушшинче,
Пулăшас вырăнне мулкач евĕр тарсан.
Е тата ултава курса тăнă çинче
Шăп-шăпах, чĕлхе çĕтнĕн, тăрсан.

Кирлĕ мар юлташ сĕтел хушшинче,
Тăшман умĕнче шикленсе пуç тайсан.
Чи яваплă, хĕрӳ самант варринче,
Йывăртан хăраса çултан пăрăнсан.

Кирлĕ мар юлташ сĕтел хушшинче,
Çăкăр-тăвар техĕмне час мансан.
Е тата теприне ăмсанса, пĕринче,
Сан çине килпетсĕр сурсан.

Кирлĕ мар юлташ сĕтел хушшинче,
Укçапа пуяна куç хывса пуç çапсан.
Чăннипе хăй камне манăçа кăларса,
Мĕскĕне, нишлĕне ал сулсан...



АН ПĂРАХĂР АЧĂРСЕНЕ!

Çĕр çине килет çĕнĕ чун,
Кулса тинкерет ашшĕ-амăш çине.
Ан ÿркен, эс ăна ырă сун,
Алла ил те, юрат пепкÿне.

Хушса юрламалли:
Ашшĕсем, ан пăрахăр ачăрсене,
Ан хăварăр тăлăха мĕскĕнсене.
Ашшĕсем, ан пăрахăр ачăрсене,
Кам хĕрхенĕ вĕсене, тăлăхсене?

Ак каллех килет çĕнĕ кун,
Туясшăн ăна çывăх çын ачашне.
Ăнлансам. Йышăнсам. Эс ан сун
Пĕчĕк чуна тăлăхсен кун-çулне.

Эс, атте, мĕн тăван? Ан тун!
Ма пăхмастăн текех кил енне?
Кирлĕ мар-им, атте, хăвăн юн?
Ма çуратрăр мана, мĕскĕне?

Пĕрле чух хĕпĕртетчĕ чун.
Йăлкăшса пăхать ашшĕ-амăш çине.
Ашшĕ çук та, аманать ачаш чун,
Кам ирттерĕ, сиплĕ суранне?

САНА, ШУПАШКАРĂМ!

Ырă ир сунатăп, Шупашкарăм!
Вăрансам, хулам! Кĕтеç ĕçсем.
Сан çине пăхать тĕнче, Чăвашăм!
Ан кĕттер! Васка! Иртеç çулсем!

Ырă кун сунатăп, Шупашкарăм!
Тухăçлă, хăватлă пулччăр ĕçӳсем!
Ан ӳркен, ĕçле, ыр çыннăм!
Лайăхпа асилччĕр çĕнĕ ăрусем.

Эсĕ ман мăнаçăм, Шупашкарăм!
Çĕкленеççĕ кунсерен керменсем.
Тĕнчере паян сана, Чăвашăм,
Хисеплеççĕ те чыслаççĕ халăхсем.

Ырă каç сунатăп, Шупашкарăм!
Лăпкă канăр, хаклă ентешсем!
Эс те тĕлĕр, Атăл, юхан шывăм,
Тутлă ыйхăра сыхлам-ха, тăвансем!

ПОЭТ ЧУНĔ

/Раиса Сарпие/

Тĕрĕслĕх пуррине ĕненет поэт чунĕ,
Сăвăра та ун ырă усала çĕнтерет.
Синкерлĕ пулсан та - хĕвеллĕ кунĕ,
Çук,теççĕ пулсан та, çын чунне витерет.

Чурăс çынна та поэт сывлăх сунĕ,
Хăй шухăшне халăха пĕлтерет.
Вĕчĕх чунлă тӳре çине - сурĕ,
Ăна çĕнтерме те вăй-хăват çитерет.

Чĕрене тăрăнать, амантать усал сăнă,
Поэт хăватне пĕтерме сĕкĕнет.
Кун пеккине те тӳсет поэт чунĕ,
Усала ырăпа аркатма мехел çитерет.

ÇĔНТЕРӲ

(Асаттене - Сталинград патĕнче пуç хунă Ф.Т.Трофимова)

Куççульне шăлать ветеран -
Сипленмест вăрçă кӳнĕ суран.
Çук çумра пĕрле çапăçнă тусĕ,
Ун ӳтне ĕмĕр куракĕ пуснă.

Хушса юрламалли:
Асрах-ха, асрах çав çулсем,
Асрах-ха çав вилĕм кунĕсем.
Асрах-ха Берлин, рейхстаг,
Асрах, асрах Çĕнтерӳ.
Çĕнтерӳ, Çĕнтерӳ,
Ĕмĕр пултăр сăваплă яту.

Асрах паян та юлашки çапăçу,
Тăшман пульлипе тĕл пулчĕ тусу.
Çакă пулчĕ-шим юлашки курнăçу,
Мĕншĕн кĕске пулчĕ-ши кун-çулу?

Ан хурлан, ан кулян, ветеран,
Ун сăнне чунунтах эс упран.
Питĕ шел, иртме çук шăпаран.
Пурпĕрех ан хурлан эс, тăван!

Куççульне шăлать ветеран,
Тӳрленмест вăрçă кӳнĕ суран.
Çук çумра пĕрле çапăçнă тусĕ,
Ун ӳтне ĕмĕр курăкĕ пуснă.

ПУРӐНАТПӐР-ХА!

/Людмила Семенова
эстрада юрӑҫине/

Ҫӗр ҫине эпир килетпӗр
Ҫут хӗвел курас тесе.
Ҫут тӗнче хӑналӑх тетпӗр
Ыррине кӑна кӗтсе.

Хушса юрламалли:
Атте-анне сыв пулсан,
Тус-тантӑш ҫумра тӑрсан,
Упӑшка хыт юратсан,
Пурӑнатпӑр-ха, тӑван!

Пӗр-пӗрне час-час курмастпӑр.
Ҫывӑх мар-ҫке ҫулӗсем.
Тӗл пулсассӑн савӑнатпӑр,
Ҫӗкленеҫҫӗ кӑмӑлсем.

Тепӗр чух тем ӑнланмастпӑр,
Ҫиленетпӗр пӗр-пӗрне.
Ҫук ҫӗртех-ҫке тарӑхатпӑр,
Каҫармастпӑр ниепле.

Ӗҫ ҫине алӑ сулмастпӑр,
Хӑпартатпӑр керменсем.
Пурнӑҫа ӗҫре туптатпӑр,
Илӗртмеҫҫӗ черккесем.

Пуласси çинчен шутлатпăр,
Ӳстеретпĕр ачасем.
Вĕсенче малаш куратпăр,
Ырлăх курччăр ватăсем.

Савăнар-ха, юр юрлар-ха,
Ăмсанайччăр хăшĕсем.
Савăнар-ха, таш ташлар-ха,
Куç илми пирн тăвансем.

САНШĂНАХ

Çĕр çине килет çĕнĕ чун,
Кăмăлтан ăна ырă сун.
Эп пĕлеп, эсĕ ман çутă кун,
Саншăнах юрлать манăн чун.
Эп хатĕр кĕмешкĕн вута,
Эп сикĕп пĕр шиксĕр шыва.
Ман чĕре- сан чĕрӳн çурри,
Саншăнах тапать чарăнми.

Хушса юрламалли:
Çут хĕвел тухать кунсерен,
Сар шевли ӳкет сан çине.
Саншăнах куç уçап ирсерен,
Саншăнах çунать чĕре.
Саншăнах, саншăнах...

Саншăнах эп пулам Арăслан,
Эсĕ, тен, ачаш Акăшпи?
Кирлĕ мар ырату, суран,
Ачашлап сана кăмăлтан.
Саншăнах ӳсеç ачасем,
Ыталаççĕ савса ашшĕне.
Ах, мĕн-ма çунтараç туйăмсем,
Сан питне ачашлап ирхине.
Саншăнах, саншăнах...

САВĂНАР, ТУССЕМ!

/Кĕвви В.Александровăн
Л.Семенова юрлать/

Телей пирки кашни ĕмĕтленет,
Юратура телей вăл шырать.
Йывăр чухне чĕре асапланать,
Юрă-ташăра вара чун канать.

Хушса юрламалли:
Атьăр-ха, туссем, юрă юрлар,
Пурте пĕрле чухне савăнар.
Атьăр-ха, туссем, алă çупар,
Пурте пĕрле чухне ташă ташлар.

Тусу сан тăрать пĕччен мĕн-ма?
Итле мана, тухсамччĕ ташлама.
Хавас кĕвĕпе хуçкаланма,
Çĕнĕ туссем пултарĕç тупăнма.

Пăхсам: савăнать ватти-вĕтти,
Чунунта хĕвел шевли вылять.
Ан çыпçăнтăр çума инкек тени,
Тус-тăвану хавасланса ташлать.

Кичемленсе тăран пĕччен мĕн-ма?
Итле эсĕ, тухсамччĕ ташлама.
Хаваслă кĕвĕпе хуçкаланма,
Çĕн юлташу пултартăр хаклама.

ÇĔНĔ ÇУЛ

Сисĕнмесĕр иртрĕ кивĕ çул,
Çитрĕ-тăчĕ, кĕттермерĕ çĕнĕ çул.
Ан васка кайма, манпах эс пул,
Кăмăлтан-чунтан ахăлтатса кул.

Хушса юрламалли:
Хĕл Мучи! Юр пике! Ан кĕттерĕр!
Пĕтĕм халăх кĕтет кăмăлтан.
Хĕл Мучи саламне çитерсемĕр,
Савăнма тытăнар çавăнтан.
Хĕл Мучи-и-и! Юр пике-е-е! Ау-у-у!

Ан кулян, килет тепĕр çул.
Кив асап-нушана - алă сул!
Вăл та ку çитмест? Пурпĕр кул!
Хĕл Мучи парнелет çĕнĕ пил.

Пĕрле чух çĕнтерейме сивĕ çил.
Манăн тус пуласшăн? Эппин кил!
Тус-тăванпа ĕмĕр пĕрле пул,
Куççуль ан кăтарттăр çĕнĕ çул!

Иртĕ сисĕнми ак тепĕр çĕнĕ çул.
Иртнине пăхмасăр чунпа çамрăк юл.
Пĕтĕм тĕнчене эс ырă сун,
Çавăн чух савăнтарĕ çутă кун.

ПУÇЛА ЧУПМА!

Илемлĕ пӳ-сие кам юратмасть?
Чирлемесессĕн кам-ши савăнмасть?
Кур халĕ: еплерех ун шăнăрсем!
Вĕлт! Вĕлт! выляç кире пуканĕсем.

Хушса юрламалли:
Пăрах туртма! Пуçла чупма!
Ту физзарядка ирсерен!
Пăрах эс ассăн сывлама!
Ахăлтатса кул чĕререн!

Пирус туртсан ӳпке те сывламасть.
Сассу та уççăн-уççăн янрамасть.
Чĕре ялан чикет, пуç ĕçлемест...
Тепри вара пĕрре те чирлемест!

Эрех-сăра нихçан та ыр тумасть.
Нихăçан та ыр пурнăç кăтартмасть.
Ĕмĕрĕпе пулсан алра тулли черкке -
Алла лекмест çав ĕнтĕ чиперкке.

Куçсенче, асăрха, кĕркунне ман...

“НИЧТО НЕ ЦВЕТЕТ ВЕЧНО”

(Цицерон)



Нимĕн те ешермест ĕмĕр-ĕмĕр...
Паян, ак, илем куçа илĕртет.
Çитет те ыран – çанталăк ăмăр,
Тунсăх кĕввийĕ чуна хÿпĕрлет.

Нимĕн те ешермест ĕмĕр-ĕмĕр...
Йывăç-курăк тухать те – типет.
Этем те. Пурăнма пур та кăмăл,
Çулти вăй хушсассăн – сÿнет.

Нимĕн те ешермест ĕмĕр-ĕмĕр...
Пурччĕ те кăмăл йăваш пурăнма,
“Ку пурнăçра юрамасть пулма сапăр”, –
Тесе пуçларĕç тÿрех хăтăрма.

Нимĕн те ешермест ĕмĕр-ĕмĕр...
Юрать-ши усалăн чуна таптама?
Пулаймĕ куçа хупасси манăн кĕçĕр,
Вăхăт усала тамăка ăсатма.

Нимĕн те ешермест ĕмĕр-ĕмĕр...
Туйăмсем те. Кирлĕ мар вылянма.
Пурнăç – хăналăх. Кĕске пирĕн ĕмĕр.
Кирлех-ши çынсен чарăнми вăрçăнма?

Нимĕн те ешермест ĕмĕр-ĕмĕр...

КУ – ТЕЛЕЙ МАР!

Кĕтме пĕлекенсем телейлĕ?
Çук, çук, ку – пур чухне те мар.
Хăшин пулать шăпи синкерлĕ,
Вăл килĕ-ха тесе кĕтмешкĕн кирлĕ мар.

Кĕтме пĕлекенсем телейлĕ?
Теприншĕн тен? Анчах та маншăн мар.
Темле çут кун та кĕç пулать тĕтреллĕ,
Айван сăмахсене шанмашкăн кирлĕ мар.

Кĕтме пĕлекенсем телейлĕ?
Суя сăмах. Ку – паян куншăн мар.
Пуласлăхĕ курнать-ха та хĕвеллĕ,
Ыратăвĕ... Ăна та пытармашкăн кирлĕ
мар.

Кĕтме пĕлекенсем телейлĕ?
Мĕнле айванлăх! Пĕртте тĕрĕс мар.
Темле уяр çанталăк та кĕтретлĕ,
Кĕтме пĕлекенсем пурте телейлĕ мар!!!

ТИПНĔ ÇЕÇКЕ

Çеçке типсен, камах ăна юраттăр?
Тытаççĕ те, переççĕ кăларса.
Çеçкешĕн кам чĕри ыраттăр?
"Килте çўп-çап ан пултăр",– теççĕ-ха
тата.

Йĕркеллĕ çын ăçтан-ха паян чăттăр?
Йĕри-тавра пĕтĕрĕнет, ав, самана.
Пĕрин, ăслин, чунран каласчĕ: "Тăхтăр!
Çитет! Ан сут хăв тăванна!"

Мĕнех, тепри, чейи, пĕр чăрăнми мухтатăр,
Тата, татах çырайтăр панегириксем.
Çапла чееленсех ватăличчен пурнайтăр,
Тен, тупĕ хăй валли те парнесем.

Анчах... Çеçке типсен камах ăна юраттăр?
Этем те. Кирлĕ мар эс – ывăтаççĕ кăларса.
Мухтав юрри-и? Хăть чăрăнми янраттăр,
Çўремелле пулать хăвпа ху тăвăлса.

Çеçке типсен камах ăна юраттăр...

ÇУХАЛЧĔÇ ЫРĂСЕМ...

“Ӳкессе пĕлнĕ пулсан...” тенĕ ватăсем.
Мĕн тери ăслă сăмахсем.
Вилессе пĕлнĕ пулсан... Эх, шухăшсем,
Ман чĕрешĕн – çивĕч сăнăсем.

Манчĕç, тем, этем çинчен Ырăсем,
Улшăнчĕç çав пирĕн кăмăлсем.
Чунсене йĕкĕлтеççĕ, кăтăклаççĕ Усалсем,
Сасăсăр йĕреççĕ йăвашсем.

Мĕншĕн усалланчĕç халăхсем?
Лăпланмаççĕ, шав кĕрлеççĕ вăрçăсем.
Ав, тăраççĕ, пуç усса, тăлăхсем,
Вăранаймĕç “ыйхăран” ашшĕсем.

Вилессе пĕлнĕ пулсан-и? Ыйтусем...
Ир те каç канăç памаççĕ шухăшсем.
Пуçсенче çав-çавах ĕмĕтсем,
Пурăнатпăр-ха тетпĕр. Эх, тăвансем...

ЭП – ÇӲПĔ МАР!

Пулас килмест ман çĕрти çӳпĕ.
Усал тăвас килмест ман никама.
Шутлатăп та, ман чунăм – анлă кӳлĕ,
Вăй пур-и, çук-и, – пулăшатăп тăвана.

Пулас килмест ман çĕрти çӳпĕ.
Ура хурас килмест ман никама.
Пуянлăх, укçа-тенкĕ пур та – çĕрĕ,
Леш тĕнчере хака хумаççĕ тупрана.

Пулас килмест ман çĕрти çӳпĕ.
Ман ятăм пур. Пăхман куçран эп никама.
Ултав тĕнчи пĕтсен, çут кун, ак, килĕ,
Ун чух тĕрĕслĕхпе сиплетĕп сурана.

Пулас килмен ман нихăçан та çĕрти
çӳпĕ.
Хавасланса кĕтетĕп ырана.
Ултав-суя пĕтсен, ман кунăм çитĕ,
Тин лăпкăлăх вырнаçĕ чунăма.

ПĔЛĔТСЕМ



Ăçта васкатăр, пĕлĕтсем? Ăçта чупатăр?
Кам хуйхине илсе каятăр-ши пĕрле?
Унтан, çÿлтен, çын инкекне сăнатăр?
Е, тен, йĕретĕр эсĕр те çĕрле?

Ăçта васкатăр, пĕлĕтсем? Ăçта чупатăр?
Мĕн-ма-ха шăпăрт? Кĕрле-кĕрле
хура кĕрпе, тен, хушăран вылятăр?
Е, тен, илетĕр ман чуна пĕрле?

Ăçта васкатăр, пĕлĕтсем? Ăçта чупатăр?
Ан хăрăр! Ӳкместĕр пурĕпĕр çĕре.
Çĕр çылăхĕсене çÿлтен кăна куратăр.
Эпир вара çĕкленейместпĕр, ав, çÿле.

Ăçта васкатăр, пĕлĕтсем? Ăçта чупатăр?
Илсемĕрччĕ пĕрле! Çитерĕрччĕ киле!
Йывăрлăхран эсир те, тем, таратăр?
Чупас-и-мĕн хыçран ÿле-ÿле?

Ан васкăр, пĕлĕтсем! Ан чупăр!
Пĕччен чухне кĕрес килмест киле.
Унта - пуш-пушă. Каçсерен йĕретĕп.
Е, тен, йĕретĕр эсĕр те пĕрле?

Ан васкăр, пĕлĕтсем, ан чупăр!..

КУҪСЕНЧЕ - КĔРКУННЕ

Куҫсенче, асӑрха, кĕркунне ман.
Чунӑмра- куҫ курми тӑман.
Чĕререх упранать сӑнару сан,
Кама-ши унта эс саван?

Куҫсенче, асӑрха, кĕркунне ман.
Мĕн ҫинчен шухӑшлатӑн, тӑван?
Вӑйсӑрлантӑн пулсан - ларса кан,
Мĕн тӑван, пирченмест суран.

Куҫсенче, асӑрха, кĕркунне ман.
Ҫут тĕнчене курайми те пулан.
Тӑрас килмен нихӑҫан ҫынпа тан,
Куллен асилӳ авӑрне халь путан.

Куҫсенче, асӑрха, кĕркунне ман.
Куҫсенче - иртми сĕлкĕш, куран.
Мĕншĕн каймасть умӑмран сӑну сан?
Мĕншĕн маншӑн тарӑн пулчĕ суран?

Куҫсенче, асӑрха, кĕркунне ман...

ЭЛЕКҪĔ ЭСĔ

Элекҫĕ эсĕ. Чуну таса мар сан.
Пуясчĕ тесе ҫеҫ шухăшлатăн.
Сан ҫине пăхас та килмест ман,
Ҫын телейне усалпа ăмсанатăн.

Хăҫантан чапшăн ҫеҫ эс ҫунан.
Иртсе каясран тепри шикленетĕн.
Пуҫлăхсем умĕнче икĕ питлĕ пулан,
Урăх ҫын тивĕҫне хăвăн тăватăн.

Мĕскĕн эсĕ! Сас-чӳрен те хăран.
Тăванушăн савăнма та пĕлместĕн.
Тепĕр тесен, кам вăл саншăн тăван?
Упа пек пĕччен пурăнма пултаратăн.

Ăнланмастăп: кам вăйне эс сăван?
Ĕҫӳнте ҫӳллĕрен ҫӳле хăпаратăн.
Ыттисем ҫине ҫӳлтен халь пăхан,
Пурпĕрех тем ҫитмест,- кӳлешетĕн.

Сăмахпа ялан малта эс пыран.
Ĕҫӳ ҫук та - теприне хĕсме ăнтăлатăн.
Чыс-сăвап, тасалăх ҫук санăн,
Пурпĕрех ҫут тĕнче ҫине кӳренетĕн.

ВĂХĂТ ÇИТМЕН

Çĕр çинчен кайма ман вăхăтăм çитмен,
Палăртнă тĕллевĕме эп вĕçлемен.
Пурнăçран лайăххине нихçан кĕтмен,
Тен çапла тума вăй-халăм çитеймен.

Çĕр çинчен кайма ман вăхăтăм çитмен,
Тăван халăхăмшăн юнăм сивĕнмен.
Ырă ĕмĕт, шухăш-кăмăлăм пĕтмен,
Чăвашсемшĕн кун-çула эп хĕрхенмен.

Çĕр çинчен кайма сан вăхăту çитмен,
Тус-тăванна ырлăх лекеймен.
Тăван халăхшăн асап-нуша иртмен,
Тĕрĕслĕх кăвайчĕ чунра сӳнеймен.

Çĕр çинчен каймашкăн
пирĕн вăхăт çитеймен...

ЫРĂПА УСАЛ

Ырăпа Усал юнашар
Утнине курнă-и эсĕ?
Эпĕ курнă. Усал ырăран
Иртнине те пĕлнĕ.

Усал Ырăна пур вăйран
Хĕснине эпĕ курнă.
Ырă вăйран кайсан
Усалĕ ăна павма хăйнă.

Ырăпа Усал юнашар...
Усал Ырăна тĕп тăвать...

ХĂШĔ ÇĔНТЕРЕТ?

Чунри ырату куççульпе юхса тухтăр та,
Çухалтăр пĕчченлĕх кăшлавĕ.
Çынсем калаçни пуш сăмах пулсан та,
Хăй ĕçне тăватех юс минревĕ.

Ырăпа Усала тараса çине хур та,
Сăна-ха: хăшĕ хăшне çĕнтерет?
Ырри ытларах тетпĕр пулсан та,
Çиеле тухма лешĕ вăй çитерет.

ТАВĂРУ

Тавăру хĕлхемне ан чĕртсем,
Усал килессе ан кĕтсем.
Пăсасси, çапла, йывăр мар,
Телее пĕтерме кирлĕ мар.

Хушса юрламалли:
Тавăру... Ытла та хăрушă сăну.
Чĕрене амантать çирĕп сăнну.
Тавăру... Ырă мар сăнару,
Хăçан вĕçленет-ши куну?

Тавăру вырăнне ырă кўрсем,
Куççуль мар, шевлеллĕ кулă илсем.
Пĕр-пĕрне усал тăвар мар,
Турă йăлтах курнине манар мар.

Тавăру тенине чунна ан кĕртсем,
Пур-çука усала кăларса ан чĕртсем.
Пĕр-пĕриншĕн усал пулар мар,
Вăрçăнса теприне ура хурар мар.

ПĔЧЧЕНЛĔХ

/Людмила Ивановна/

Пĕчченлĕх куççулĕ. Хăрушă-çке эсĕ,
Мĕншĕн кăшлатăн чуна чарăнми?
Пĕчченлĕх ыратăвĕ. Хĕрхӳ-мĕн пит эсĕ,
Йĕрет, йĕрет тăлăх чун чарăнми.

Пĕчченлĕх тĕнчи. Пит тăвăр-çке эсĕ,
Чун-чĕре хушăран пулать сывлайми.
Пĕчченлĕх тĕрми. Асаплă-çке эсĕ,
Тăватăн сынна пуçа çĕклейми.

Пĕчченлĕх саманчĕ. Синкерлĕ-çке эсĕ.
Юлатăн çын шутне кĕрейми.
Пĕчченлĕх суранĕ. Пирчейĕн-ши эсĕ?
Пулатăн çапла тĕнчене курайми...



ХУÇĂЛЧĔ ÇУНАТĂМ

Ача чух пăхаттăм кайăк картине,
Харăс-харăс вăйлăн сывлăш каснине.
Эпĕ те шутлаттăм вĕсемпе пĕрле
Тӳпене вĕçмешкĕн çӳллĕрен çӳле-е-е!

Хушса юрламалли:
Хуçăлчĕ çунатăм, ӳкрĕм çĕр çине,
Виçнĕ чух илемлĕ уçлăх анлăшне.
Хуçăлчĕ çунатăм, вĕçейместĕп тек,
Ах, мĕн-ма-ши пулчĕ çак усал инкек?

Шанăçăм та пурччĕ, ĕмĕтĕм - инçет,
Ăçтан килсе тухрĕ çакăн пек тивлет?
Ырлăха шанаттăм, пулĕ теттĕм шеп,
Ĕмĕр пурăнмалăх чыс тата хисеп.

Таса мар-мĕн пурнăç, таса мар чунсем,
Тахçанах хупланнă пылчăкпа вĕсем.
Ан çухал-ха, шанчăк, инçене ан тар,
Инкекрен, тархасшăн, эс мана хăтар.

КАСРĔÇ...

Ик çунатăма та касса ячĕç...
Пурччĕ те вĕçмешкĕн шухăш,
"Ан хăтлан, çĕртен ан улăх",- терĕç.

Ик çунатăма та касса ячĕç...
Хăшĕншĕн тен çакă пулĕ кулăш,-
Тăрăшаттăмччĕ ишме юхăма хирĕç.



Ик çунатăма та касса ячĕç...
Ыйтаттăнччĕ:"Пĕрле пулмашкăн пулăш!
Пирĕн телее чылайăш хирĕç пулĕç".

Ик çунатăма та касса ячĕç...
Эп каларăм:"Иртнине манма эс тăрăш,
Тус-тăвансем пурпĕр çаншăн тăрĕç".

Ик çунатăма та касса ячĕç...
Ураран ура иртме памаç-çке сĕлкĕш.
Мĕншĕн, çут тĕнче, пултăн пире хирĕç?

Ик çунатăма та касса ячĕç...
Пулаймарăм-çке юмахри вутăш,
Ирĕк пурнăçшăн пулма ан хăй, терĕç.

Ик çунатăма та касса ячĕç...

ЫЙТМАСТĂП НУМАЙ

Пуррипе çырлахса пурăнма
тăрăшатăп,-
Эп ыйтмастăп нумай.
Çук паян,- ыран пулĕ, пĕлетĕп, -
Кĕтме тивмĕ чылай.

Чунăмри усала ырăпа тилмĕретĕп:
"Эс пулсамччĕ йăваш.
Вара эпĕ те майĕпен лăпланатăп,
Пур тен манăн малаш?"

Çырлахма кирлĕ мар, ăнланатăп,
Чунра çунтăр кăвар!
Вăйсăрри те кирлех, йышăнатăп, -
Умра урăх сăнар.

Вăл та ку çитмест, чуна хытаратăп,
Ытти пулĕ кайран.
Леш тĕнчере урăха хаклаççĕ, пĕлетĕп,
Иртейместĕп унран.

ШУРĂ ЮР

Шурă юр çинче - хĕп-хĕрлĕ юн.
Шурă юр çинче вĕçленчĕ кун.
Шурă юр... Тăлăх юлчĕ чун.
Шурă юр! Çынна усал ан сун!

Хушса юрламалли:
Шурă юр! Чĕрене ан çур!
Эс ман пек хурлăх ан кур!
Шурă юр! Чĕрене ан çур!
Шурă юр! Эс манран ан кул!

Шурă юр çине ўкет куççуль.
Куççуль мар, тумлать вĕри юн.
Шурă юр! Кирлĕ мар ку çул!
Чăтаймасть, çурăлать ман чун.

Шурă юр çинче - сарă чечек.
Кирлĕ мар чечек. Ултав ан сун.
Чунăмра юлман нимле сĕтек.
Эсĕ çук та - кирлĕ мар çут кун.

ЭПĔ ВĂЛ - ЭПĔ!

Эпĕ вăл- эпĕ.
Çĕр çинче эп - пĕрре.
Эпĕ вăл - эпĕ.
Ан калаç, ан сĕрле.

Эпĕ вăл - эпĕ,
Кĕместĕп чĕрре.
Эпĕ вăл - эпĕ.
Пĕчченпе эп - пĕрле.

Эпĕ вăл - эпĕ,
Вăйлă эп пĕчченре.
Эпĕ вăл - эпĕ.
Эс ан чĕн, ан кĕрле.

Эпĕ вăл - эпĕ.
Хăрамастăп ирпе.
Эпĕ вăл - эпĕ.
Çунатăп çĕрле.

Эпĕ вăл - эпĕ.
Чун-чĕрем - тĕрме.
Эпĕ вăл - эпĕ,
Пултаратăп хĕрме.

Эпĕ вăл - эпĕ.
Çĕр çинче эп - пĕрре...

АЙĂПНА ĂНЛАН!

Хăвăнра айăп çук тесе эс ан шутла,
Унăн пурнăçĕ санран та килнĕ.
Унталла та кунталла ан пăхкала,
Вăл тăраймĕ тек. Ун кунĕ сӳннĕ.

Тек тăраймĕ, хăратаймĕ вăл сана,
Пулăшу ыйтсан та пулăшаймĕ.
Тек кураймĕ вăл çак çут куна,
Саламат сасси те вăратаймĕ.

Ăнланмарăн ирĕклĕ чуна,
Айăпна куççуль те каçараймĕ.
Вăл пуласшăнччĕ кăшт урăхла кăна,
Ырă шухăшне тек кăтартаймĕ.

Хăвăнта айăп çук тесе эс ан шутла,-
Пулăшу ыйтнă чух -тĕксе ятăн.
Пурнăçра вара пулса тухать çапла:
Усалли çаврăнса килет вăл кутăн.

Ним вырăнне хумастпăр тăвана.
Укçа пулсассăн - ыталатпăр шуйттана.
Çук, маншăн мар ку ахăрсамана!
Ăнлан эс! Йышăнсаччĕ айăпна!

САВĂНТАРАМ-И?

Çĕр çинчен кайса
Сана савăнтарам-и?
Куçăнтан çĕтсе
Ирĕклĕх парам-и?

Лăштăрах кайса
Хăв çине хĕрес хыв.
Ман ята манса
Вил тăпри çине сур.

Ман сасса илтсе
Текех нушаланмăн.
Йрĕке сиссе
Иртнине астумăн.

Эпĕ -тĕлсĕр тĕлĕк,
Ман ята эс ман.
Эпĕ -иртнĕ вăхăт,
Тўрленен суран.

Кирлĕ мар мана эс,
Ыратмасть чĕре.
Типĕтрĕн кăна эс
Пирĕн иртнине.

Çĕр çинчен кайса
Сана савăнтарам-ха.
Куçăнтан çĕтсе
Ирĕклĕх парам-ха...

ТĂЛĂХ ЧУН СĂМАХĔ

Атте мана шур пӳрт лартса парап
теетчĕ
Шап-шурă хурăн пĕренесенчен.
Манран вăл чаплă çын тума
ĕмĕтленетчĕ,
Калатчĕ шухăшне чун-чĕререн.

Атте мана шур пӳрт лартса парап
теетчĕ.
Çухалчĕ хăй. Хăварчĕ пăрахса.
Пĕлместĕп, халь ăçта çĕтсе çӳрет-
ши?
Кам ачине лăпкать-ши юратса?

Атте мана шур пӳрт лартса парап
теетчĕ.
Пĕртен-пĕр ывăлне, кил тĕпкĕчне.
Эп кӳрентертĕм-им сана, аттеçĕм?
Мĕн-ма амантрăн çамрăк чĕрене?

ПĔЧЧЕНЛĔХ

Пĕчченлĕхĕн çук ят, хушамат,
Пăхăнмасть никама вăл.
Пĕчченлĕхĕн пур хăйĕн хăват,
Хăрамасть никамран вăл.

Пĕчченлĕхре пĕри куççуль тăкать,
Çук, хăйне мар, ыттисене ятлать.
Пĕчченлĕхре тепри хăват илет,
Хăй айăпне тӳрремĕнех сисет.

Пĕчченлĕх çӳремест çынпа пĕрле,
Теприн кулли ун чĕрине çурать.
Пĕчченлĕх кăтартать хăйне çĕрле,
Ним тăвайманран – минтер çыртать.

Пĕчченлĕхрен пĕри хăех тарать,
Тус-юлташра йăпанăç вăл шырать.
Пĕчченлĕхрен тепри малаш кĕтет,
Пĕр хăй пулни те мăй таран çитет.

Хăшин пĕчченлĕх, пур та, палăрмасть,
Çакна вăл чунĕнче шалта тытать.
Теприн те, тимлесен те, курăнмасть.
Кун пек чухне чĕре чул пек хытать.

...Пĕчченлĕхĕн çук ят, çук хушамат,
Кирлĕ мар никама вăл.
Пĕчченлĕхĕн пур хăйĕн хăват,-
Çын чунне вăйлатать вăл.

ШИКЛЕНӲ

Куçусен авăрне лекесрен шикленетĕп,
Таратăп санран.
Пĕлетĕп –хама хам пĕтеретĕп,
Пулаймĕ манран.

Тĕпсĕр авăр сăнне хăвалатăп,
Сиретĕп хамран.
Çынсене, тен, усал курăнатăп,
Пĕтетĕп сăнран.



Тĕлсĕр пурнăç пирки шухăшлатăп,
Тухатăп тăнран.
Ку асар-писертен тăранатăп,
Таратăп кунран.

Куçусен авăрне чунăмпа парăнатăп,
Ăнланулăх пуртан
Чĕремпе вара утăмран такăнатăп,-
Уйрăлаймăп санран.

Тĕлĕкре авăра шикленми вирхĕнетĕп,
Кулатăп чунтан.
Вăранатăп та –каллех хуçăлатăп,
Мĕн тери-çке айван.

Куçусен авăрне лекесрен шикленетĕп...

ШУХĂШĂМСЕМ- ÇУНАТĂМСЕМ

Тĕнчере ырри пурпĕрех ытларах,-
Кăшкăрассăм килет çулсем урлă.
Усалли те- пулин, пултăрах,
Эп вăйланăп кăна вĕсем урлă!

*

Пĕтĕм тĕнче илтмелле
Ахăлтатса кулса яр.
Сан тăварлă куççулĕ
Симпыл пулса юхтăр.

*

Эх, тăван халăхăм! Ытла та-çке мĕскĕн,
Ытла та хăравçă эсĕ паян.
Пуçлăха курсан пăхма хăяймастăн,
Кĕрешӳ çинчен илтсенех- пăрăнан.

*

Тĕлĕкре вĕçнине кашниех астăвать-
тĕр.
Е тата çилпе ăмăртса чупнине.
Анлă-анлă уйра путене сассине
илтнине.
Куккукран миçе çул пурнасса
ыйтнине...-
Паянхи пекех астăватăп.

*

Чун-чĕре ыратни...
Чун-чĕре макăрни...
Мĕн-ши çакă? Шăпах-шим?
Чĕре кăлтлатни...
Чун-чĕре сӳлетни...
Çакă та Турăран-шим?

*

Ах! Пĕчченлĕх тĕрми кăшлать-çке
мана.
Вĕçертмест хăйĕнчен ниепле.
Кăларса кăтартас чунăма тен ăна?
Тен хĕрхенĕ ун чух? Ирĕке ярĕ тен?

*

Чунра хытса, ĕнсе ларсан та-
Ан макăр, чунăм!
Тĕнче пĕтсе килет пулсан та-
Чăтсамччĕ, чунăм.

*

Ăçта эс, тĕрĕслĕх, пурах-ши эсĕ?
Ăçти вăрмансенче шырамалла сана?
Ăçти чăтлăхсене, ăçти шурлăхсене
Тĕрĕслĕхе пытарнă ахăрсамана?

*

Сутăнчăксене кураймаççĕ,
Икĕ питлĕхе мухтамаççĕ.
Таса мара курса тăрсах
Çул параççĕ вĕçĕм ăнах.

*

Мĕн тери ултавлă эс, тĕнче!
Мĕне кирлĕ кун пек тĕрĕслев?
Çĕр çинче пурăнатпăр пĕрре...
Çакă, тен, хăйне евĕр сиплев?

*

Çынсем Турăпа калаçаççĕ,
Эп вара тĕлĕкре те курмастăп.
Те вĕсем анраса супăшаççĕ,
Те эпĕ ниме те тăмастăп.

*

Сутăнчăксене кураймаççĕ,
Сутăнчăксене суд тăваççĕ.
Çав-çавах çын куççулĕпе
Тасалма вĕсем хăяççĕ.

*

Эй, тĕнче! Курсам, мĕн чухлĕ суеçĕ
Ман тавра пуçтаранна паян.
Саламлаççĕ, йăл! кулса илеççĕ-
Хĕрхенмесĕр сутĕç ак кайран.

*

Ăçта эс, тĕрĕслĕх? Пурах-ши?
Шыратăп эпĕ вĕçĕмсĕр сана.
Тен, пирĕнтен яланлăх уйăрасшăн
Сана пытарнă ахăрсамана?

*

Сан чĕрÿ таппине итлеме ӳрататăп.
Астăвать вăл кашни саманта.
Сан чĕрÿ çумĕнче кăна лăпланатăп,
Чунăмра асар-писер пулсассăн та.

*

Тăхта-ха, тăванăм, тăхта,
Ан васка усала парăнма.
Уттуна чакарсам эс, тăхта,
Ёлкĕретĕн нуша-хĕн курма.

*

Ма çуратрăн мана, ма кун патăн?
Тивĕç мар эп çак хуйхă-суйха!
Кăшкăрассăм килет çулсем урлă
Чунăмри сăнчăра аркатса.

*

Шанчăка ан çухат, Шанăçпи!
Пирĕншĕн те уçăлĕ кăвак хуппи.
Пурăнăç тени ялан пĕр мар,
Телее алăран вĕçертер мар!

*

Усал тума, аташăм, çук шут,
Чарăнми юрлатăр саншăн куккук.
Укçа-тенкĕ тесе юлташна ан сут,
Туслăх пултăр пирĕншĕн салук.

*

Вăл мана паян персе вĕлерчĕ,
Сивĕ-сивĕ сăмахпа пĕтерчĕ.
Чунăма сив чĕлхипе сĕртерчĕ,
Пĕртен-пĕр тус-юлташне çĕтерчĕ.

Вăл –санăн халĕ. Тен, самантлăха?
Тен, килĕштерĕç те пĕрне-пĕри,
Çул тытĕç, акă, вĕçсĕрлĕхелле?
Тен, пиллĕ вĕсене этем чĕри?

*

Ман телей –шухăшра.
Шухăшра эп –чи телейли.
Шухăшра-ĕмĕтре эп санпах.
Шухăшра çав-çавах эп вĕçетĕп.

*

Çăлтăрсем сӳнеççĕ те– ӳкеççĕ,
Ĕнер пулнă, –çук вĕсем паян.
Çын кун-çулĕ те çавах: çуралаççĕ
те анчах ак, –çук вĕсем ыран...

*

"Кĕтменччĕ. Сунманччĕ. Шанманччĕ"...
Юратуллăн çиçрĕç куçусем,
Асамлăн пăшăлтатрĕç тутусем,
Çепĕççĕн ачашларĕç аллусем.

Ăнлантăм: ытлашши телейлĕ
пулма юрамасть.
Ăнлантăм: Турă çырнинчен
иртме юрамасть.

*

Чунри сивĕ çил варкăшне
Ирĕке яма пулăшĕ кам?
Эс итленĕ чĕре таппине
Чарма хăйрĕ усал тăшман.

*

Ун-кун шухăшсене сирсе ярса
Пĕчченлĕхре эп вăйланатăп.
Ыратăва пĕр чăмăра пухса,
Чунăмпа çĕнĕрен çĕкленетĕп.

*

Ан йĕрсем, чĕреçĕм, лăплансам,
Тек килеймĕ вăл, ăнлансам.
Ан йĕрсем, чĕреçĕм, лăплансам,
Чунăма шелле, хытарсам.

Юратнă çынсем вилмеççĕ,-
Вăхăтлăх каяççĕ кăна.

*

Кирлĕ мар мана хĕрхенме,
Мĕн шыранă -çавна эпĕ тупнă.

*

Иртерех юлашки сăмах калама,
Чунăма пăр пек хытарма.

*

Хĕрхенместĕп сана, шеллеместĕп.
Юратрăн та -сутрăн мана...

*

Сансăр хĕвел тухнине те курмастăп.
Сансăр çут кун килнине те сисместĕп.
Сансăр ыттисен ачашне те туймастăп.
Сансăр каçсерен куççене хупаймастăп.

Тĕлĕкре те пулин килсемччĕ...

АН ÇИЛЛЕН!

Ан çиллен хушăран калаçманшăн,
Ыратни-çке çакă, ăнлан.
Пуçăнухне те ачаш пулайманшăн
Ан çиллен, ыйтатăп чунтан.

Ан çиллен ыйтнă пек тăвайманшăн,
Ман еннен çук чару. Кайран
Ӳкĕнетĕп те пуль ал тăсманшăн,
Хальлĕхе таратăп санран.

Ан çиллен йывăр чух тилмĕрменшĕн,
Пĕччен чух чуна хытаран.
Ыйтнă чух эс- юлма пĕлейменшĕн,
Ан çиллен, - таратăп хамран.



ĂÇТА ПУЛНĂ?

Ăçта пулнă эсĕ 10 çул каялла?
10 çул каялла кама савнă?
Мĕншĕн пăхман кăштах каялла?
Тур çырни çамрăкрах кăштах пулнă.

Ăçта пулнă эсĕ 10 çул каялла?
Кампа кaçăхса кайса кулнă?
Тен, пăхса каялла, кунталла
Ăна юриех юратап тесе суйнă?

Ăçта пулнă эсĕ 10 çул каялла?
Тĕлĕкре ман пата ун чухнех эсĕ килнĕ.
Мĕн-ма килсе тухрĕ пачах урăхла?
Ĕнен, сансăр пурнăç ытла та-çке хурлă.

Ăçта пулнă эсĕ 10 çул каялла?
Кам куçĕнчи асамлăха курнă?
Камăн тути шерпетне астивсе ·
Кунĕпе сĕрĕм тивнĕн çӳренĕ?

САЛАМ!

Эс тесех хуса çитетĕп те ăна васкаса,
Чарăнма ыйтса ачашшăн сĕртĕнетĕп.
Такам мар, пĕр эсех тесе шутласа,
Куçăмри асамлăхпа тинкеретĕп.

Хушса юрламалли:
Салам! Салам!
Çынсем урлă сана кăшкăратăп.
Салам! Салам!
Хам чупатăп çаплах, такăнатăп.
Пурпĕрех чарăнми кăшкăратăп:
Салам! Салам!
Сала-а-а-ам! Салам...

Эсĕ мар. Урăххи. Тăратăп çаврăнса.
Ним тума аптраса пăлханатăп.
Мĕншĕн эсĕ мар тесе хурланса
Сана мар, пĕр хама ÿпкелетĕп.

Ак, каллех, каллех пăхатăн йăл кулса,
Ан васка! Тăхта! Ан кай! Тилмĕретĕп!
Ытала! Ачашла! Юратса
Тĕлĕкре кăна çеç савăнатăп.

Куç уçатăп ирсерен сана кĕтсе,
Шухăшпа сан таврах çаврăнатăп.
Эс – манпах! Эп – санпах! Çакна пĕлсе
Хама хам чунăмпа лăпланатăп.

КАМ КАЛАРӖ?

Кам каларӗ сана эп таврӑнмӑп тесе?
Усал хыпар сарма епле вӑл хӑйнӑ?
“Вӑл вилнӗ, хӑратаймӗ тек”,-тесе,
Пӗлсем, ман ылттӑнӑм, чӗлхи ун суйнӑ.

Хушса юрламалли:
Ӑҫта эсӗ, Ыратӑвӑм, ӑҫта?
Камшӑн куҫусем ҫаплах ҫиҫеҫҫӗ?
Камшӑн-ши чӗрӳ кӑлт! кӑлт! тапать?
Камшӑн-ши ҫаплах эс тунсӑхлатӑн?

Юратӑвӗ ун ҫук ҫумра тесе,
Епле вӑл сан ҫумна ҫыпҫӑнма хӑйнӑ?
Юлташӗ ҫук, вӑл хӳтлӗхсӗр тесе,
Таса ҫинчех элек сармашкӑн пӑхнӑ?

Пӗччен эс, тусӑм, ҫӗр ҫинче тесе,
Унччен эп мар, ман чун-чӗре каланӑ.
Эс мансӑр, пӗр-пӗччен юлан тесе,
Ӑҫтан-ха эп шухӑшлама пултарнӑ?

Кам каларӗ сана эп таврӑнмӑп тесе?
Ҫур чӗре санпах, санпах-ҫке юлнӑ.
Ан хуйхӑр Арасланӑм ҫук тесе,
Пӗлетӗп: йывӑр чух ялан эс кулнӑ.

ТУРĂ ПИЛĔ

Эй, Турăçăм! Мухтавлă Турă ывăлĕ!
Санăн ятна манмастăмăр эпир.
Ку тĕл пулу – мухтавлă Турă кăмăлĕ,
Эппин пурнатпăр-ха теттĕмĕр эпир.

Шанаттăмăр: çӳлти Аттемĕр пилĕ
Пĕрле уттарĕ мĕн ватăличчен.
Ырă ĕçсем тумашкăн хăват килĕ,
Ĕçлес килетчĕ кăмăл туличчен.

Мĕн-ма çапса ӳкерчĕ Усал çилĕ?
Çӳлти Аттемĕр! Мĕншĕн упрамарăн
ывăлна?
Ăçта çухалчĕ шаннă Турă пилĕ,
Мĕн-ма васкатрăн хăвăн чуруна?

Сан ирĕкне кура татах та çӳрĕ
Ун чунĕ çылăх çĕрĕмĕр çинче.
Ман патăма та килĕ унăн чунĕ,
Кĕтеп ăна халь тĕлĕкĕмсенче.

Эй, Турăçăм! Мухтавлă Турă ывăлĕ!
Санăн ятна манмастпăр пурĕпĕр эпир.
Чунсен ĕмĕрĕнче мухтавлă Турă кăмăлĕ
Пулинччĕ. Ун чух, тен, пĕрле пулăпăр
эпир...

ЭП КИЛМĔП МАР

Сана ман пек никам та ачашлаймĕ,
Ик чакăр куçунтан асамлăн тинкереймĕ.
Юрату авăрĕнче ишмешкĕн вĕрентеймĕ,
Сана ман пек никам та ӳкĕтлеймĕ.

Хушса юрламалли:
Эп кайрăм та, эп ĕмĕр килмĕп мар.
Сан уттуна кунсеренех сăнатăп.
Эп кайрăм та, çухалтăм мар,
Çӳлтен кашни хусканăвна куратăп.

Сана ман пек никам та сыватаймĕ,
Çӳле-çӳле кашни кун вĕçтерреймĕ.
Ик чун пĕрлешĕвĕн вăйне те кăтартаймĕ,
Сана ман пек никам та ăнланаймĕ.

Сана ман пек никам та хӳтĕлеймĕ,
Пĕчченлĕх авăрне хупма вăл пултараймĕ.
Юратура кăна вăй илнине те ăнланаймĕ.
Сана ман пек никам та ааштармĕ...

ШĂНКĂРАВЛА!



Ёненместĕп эпĕ эсĕ çуккине,
Эсĕ ĕмĕрлĕх уйăралнине.
Ёненместĕп эсĕ кайнине,
Чунăма пĕччен хăварнине.

Хушса юрламалли:
Шăнкăравла! Шăнкăравла!
Ман апатăма шăнкăравла!
Шăнкăравла! Шăнкăравла!
Эп кашни кун кĕтеп шăнкăравна!

Ёненместĕп куçăм курнине,
Чунăм татăлса суллснине.
Ёненместĕп аллăм туйнине,
Итлеместĕп çын каланине.

Ёненместĕп вилĕм пуррине,
Усал вăй чуна пустарнине.
Ёненместĕп эсĕ кайнине,
Йышăнмас сана çухатнине.

Ёненместĕп эпĕ эсĕ çуккине,
Эсĕ ĕмĕрлĕх уйăралнине.
Ёненместĕп эсĕ кайнине,
Савнине пĕччен хăварнине.

ЭС ПУЛМАН ПУЛСАН

Эс пулман пулсан
Ирсерен вăраннă пулăттăм
Ĕмĕтсемсĕрех.

Эс пулман пулсан
Пурăнса ирттернĕ пулăттăм куна
Шухăшсемсĕрех.

Эс пулман пулсан
Утнă пулăттăм çĕр тăрăх
Шикленӳсĕрех.

Эс пулман пулсан
Чун-чĕре юлатчĕ ман
Туйăмсемсĕрех.

Эс пулман пулсан
Кун кунланă пулăттăм, тен,
Куççулĕсĕрех.

Эс пулман пулсан
Иртĕ кун кун-çулĕ терĕç-шим
Хурлăхсемсĕрех.

Эс пулман пулсан?
Тен, эп пулман пулсан?

ТӖЛӖК МАР

Тен, ку тӗлӗк? Е чӑн?
Ҫӗр айне кӗрсе выртрӑн.
Ҫӗтрӗ саншӑн ҫут кун,
Асилӳ пулса юлтӑн.

Тӗлӗк мар ку, – чӑнни,
Сив ӳтне сӗртӗнетӗп.
Ах, ӑҫта-ши, ӑҫта-ши иртни?
Шухӑшпа каяллах таврӑнатӑп.

ИНҪЕТ

Инҫери инҫе...
Вӗҫсӗрлӗх, тӗнче...
Унта сан чуну
Усалпа кӗрешет.

Сан чунна
Усал чура тӑвасшӑн.
Канлӗх ҫухатса
Тамӑка ярасшӑн.

Сан чунна
Хам хӳттӗме илсе,
Ӳсала пурӗпӗр памастӑп,
Чунна усала суттармастӑп.

Сан чунна
Ачашлӑхпа, юратупа витсе,
Ҫӑтмах алӑкӗ умне
Илсе ҫитерӗп.

Инҫери инҫе...
Вӗҫсӗрлӗх, тӗнче...
Унта сан чуну
канлӗхпе лӑпланать.

КИЛСЕМЧЧĔ!

Тĕлĕкре те пулин курăнсамччĕ.
Пĕлтерсемччĕ, ăçта эс çӳрен?
Тĕлĕкре те пулин йăпатсамччĕ,
Темшĕн-тĕр мана кӳренен?

Тĕлĕкре те пулин килсемччĕ,
Тĕлĕкре те пулин ытала.
Тĕлĕкре те пулин чĕнсемччĕ,
Ан çунтар, ан çунтар чунăма.

Тĕлĕкре те пулин килсемччĕ.
Кулса яр, пăчăрта ытамна.
"Эпĕ-санăн, эс-манăн",-тесемччĕ,
Кирлĕ мар урăх нимĕн мана.

Хушса юрламалли:
Кунтах эп, тусăм, кайман.
Çĕр çинчи ĕçĕме вĕçлемен.
Кунтах эп, тусăм, кайман,
Кунтах, уйрăлман санран.

МАНПАХ



Пĕлетĕн-и, эс халĕ те манпах.
Кашни хусканăвна эп астăватăп.
Илемлĕ сăн-питӳ те асăмрах,
Ачашшăн, юратуллăн тинкеретĕп.

Пĕлетĕн-и, эс халĕ те манпах.
Санпа пĕрле Атăл шывне сăнатăп.
Унтан санпа, санпа пĕрле килес
Пăр кайнине кăсăкланса пăхатăп.

Пĕлетĕн-и, эс халĕ те манпах.
Чăваш Юпи ытамĕнче сана кĕтетĕп.
Унтан санпа, санпа кăна çаплах
Чун-чĕререн ахăлтатса кулатăп.

Пĕлетĕн-и, эс халĕ те манпах.
Чунра кичем- Лакрей паркне утатăп.
"Чуптумалли кĕнер" те вырăнтах.
Унта, юратăвăм, сана кăна кĕтетĕп.

Пĕлсем, Олег, эс халĕ те манпах.
Эс çук, эс килмĕн теейместĕп.
Чĕре кăварĕ хĕмленет санпах.
Сана эп нихăçан та манаймастăп.

Пĕлсем те ĕненсем: эс халĕ те манпах...

КАМ ЭСĔ?



Океанпа танлаштаратăм сана:
Лайнер эсĕ – малаллах талпăнаттăн.
Е тата туйăнаттăнччĕ мана
Герой пек. Йăх-яха аркататтăн.

Тинĕс эсĕ. Халь илетĕп астуса:
Утăм хыççăн утăм хытараттăн.
Районтан сана тăратчĕç сăнаса,
Хăв камне ĕçӳпе кăтартаттăн.
Акă ĕнтĕ пурăнăпăр ĕмĕр астуса.
Никама, Олег Турхан, усал тумарăн...

ЁМĔРСЕМ УРЛĂ

Ёмĕрсем урлă сана сăнарăм.
Сан сăнна кашни çынра шырарăм.
Сан сасна ёмĕрсем урлă илтрĕм.
Сан чунна пыл хурчĕ пек пуçтартăм.

Ёмĕрсен кĕрлевĕнче чуну мана шырарĕ.
Ман чунпа пулас тесе ниме пăхмарĕ.
Юратма пĕлейменни- сĕрлерĕ...
Ёмĕрсен сасси сакна илтмерĕ.

Ёмĕр урлă сан çине тинкертĕм.
"Эсĕ мар-ши Тур çырни?"- тесе пуç
ватрăм.
Ёмĕрсен çил-тăвăлне сирсе хăвартăм.
Чунăма чăн-чăн юратупа çунтартăм.

Ёмĕрсен хистевĕ иккĕне те шеллемерĕ.
Ёмĕрсен ăслайĕ никама та пулăшмарĕ.
Ёмĕрсен усалĕ туйăма чăл-пар аркатрĕ,
Никама та çут хĕвел кăтартмарĕ.

Ёмĕрсем урлă каллех сана шыратăп.
Сан чунна куç хупмасăр кĕтетĕп.
Ёмĕрсем урлă куççуль йыхравĕ яратăп.
Пĕлетĕп. Сан чунна пурпĕрех тĕл пулатăп...

САЛАМ!

Салам, савни! Каллех эп çитрӗм,
Улшăну тавраш шыратăп куçăмпа.
Эс кӗтменччӗ тен? Эп килтӗм
пурпӗр. Мӗн тăвас тен çамрăк чунăмпа.

Салам, савни! Мана ан хăвала эс!
Пӗрле пулма памарӗ çутă кун.
Ăнлантăм та: манах кӗтен эс,
Сан хыççăн пӗлӗтеваскарӗ чун.

Леш тӗнчене часах ак пырăп.
Кӗтсе илмс, юратăвăм, тухсам!
Чунсен ӗмӗрӗнче санпах эп пулăп.
Салам, савни! Çулна халь кăтартсам.

ШЫРАÇÇĔ САНАХ

Пуçа çĕклеме те хăратăп.-
Куççем шырама тытăнаççĕ сана.
Çулпа тĕлĕкри пек утатăп.-
Курмаççĕ куççем çут куна.

Курмаççĕ куççем çут куна.
Куççуль витĕр таврана тинкеретĕп.
Асилӳ кашлать, касать халь чуна,
Çук унсăр çут кун- чунпа хуçăлатăп.

Пуçа çĕклеме те хăратăп.
Ыратусăр пăхма çук эс утнă çула.
Шухăшăмра çав-çавах йĕрлетĕп,
Иккĕн аташнă телейлĕ куна...



ХĂВАРТĂН

Ма хăвартăн эс мана, ма хăвартăн?
Çунтăр-ха вăл мансăр терĕн-и?
Е тата хăв ăсупа шутларăн:
Нушалантăр-ха ку мансăр терĕн-и?

Тĕрĕсех шутларăн, йăнăшмарăн.
Пурпĕрех пултарĕ пурăнма терĕн-и?
Халĕ, акă, тĕлĕкре те курăнмастăн,
Асаплантăр-ха ку мансăр терĕн-и?

Сывă чух чылайăш ал сулатпăр,
Пĕчĕк мар вĕт, пуçĕ пур теетпĕр.
Çын пиртен уйрăласса шанмастпăр,
Улшăнĕ-ха, йĕркеллех теетпĕр.

Вăхăтлăх çуталтăн та – пытантăн,
Çакăн чуль савни те çитĕ терĕн-и?
Юраттартăн та хăвна – çухалтăн,
Ĕмĕр асăнмалăх пултăр терĕн-и?

ШУТЛАМАНЧЧĔ...

Сана çавăн пек юратап тесе
шутламанччĕ,
Сансăр та пултарăп пурăнма тесеччĕ.
Ман чĕре нихăçан кун пек ыратманччĕ,
Кун-çул сукмакĕпе эп çăмăллăн утсаччĕ.

Санпа чух пурнăç синкерлĕ
курăнманччĕ,
Йывăр чух ырату тени çăмăллăнах
иртетчĕ.
Пулсан-килсен инкек -чĕрем ырататчĕ,
Темле пулсан та çут малашлăх курнатчĕ.

Сана çавăн пек юратап тесе
шутламанччĕ,
Эс- вăхăтлăх, эс -выляну тесеччĕ.
Эс кайрăн та, юратăвăм, ăнланччĕ,
Пĕтĕм пурнăç синкерпеле хупланчĕ.

Эп сана çавăн пек юратап тесе
шутламанччĕ...

ШЕЛЛЕМЕРЁР...

Мĕншĕн шеллемерĕн эс мана, Турăçăм,
Çур чĕресĕр те пулать пурăнма терĕн-
им?
Мĕншĕн итлемерĕн эс мана, Турăçăм?
Е чунне уçса тилмĕрмерĕ терĕн-им?

Эй, Турă амăшĕ Мария! Пурнăçĕ
Асап-нушасăр-ха ку çылăх чунăн терĕн-
им...
Кунсем пĕр шелсĕррĕн вĕçсе иртӳçĕн
Çитет телей авăрĕнче ишмешкĕн терĕн-
им?

Ăнланмарăр пире, çӳлти хăватсем!
Çитет иккĕшне юрату юрри янратса терĕр-
им?
Çухалтăр пире сыхлакан ангелсем,
Эсир те телей ытлашши терĕр-им?

Мĕншĕн йышăнмастăн эс мана, Турăçăм?
Нушалантăр-ха пĕчченлĕхре тетĕн-им?
Мĕншĕн илсе кайрăн эс ăна, Турăçăм?
Эс – çылăхлă, эс пирĕн мар терĕн-им?

АН ЙЁРСЕМ!

Ан йёрсем, аннеҫӗм, ан йёрсем.
Ҫук телей, мӗн тăвăн, хӗрӳсен.
Пытармастăп инкеке, эс пӗлсем,
Кӗске пулчӗ пурнăҫ ҫулӗ кӗрӳсен.

Ӗмӗтленнӗ те телей ҫинчен вӗсем,
Ҫут малашлăх пулнă ачисен.
Ҫурт ҫавăрнă ҫамрăк ҫемьесем,
Май килмен телейлӗ пурăнма хăйсен.

Телее аркатнă ҫав усал чунсем,
Ҫын кун- ҫулне татнă пилсӗрсем.
Хӗвел мар умра- хура кунсем,
Хура тутăр пуҫсенче те мăшăрсен.

Хурлăхлăн тинкереҫҫӗ ачисем,
Шывланаҫҫӗ вӗҫӗм куҫӗсем вӗсен.
Шел, аманаҫҫӗ ҫамрăк чунӗсем,
Лăпланайӗҫ-ши ҫулсем иртсен?

Ан йёрсем, аннеҫӗм, ан йёрсем.
Мӗн тăвас тен, телей ҫук хӗрӳсен.
Лăплансам, аннеҫӗм, ан кӗтсем,
Кӗске пулчӗ пурнăҫ ҫулӗ кӗрӳсен.

УÇĂ ÇИЛ ЭПĔ



Уçă варкăш çил пулса
Сан питне сĕртĕнесчĕ.
Юрату хĕлхемĕ пулса
Туйăмсен авăрне вирхĕнесчĕ.

Хĕвел пайăркийĕ пулса
Пит-куçна кăтăкласчĕ.
Сан тугу çине ларса
Чарăнми чуптуса антăхасчĕ.

Ешĕл хурăн сулçийĕ пулса
Пăшăл-пăшăл тăвасчĕ.
Симĕс чатăр çине выртса
Антăхса савăнасчĕ.

Тўпери шур пĕлĕт пулса,
Санран юлас марччĕ.
Тĕлĕкне пĕр вĕçĕм пырса
Санпах пĕрлешесчĕ.

Юмахри Вутăшши пулса
Акăшпа илĕртесчĕ.
Эс шыранă Акăшни пек пырса
Чунна çемçетесчĕ.

Тен, ĕмĕрхи ĕмĕлке пулса
Сан ăшна вырнаçас?
Сан чунна шухăшра кĕрсе
Ĕмĕре тыткăнлас?

КАЯТĂП

Ĕмĕр таврăнас çук çулпа каятăп эпĕ.
Сан юратăву чĕнет çапла тума.
Мана кĕтсе илме тухатăн эсĕ.
Сана пулах манатăп çут куна.

Пĕлетĕп: пĕрлех пултарĕ Турă пилĕ
Çӳлти патшалăхра та савакансене.
Вара çӳлти Аттемĕртен хăват та килĕ,
Пĕрле вĕрентĕпĕр ĕненменсене.

Пĕлетĕп: эп кайни те тивĕçтермĕ,
Сăлтавсăр çисе шĕкĕлчĕç хăшсем.
Вăхăтĕнче усал туни те ӳкĕнтермĕ,
"Тинех çухалчĕ",- тейĕç-ха вĕсем...

Ĕмĕр таврăнас çук çулпа каятăп эпĕ.
Пĕлетĕп: юрату чĕнет çапла тума.
Çур чĕрене пĕрле илсе каяйрăн эсĕ.
Тепĕр çурри кăшлать халĕ чуна.

ĂНА АН ТИВ!

Эй, Турăçăм! Ăна тивме ан хăй!
Ун вырăнне мана эс йышăнсамччĕ.
Эй, Турăçăм! Ăна, ăна кунтах хăвар,
Мана вара эс тамăка ярсамччĕ.

Эй, Турăçăм! Итле! Эп- çăмăлттай,
Чун-чĕрене вутра çунса ман тасатасчĕ.
Эй, Турăçăм! Ăна, ăна вара кунтах хăвар,
Ун тупăкне курса куççуль кăларас марччĕ.

Эй, Турăçăм! Ман хăвăртрах каясчĕ.
Чарсам ман юнăма унта-кунта чупма.
Эй, Турăçăм! Çут тĕнчепе сывпуллашасчĕ.
Пар çăмăллăх, пар ... вилĕм эс мана.

УСАЛ МАР ЭСЁ

Эп пӗлетӗп: усал мар эсӗ, Вилӗм.
Шелле те, йышӑнсам ытамна.
Ҫиллентермӗп сана эпӗ ӳлӗм,
Пулӑшсам, ан хытар кӑмӑлна.

Эп пӗлетӗп: усал мар эсӗ, Вилӗм.
Кӑтартсам никам ҫӗнейми хӑватна.
Сан пурах нушана куран сисӗм,
Пулӑшсам, хӗрхенсем тӑванна.

Эп пӗлетӗп: усал мар эсӗ, Вилӗм.
Пӗлтерсем, палӑртсам вӑхӑтна.
Савнӑ ҫынсӑр пушах юлчӗ килӗм,
Ан кӗттер! Кӑтартсам хӑватна.

СЫВ ПУЛĂР!



Сыв пулăр, тăвансем! Мана ан манăр!
Уйăрăлап сиртен яланлăха.
Ман вил тăпри çине куççуль ан тăкăр,
Эп пĕлнĕ: çут тĕнче – хăналăха.

Тус-юлташсем! Хăр-тантăшсем! Мана ан манăр!
Кун-çулăр пултăр вăрăм та ялтра.
Сире ялан таса юратупа юратăр,
Куççуль, ăнланăр, ахаль тулмасть куçра.

Сыв пулăр, тăвансем! Ман хыçăмран ан кайăр!
Çут кунăн та пурах хăйне евĕр илем.
Ача-пăчаллă, мăшăрлă пулсамăр,
Сирĕн телейлĕ çемьене эп тĕлĕкре килем.

Сыв пулăр, тăвансем! Мана аса илсемĕр!
Сире эп пулăшăп леш тĕнчерен.
Сыв пулăр та- ăнланăр, усал ан сунăр,
Эп, Лида, уйрăлатăп сирĕнтен.

ЭС - ВЁСЕН РАТТИ

Амăш пулнă ачисемшĕн шурă Акăш,
Ашшĕ пулнă тĕрĕслĕхшĕн çуннă
Арăслан.
Халиччен те упранать çак çутă варкăш,
Тĕрĕслĕх пулсан, тăванăм, çăмăлрах
сывлан.

Çулĕсем вĕсем чупаççĕ: çирĕм, вăтăр,
хĕрĕх...
Малаллах каясшăн пурнăç кустăрми.
Чĕрере янрать халь чарăнми пĕр хĕлĕх:
"Усал ан ту, ывлăм, эс- Турхан ратти".

Атте-анне пилĕ пулăшса пыринччĕ.
Çук-çке унсăр канлĕх санăн чунунта.
Вĕсемпе пĕрле эс те Арăсланччĕ,
Шурă Акăш сăнĕ халь те умăнта...

САНПА КĂНА

Санпа чухне туяп хама телейлĕ,
Иртет пек пăрăнса асап-нуша.
Çумăрлă пулсан та, кун хĕвеллĕ,
Чун юрлать, çын калаçсассăн та!

Санпа чухне туяп хама телейлĕ,
Ĕç-хĕлĕм яланах пырать кал-кал.
Тусăмсем! Эпĕ чăнах телейлĕ,
Çылăх тунине пĕлеп пулсассăн та.

Санпа чухне туяп хама телейлĕ,
Ан вăрçсам мана, ан ÿпкеле.
Чун кĕтни-çке çакă, эп -телейлĕ,
Вăраха пыман парне пулсассăн та.

ЭСĔ ТАТА ЭПĔ

Эсĕ – кайкăр, эпĕ – чун-чĕре хăвачĕ.
Эсĕ çав хăватăн тыткăчи.
Эс мана çунат хушма сĕнетĕн,
Эп вара хăратăп: пулĕ-шим усси?

Эп сана пĕрре курсах юратрăм,
Аташу-ши çакă? Е тен юрату?
Эп санпа çӳле-çӳле хăпартăм,
Чĕрене кăшламĕ-ши йӳçĕ ӳкĕнӳ?

Хальлĕхе эп - санăн, эсĕ - манăн,
Чĕрере – ачашлăх, ырлăх, киленӳ.
Çак асамлăха епле-ха манăн,
Çакă-шим вăл таран, тĕпсĕр юрату?



САНСĂР

Санпа чух савăнса пурăнатăп.
Туйăмсен авăрне ăнтăлатăп.
Юрату симпылне астиветĕп,
Чунăмпа çĕнĕрен çĕкленетĕп.

Хушса юрламалли:
Сансăр- эпĕ пушхир...
Сансăр кун та кичем...
Сансăр юлсан пĕччен
Типсе ларĕ ман чун.

Эп сана киленсе ыталатăп,
Çумна кушак пек йăпшăнатăп.
Хăраса куçунтан тинкеретĕп.
Ĕмĕтсен авăрне вирхĕнетĕп.

Ăссăр... Хамран хам шикленетĕп,
Туйăма пытарма тăрăшатăп.
Каçсерен куççульпе çăвăнатăп,
Турăран пулăшу тилмĕретĕп.

Санпа чух эп сывлатăп, пурнатăп,
Çын сăмахĕ çине ал сулатăп.
Сансăр эп чăннипех те пĕтетĕп,
Чун-чĕремпе хăвăрт сÿнетĕп...

ЧĂВАШ ЮПИ ЫТАМĚНЧЕ

Кунта эпир пěрне-пěри юратнă.
Пире сыхланă чăн Чăваш Юпи.
Унран эпир яланлăха пил ыйтнă,
Тинех яр! уçăлчě кăвак хуппи.

Кунта эпир пěрне-пěри юратнă.
Пире пил панă ырă кун çути.
Хěрÿ туртăнăва хамăр сăнанă.
Тавралăха янратнă юрату кулли.

Кунта эпир пěрне-пěри юратнă,
Кěрхи илем, çанталăк куç тулли.
Иксěмěре кăна савса çутатнă
Сăпайлă уйăх- ăшăтнă кулли.

Кунта эпир пěрне-пěри юратнă.
Вăтанасси пулман-тăр. Çитнě куç
хупни.
Сăмахсăрах чун юррине янратнă,
Пире чăрмантарман ют куç пурри.

Кунта эпир пěрне-пěри юратнă.
Янранă хыттăн ик чěре таппи.
Юратăва сыхланăн туйăнатчě
Мăнаçлă палăк - чăн Чăваш Юпи.

ÇЕМЬЕЛЛĔ ЭСĔ...

Çемьеллĕ эсĕ. Эпĕ те çемьеллĕ...
Чĕре вара пăхмасть ăна-кăна.
Санпа кăна туяп хама телейлĕ,
Манаймăп ĕнтĕ ĕмĕрне сана.

Çемьеллĕ эсĕ. Эпĕ те çемьеллĕ...
Чĕремĕрсем пулайĕç-ши пĕрле?
Сăмахусем питех те сан шеллевлĕ,
Шăпăртатса куççуль юхать çĕрле.

Çемьеллĕ эсĕ. Эпĕ те çемьеллĕ...
Мĕнех-ши пирĕншĕн çын сăмаххи?
Пуласлăх пирĕн пурĕпĕр тĕтрелле,
Тытса чараймĕ пулĕ япăххи.

Çемьеллĕ эсĕ. Эпĕ те çемьеллĕ...
Пурах-ши пирĕн çутă ăраскал?
Шухăшăмсем пуласлăхсăр,- вĕçевлĕ.
Йÿçĕ куççульлĕ хăшĕн ăраскал.

Çемьеллĕ эсĕ. Эпĕ те çемьеллĕ...

ПУРӐНАС ТЕСЕХ

Пурӑнас тесех туртса илтӗм сана,
Ҫын сӑмах-юмахӗ ҫине алӑ султӑм.
Эп пуласшӑнччӗ кӑшт телейлӗ кӑна,
Ҫавӑнпах тепӗрин куҫҫулӗнчен култӑм.

Юратас тесех туртса илтӗм сана,
Пӗтӗм тӗнче умӗнче усал пултӑм.
Эп пуласшӑнччӗ кӑшт урӑхла кӑна,
Ҫавӑнпах тӑр пӗччен тӑрса юлтӑм.

Пурӑнас тесех туртса илтӗм сана,
Турра мар, юрату хӑватнех мала хутӑм.
Тӑрӑшсан та манаймастӑп сӑнна,
Инкек ҫул-йӗрне хамах эпӗ ҫыртӑм.

Пурӑнас тесех туртса илтӗм сана...

ШУТЛАМАНЧЧĚ

Эп сана
çапла саватăп тесе
шутламанччĕ.

Эп сана
ыттисем пек пулманшăн
асăрханăччĕ.

Эп сана
нихăçан иксĕлми хăватпа
ыталаттăмччĕ.

Эп сана
вăй-хăватна кура
хисеплеттĕмччĕ.

Эп сана
çынлăхшăн, сăпайлăхшăн
хаклаттăмччĕ.

Эп сана
хаярлăхна кура та
кăмăллаттăмччĕ.

Эс мана:
"Акăшпи эс манăн",-
теттĕнччĕ.

Маншăн çакă та,
ĕнен, мăй таранах
çителĕклĕччĕ.

МĔН ЧЕРЕЧĔ?

Мĕн черечĕ тетĕп ман умра.
Хура халăх мĕн ыйтать тесе пуçа
вататăп.
Лăпкă эпĕ. Эсĕ-çке çумра.
Тем кĕтсе малаллах шав тинкеретĕп.

Мĕн черечĕ тетĕп ман умра.
Турă суд тăвать. Тăнпа ăнланатăп.
Пăлхану шыратăп сăнунта.-
Эс хаваслӑ та, эп те лăпланатăп.

Мĕн черечĕ тетĕп ман умра.
Паллакан та пур. Кăсăклансах сăнатăп.
Тĕрĕслĕхпе çылăх тараси унта,-
Лăштăрах чунпа вăйран кайса ларатăп.

ЭС КИЛМЕРĔН

9 кун та иртрĕ. Эс килмерĕн...
Тĕлĕкре те пулин курăнмарăн.
Тилмĕрсе чĕннине эс илтмерĕн,
Хытса ларнă чуна йăпатмарăн.

10 кун та ак çитрĕ. Эс килмерĕн...
Сана еплерех кĕтнине ăнланмарăн?
Тĕлĕкре те пулин тĕлленмерĕн,
"Ан йĕр, эп санпах",- темерĕн.

Тĕлĕкре те пулин килмерĕн...

ЮРАТĂВĂМАХ

Юратăва илсе кайрĕ юратăвăм,
Çук, иртмест ниепле ыратăвăм.
Пирченсе-хытса ларчĕ мĕн чунăм,
Тĕксĕммĕн курăнать çутă кунăм.

Юратăва сутса ячĕ юратăвăм,
Мĕншĕн тек уçăлмастăн, кăмăлăм?
Пулас темерĕн эппин ылттăнăм?
Мĕнех, юлтăр чĕрере ыратăвăм.

Юратăва упрамарĕ юратăвăм,
Илсе каймарĕ пĕрле ыратăвăм.
Таран, тепсĕр пулчĕ суранăм,
Тек ырă кăтартайĕ-шим кунăм?

Юратăва пĕтерчĕ юратăвăм...

САНШĂНАХ

Ан вăрçăр мана, ан тиркĕр,
Епле-ха юратмăн ăна?
Ан вăрçăр ăна, ан сĕрлĕр,
Вăл чунне шырарĕ кăна.

Хушса юрламалли:
Саншăнах тухать куççулĕм.
Саншăнах ыратать чĕрем.
Саншăнах çунать çамрăк чунăм.
Саншăнах çутă кун çухалать.

Ан вăрçăр мана, ан тиркĕр.
Усал мар эп. Ĕненместĕн? Сăна!
Пулман нихăçан та пилсĕр,
Çухатман, тытатăп тăна.

Ан вăрçăр мана, ан тиркĕр,
Юрату аташтарчĕ чуна.
Ырату-и чунра? Мĕнех, пултăр,
Пурпĕр сутмас сана шуйттана.

Ан вăрçăр ăна, ан сĕрлĕр!..

ЮРАТУ ВИЛМЕСТ

Юратнă çынсем вилмеççĕ.
Вăхăтлăх каяççĕ кăна.
Каяççĕ те - таврăнмаççĕ,
Кĕттерсе çунтараççĕ чуна.

Хушса юрламалли:
Юратнă çынсем вилмеççĕ.
Юратнă çынсем вилсен те пурнаççĕ.
Чунсен тĕнчинче çавранаççĕ.
Юратнă çынсем пире курăнмаççĕ.
Юратнă çынсем пире сыхлаççĕ.
Юратнă çынсем вилмеççĕ.

Юратнă çынсем вилмеççĕ.
Ан вăрçăн, ан пул кăра.
Çăлтăрсем сӳнсен - савăнмаççĕ,
Инкеке ку, ĕнен, сăна...

Юратнă çынсем вилмеççĕ.
Шалти туйăм хистет пурăнма.
Каяççĕ те, мĕн-ма-ха килмеççĕ?
Мĕн-ма шикленеç курăнма?

Ăнлан...

Пулнă пулсассăн эсĕ çумра,
Тĕксе ярăттăм-и, тен, ăнсăртран.
Куç хупмасăр кĕтсен те - çук çумра,
Тухаймасть ырату та чунран.

Хушса юрламалли:
Ан кӳрен, ан кĕвĕç, ăнлан,
Чунăма ирĕке эс ярсам.
Пĕлетĕп: тӳрленмĕ суран,
Пурпĕрех ăнлан! Каçарсам!

Пулнă пулсассăн эсĕ çумра,
Е тĕл пулнă пулсассăн сана хушăран,
Хĕвел çутине курма çут кунра
Ирĕк ыйтмăттăм эпĕ санран.

Çук та, ылттăнăм, эсĕ çумра,
Туятăп хама çут тĕнче айăпланăн.
Чĕре уççийĕ халиччен те санра,
Ниепле ирĕке халь ямастăн.

Кăтартмастăн хăвна тĕлĕкре, çут кунра,
Мĕншĕн ыратăва ăнланмастăн?
Сисмесĕр сутатăп сана шухăшра,
Усал шухăша мĕншĕн чармастăн?

АН КУЛЯН!

“Ан кулян, Улян! Пулĕ-ха уйран”,-
Теттĕн темшĕн эсĕ чарăнми.
Сăмахна илтсен - çуккă та суран,
Чунăм савăнать, ав, чарăнми.

Ан кулян, тăван, пулĕ-ха ыран,
Вăхăт шав чупать сисĕнми.
Пурнăç улшăнать. Ан кулян, куран -
Пуçлăхсем выляççĕ чарăнми.

Ан кулян, тăван, эс те çын пулан,
Ÿсĕн-ха пире те паллайми.
Çын çине куç айĕн, ав, пăхан,
Пулĕ-шим савни те юрайми?

Ан кулян, Улян, пулĕ-ха уйран...

ЭП ТАВРĂНМАС...

Хакламарăмăр пур телее, -
Вĕçсе кайрĕ вăл сив çилпе.
Упрамарăмăр пĕр-пĕрин телейне,
Хупланчĕ, арканчĕ кĕтмен çилĕпе.

Хушса юрламалли:
Эп таврăнмас - ан та кĕт.
Эп çаврăнмас - ан та кĕт.
Эп ал сулмас - ан та кĕт.
Эп калаçмас - ан та кĕт.
Ан та кĕт...

Ăнланмарăмăр чун ыйтнине.
Юлтăмăр алăри кĕлĕпе.
Мантăмăр пĕр-пĕрне тупа тунине.
Калаçмарăмăр ав хĕлĕпе.

Каçармарăмăр айван айăпа.
Терĕмĕр пулас: " Пултăрах!"
Сывпуллашрăмăр ултав кулăпа,
Пултаратăн пурăнма мансăрах?

Эпир санпа- уçлăхри
икĕ тусан пĕрчи...



ЭХ-Х-Х!..

Эх-х-х, вăхăт! Мĕн-ма чупан-ши
хăвăрт?
Мĕн-ма çук сан шеллев тени?
Анчах, анчах иртместчĕ вăхăт,
Халь шуралать çӳç пайăрки.

Пĕрремĕш тĕл пулу, асамлă çĕмĕрт...
Тăван пуçтарăннă туй кĕреки...
Алра - пепке...Ӳкет вăл тăнкăлт!..
Ытла та тăкăс пулчĕ пурнăç мешехи.

Кĕтмен-çĕртен çыртатчĕ тата çатăрт!
Хăй мĕлкинчен те тарнă тăмани.
Ун пеккине сунаттăм вăрăм ĕмĕр,
Пĕлеттĕм: çук чунра унăн Турри.

Эх-х-х, вăхăт! Мĕн-ма чупан-ши хăвăрт?
Пулатпăр-шим мехел çитерейми?
Ăçта-ши эс, çарран чуптарнă вăхăт?
Халех пулас килмест ура сĕтĕрейми.

Эй, вăхăт! Ан чуп-ха питĕ хăвăрт!..

МАНĂÇМАÇÇĔ

/Надежда Смирнована/

Пĕлеймерĕм ятна,
Астумастăп сăнна -
Куçусем çав-çавах манăçмаççĕ.
Вĕсенче - ырату,
пăлхану, уйрăлу...
Тем çинчен-çке вĕсем шухăшлаççĕ.

Икĕ йăлтăр куçу
Куççульпе хуплансан,
Чăтаймарăм, çумна пырса тăтăм.
Шел, ыйтмарăм ятна,
Паллашмарăм санпа,
Ырату мансăр иртĕ терĕм.

Ман куçри тунсăха,
Чĕрери пăлхава
Сисрĕн эсĕ, ăнлантăн.
Куççульне типĕтсе,
Айăпланнăн пăхса,
Йăл-л! кăна кулса илтĕн.

Пĕлеймерĕм ятна,
Астумастăп сăнна,
Куçусем çав-çавах манăçмаççĕ...

МĔН КĔТЕТĔН, ТĂВАНĂМ?

Мĕн туса пурăнатăн, тăван?
Мĕн çинчен çаплах шухăшлатăн?
Тем кĕтетĕн пулас...
Икĕ йăлтăр куçу
Ак кĕçех куççульпе шывланать
Мĕн-ма хурланатăн, тăванăм?

Эпĕ асна килсен ăнсăртран
Кулса ил, кала ăшшăн-ăшшăн:
- Юрататăп пулас...
Икĕ йăлтăр куçу
Тем кĕтсе инçене тинкерет.
Мĕн ку, юрату-ши, тăванăм?

САН ЯТУ

Яту кӑна юлчӗ асра...
Ыттине пӗтӗмпех эпӗ маннӑ.
Пуш-пушах халь манӑн чунра,
Сӑнару тӗтре евӗр ҫухалнӑ.

Яту кӑна юлчӗ асра...
Телее упраман, вӑл арканнӑ.
Урӑххи халь манӑн ҫумра,
Иртнисем тӗтре евӗр саланнӑ.

Яту кӑна юлчӗ асра...
Шел. Пӗрле пуласса эпир шаннӑ.
Курмастӑп хӗвеллӗ кунра
Сӑнарна. Хурапа вӑл хупланнӑ.

Яту кӑна юлчӗ асра...

САН ӐКЕРЧӖК

Пӑхрӑн та каларӑн, юрататӑп терӗн,
Шантӑм эпӗ санӑн сӑмахна.
Пӗлместӗп мӗншӗн ҫав тери тӳрккессӗн
Улӑштартӑн хӑвӑн шухӑшна.

Чунӑм вутӑн-хӗмӗн ҫунчӗ те кӗлленчӗ,
Юрату кӑвайчӗ хӗмленмест текех.
Альбомри кивелнӗ, тӗксӗм сӑн ӳкерчӗк,
Сарӑхнӑ, илемсӗр, тӗлсӗр ҫулҫӑ пек.

УЛТАВЛĂ ТĔНЧЕ

Мĕн тери ултавлă эс, тĕнче,
Мĕне кирлĕ кун пек тĕрĕслев?
Çĕр çинче пурăнатпăр пĕрре,
Çакă, тен, хăйне евĕр сиплев?

Тĕлĕкри пек иртет пурнăçăм ман:
Пăтрану, аташу, аркату...
Ларса макăрăп-и ĕнтĕ кайран,
Утăмран-çке шырап ырату.

Хама хам вăрçатăп хушăран,
Ухмах мар, ăнланатăп йăлтах.
Ӑу вăл - вăйă-кулă кăна. Ӑайран
Вăранăп та, - юлĕ çавах.

Те тĕнче ултавлă, те эпир хамăр,
Уямастпăр Турă пилĕ-халалне.
Юратасшăн та - пĕлетпĕр хамăр,
Ал сулма тивет кăмăл-сипет çине.

Пытармастăп: çылăхĕ нумай ман,
Пырĕç-ха вĕсем леш тĕнчене.
Ун чухне чăнах та улталаймăн,
Эсĕ мар, эп тытăп явапне.

ЮРАТУСӐР



Юратусӑр та пулать пурӑнма,
Ирӗккӗн те уҫҫӑн ахӑлтатса кулма.
Чи телейлӗ ҫын пек курӑнма,
Тус-тантӑшшӑн ҫӑпанӑҫ пулма.

Юратусӑр та пулать пурӑнма,
Ҫын асап-нуши ҫине сурма.
Тантӑшун ҫемйине аркатма,
Унӑн куҫҫульне кура кулма.

Юратусӑр та пулать пурӑнма,
Кӳршӗ-аршӑна усал сунма.
Инкек-мӗн пулсассӑн - сӑнама,
Чӗрере шалта вӗчӗ тытма.

Юратусӑр та пулать пурӑнма...
Анчах канлӗх пулӗ-ши чунра?
Тытӑнмӗ-ши тусӑм ылханма?
Ҫук, юрамасть тасалӑха манма...

ЭСĔ КАЙ

Кала-ха, мĕн-ма теприне улталарăн?
Пуянрах, вăйлăрах-и вăл, тен?
Мĕн çитмест, мĕн-ма аташатăн?
Ачашлать çепĕçрех ирсерен?

Хушса юрламалли:
Куççульне мана ан кăтарт, -
Пурпĕрех ĕненместĕп.
Çук çĕртех улталарăн –
Тек сана каçармастăп.

Килместĕн пулсан, мĕн-ма шантаратăн?
Шыратăн сăлтав çук çĕртен.
Çук, суян, эппин улталатăн.
Манатăп сана çак хĕлтен.

Тепри лайăхрах? Ĕненместĕп.
Аташан эппин. Санран кĕтмен...
Тепри ачашрах? Кураймастăп.
Сивĕтет сана вăл килтен.

Çепĕçрех пулмалла? Ăнланатăп.
Йăлăхтартăм кĕтмен çĕртен.
Эппин, мĕншĕн чуна тыткăнларăн?
Ирĕке ярас пулнă хальччен.

Паянтан пысăк пăнчă лартатăп.
Санран мар, пулăшу ыйтатăп хĕлтен.
Пурпĕрех чунăмпа тепре çĕкленетĕп.
Эсĕ кай. Чармастăп. Ĕнен...

КӲРШӖ КАЧЧИ

Пăхрăн та каларăн, юрататăп терĕн,
Шантăм эпĕ савни сăмахне.
Ак, кĕçех пуçларăн, ан кил урăх терĕн,
Улăштарчĕ савни хăйĕн сăмахне

Хушса юрламалли:
Чавса çывăх – çыртма йывăр, ӳкĕнĕн
кайран,
Урăххипе çуммăн утăп, чечек кăшăлĕ
парнелĕп,
Савнине телейлĕ тăвăп, урăххипе
улăштармăп,
Санăн куççульне пăхмастăп эпĕ те кайран.

Çын аллинчи кукăль пысăкрах курнать,
Йӳçĕ япала та пылакрах туйнать.
Юттипе пулайăн-ши эс телейлĕрех?
Пуррине тиркетĕн, чунăм, ахалех.

Чунăм халь лăпланчĕ, çунчĕ те кĕлленчĕ,
Юрату кăвайчĕ хĕмленмест халь тек.
Эсĕ те телейсĕр, леш пăрахрĕ, тарчĕ,
Урăхх ун халĕ, ачашлаймăн тек.

Пур чухне ан сивлĕр, тус-юлташлă пулăр,
Юрату е туслăх – палăрĕ хăех.
Ăсларах та пулăр, хитрене ан пăхăр,
Савмалла, тен, пулнă кӳршĕ каччинех?

ИРĔК КАЙĂКĔ

Эсĕ - ман тĕлĕк,
Манăн ырату.
Манăн çухату та
Йӳçĕ ӳкĕнӳ.

Эпĕ пулнă суккăр,
Пулнă ачапча.
Пулнă айванкка та,
Пăхнă аякка.

Эсĕ усă куртăн,
Хуçрăн çуната.
Сисрĕн ачаша та
Илтĕн тыткăна.

Эсĕ - иртнĕ вăхăт.
Кирлĕ мар тĕрме.
Акă кайăк пулăп та
Вĕçĕп инçене.

Эпĕ - ирĕк кайăкĕ,
Çук манăн хăлат.
Кĕçех вĕçсе кайăп та
Тупăнĕ хăват.

КАМ ЭПĔ?

Лĕпĕш-ши эсĕ? Сăпса-ши?
Эпĕ тата? Вĕлле хурчĕ тен?
Сан чĕрӳне сăхма пултарайăп-ши?
Лĕпĕш пек вĕçсе çитĕп ак тен?

Сăпса пек хытă çыртайăп-ши?
Ун пекех хытса выртăп тен?
Пыл хурчĕ пек усă кӳрĕп-ши?
Лĕпĕш пулсан çăмăлрах килĕ тен?

Лĕпĕш-ши эсĕ? Сăпса-ши?
Эпĕ тата? Вĕлле хурчĕ тен?
Хăшĕ хăрушă? Пĕри ытлашши-и?
Нихăш те пулмалла та мар тен?

Сăпса-ши эпĕ? Пыл хурчĕ-ши?..

ЭПĔ - ÇĂТКĂН?

Эп вышкайсăр çăткăн юратура,
Пĕр çакна çеç ăнлансамччĕ эс.
Ăнлан та пĕтĕм чунупа сав мана,
Çавăн чух ĕмĕрлĕх манăн пулăн эс.

Ан шиклен, ĕмĕрлĕх вăл самант.
Мĕн-ма чăнлăха именўпе хуплас?
Шиклĕхе пĕр каçа шаларах пытарса,
Вут-хĕме парăнса савăнас.

СЕНТИЕРЕ

Эс пĕчĕкчĕ ун чух...
Ик аллуна ман паталла тăсаттăн.
Эп çамрăкчĕ ун чух...
Пĕтĕм ачашлăха сана параттăм.

Ак утатăн, тăнкăлт! йăванатăн,
Тĕлĕнсе, тем кĕтсе, куçран тинкеретĕн:
"Ма ÿкеп эп? Ма тытмаççĕ мана урасем?
Пĕç-пĕççи ма пĕрре те ÿкмест?.."

Ак çулталăк та иртрĕ...
Мĕнле маттуркка эс, пепкеçĕм!
Тетте арканать, турилкке çĕмĕрлет,
Пĕчĕкçеççĕ аллу урама сĕтĕрет.

Ак иккĕ тултартăн. Пиллĕк...
Çулсем малаллах шав чупаççĕ.
Эс ÿсетĕн, ирĕке туртăнатăн...
Аннÿн çулĕсем те иртеççĕ.

Эс пĕчĕкчĕ ун чух...
Паян шкул алăкне куллен уçатăн.
Тантăшусем, юлташусем йĕри- тавра,
"Аннеçĕм, эп вĕсемпе çÿрем-ха".

Эс пĕчĕкчĕ ун чух...
Ик аллуна ман паталла тăсаттăн.
Эп çамрăкчĕ ун чух,
Пĕтĕм ачашлăха сана параттăм.

СЕНТИЕРЕ

Сисмерĕн те, вунă çул та ак иртрĕ.
Чĕпĕ мар ĕнтĕ эсĕ текех.
Куçусем хăюллăн пăхаççĕ:
Пурнăç вăл вĕрентет хăех.

Çапла, кипкери пепке мар халь,
Пурнăçа хаклатăн хăвна евĕр халех.
Тĕпчевлĕ куçсем тĕнчене тинкереççĕ:
Пĕлесшĕн пулас чăнлăха хальтерех.

Эх, ывăлăм, чăнлăх хăрушă-мĕн:
Пĕр-пĕрне пĕтересшĕн халăх элле?
Ултав, ырату, суя, хивре пурнăç -
Пĕтме мар, пырать ĕмĕртен-ĕмĕре.

Паян эс хаваслă, хăюллă, илемлĕ,
Кулатăн шевле куллупа.
Ĕмĕр сакки санăн пултăр телейлĕ,
Савăнтар çынсене кăмăлупа!

КАЯХ

/Н.Соловьевана/

Каях! Такăр пултăр çулу!
Ман чĕрне тăршшĕне те тăмастăн эс.
Каях, кирлĕ мар тĕл пулу,
Ачаш туйăма упрама пĕлеймерĕн эс.

Юлĕ тен чĕрере ырату,
Тен пулни-иртнине шаларах пытарас?
Кама кирлĕ кун пек аркату,
Мана хаклама пĕлменшĕн тен савăнас?

Каях! Вăрăм пултăр çулу!
Ĕмĕр сакки сарлака. Сана та пулĕ
кĕтес.
Пĕлетĕп, çитĕ акă куну,
Ман ятăма пĕрре мар ӳкĕнсе аса илĕн
эс.

Каях! Такăр пултăр çулу...

ЭСĔ ÇУРАЛТĂН!

/Светлана Филиппована/

Кашни çулах килет çуралнă кун,
Ак çитрĕ вăл каллех.
Кăлт! Кăлт! тапать хумханнăн чун,
Пурнасчĕ ĕмĕрех.

Хушса юрламалли:
Çуралнă кун! Çуралнă кун!
Тусна эс ырă сун!
Çуралнă кун! Çуралнă кун!
Паян юрлатăр чун!
Эй-й-й, çуралнă кун...

Çулсем иртеç тесе эс ан кулян,
Çакă та пуянлăх.
Пурнăç илемне туллин туян,
Тĕксĕм мар малашлăх.

Аçу-аннў, тăван сывă пулсан,
Çитет, пĕтмест мехел.
Çумра ялан тус-тантăшу тăрсан,
Тухсах пырать вăй-хал.

ТĂВАНСЕМ

/ Т.В. Шаркова ӳнерçе/

Пиччесем,аппасем, шăллăмсем!
Хĕпĕртетĕп-çке эсĕр пурришĕн.
Ытарми тăвансем-сар хĕвел шевлисем,
Кар тăрар-и ялан пĕр-пĕриншĕн?

Тăвансем, пĕрле сахал пулатпăр,
Ах, ытла та вăрăм çулĕсем.
Курнăçсассăн питĕ савăнатпăр,
Кăлтлатса тапаççĕ чĕресем.

Тепĕр чух пулатпăр темшĕн урлă, -
Чулланаççĕ пулĕ çав чунсем.
Аттепе анне пăхаççĕ хурлăн,
Кулянаççĕ пирĕншĕн вĕсем.

Тăвана тăван сума сусассăн -
Пурăнмашкăн çĕр çинче аван.
Сарă кайăк та юрлать хавассăн
Ыр сунса пире пур кăмăлтан.

ЧУНӐМРАХ

Уҫ куллу кӑлтӑртатӑвӗ,
Чун-чӗре ахӑлтатӑвӗ
Курӑнать инҫерех.
Ҫамрӑк чун пӑшӑрханӑвӗ,
Йӳҫ куҫҫуль шӑпӑртатӑвӗ
Сӗмленет ҫумӑнтах.

Ҫулҫӑсен чӑштӑртатӑвӗ,
Тутусен пӑшӑлтатӑвӗ
Халиччен те асрах.
Ҫут куҫҫуль йӑлтӑртатӑвӗ,
Юхан шыв шӑнкӑртатӑвӗ
Упранать чунӑмрах...

ЭПИР - ТУСАН ПЁРЧИСЕМ?

Эпир санпа уçлăхри икĕ тусан пĕрчи...
Тĕрĕсрех, тен, тусан пĕрчийĕн пĕрчи...
Çавăрăнатпăр,пĕтĕрнетпĕр, аташатпăр,
Унтан çĕр е пин пая пайланатпăр...
Пурнăçăмăр та пирĕн çавах мар-ши?

ХУРА ХУРЛĂХАН

Пуçне усрĕ хурлăн хура хурлăхан,
Çĕр йăтайми хуйхă пырса çапнăран.
Мĕн тери паха-мĕн çĕр çинчи тусан,
Çук ун хуйхă-суйхă - çилĕ лăпкăран.

Пуçне усрĕ хурлăн хура хурлăхан,
Кăмăлĕ пит ăшă, уçă пулнăран.
Сив сăмах тухаймĕ манăн чунăмран,
Маншăн ахалех, тен, эсĕ кулянан?

Пуçне усрĕ хурлăн хура хурлăхан:
“Тĕрĕс мар тăватăн, телейрен таран.
Çăмăлттайлăх иртĕ, хуйхăрăн кайран,
Пĕчченех ак юлăн ăнлану çукран”.

Пуçне усрĕ хурлăн хура хурлăхан,
Ывăннă-тăр вăл та тĕксĕм пурнăçран.
Панине пĕлмеççĕ илме кăмăлтан,
Чунри пăр катăкĕ пысăк пулнăран.

ЧĔРЕМРЕ-
ÇУРКУННЕ

Эп тĕл пултăм сана -
Чĕрем тапрĕ кăртах.
Ан васка-ха кайма,
Тăхтасамччĕ кăштах.

Тӳпери çăлтăрсем
Куç хĕсеççĕ мана.
Манăн шухăшăмсем
Килĕшеççĕ сана.

Кӳршĕ хĕрĕ маттур,
Эпĕ те кая мар.
Вăйăм-халăм ман пур,
Кĕлеткем начар мар.

Урамра - çуркунне,
Чунăмра - çуркунне.
Чĕрери туйăмсем
Яланлăх вĕсем.

ТӐПЕНЕ САВСА ҪЕКЛЕРЕН

Эс мана паян телейлӗ турӑн,
Ҫӳллӗ-ҫӳллӗ тӳпене савса ҫӗклерӗн.
Киленӳ шерпечӗпе чунтан сӑйларӑн,
Юрату авӑрӗнче ишме вӗрентрӗн.

Эс мана паян телейлӗ турӑн,
Чунӑмри пӑра ачашлӑхпа ҫӗнтертӗн.
Эп хальччен курманнине кӑтартрӑн,
Тыткӑнри хӗлӗхсене вӗҫертрӗн.

Эс мана паян телейлӗ турӑн,
Ик ҫунатӑма ирӗк, кал-кал вӗҫтертӗн.
Вӑй парса мана эс юратуллӑн,
Чӗремри вут-кӑвара вутпах сӳнтертӗн.

Эс мана паян телейлӗ турӑн!..

ШЫРАТĂП САНА

Ăçта эс, ман тореадорăм?
Тен, çук та эсĕ çакă тĕнчере?
Тен, çуралман та эсĕ халиччен?
Тен, мана кĕтмесĕрех кайма васканă?

Хушса юрламалли:
О, тореадор, тореадор,
Эс вăйлă та хăватлă.
О, тореадор, ман тореадор,
Шухăшусем санăн çунатлă.

Ăçта эс, ман тореадорăм?
Эп санпала çÿретĕп ĕмĕтре.
Тĕлĕкĕмре те сан сăннах куратăп,
Чăматăп ырă туйăм аваăрне.

Ăçта эс, ман тореадорăм?
Ăçти вăрмансенче шырамалла сана?
Е çĕр çинче паян юлмарĕç маттурсем,
Мал шухăшлă, вĕçевлĕ кăйкăрсем?

ПУЛ ЭС МАНĂН!

«Юратса курманнисем телейсĕр, -
Пăшăлтатрĕç кушăрханă тутасем.
-Эс - пĕрремĕш, сансăр эп чĕресĕр.
Мĕншĕн шывланаççĕ чакăр куçусем?

Пул эс манăн, пурнăç тĕттĕм сансăр,
Иккĕн чух манар ытти çинчен.
Малашне тек пурăнаймăп сансăр,
Ытамра юлсамччĕ пурнăç вĕçĕччен"...

МАНАЙМАСТĂП

Манаймастăп асамлă чечен каçсене,
Ик чĕре пĕр-пĕрне ăнланса тапнине.
Куçусен хĕлхемне, аллусен ачашне,
Ик тута пĕрлешсе вут пекех çуннине.

Хушса юрламалли:
Манаймастăп,манаймастăп,
манаймастăп.
Пĕтĕмпех иртни пулсан та-
манаймастăп.
Манаймастăп,манаймастăп,
манаймастăп,
Тĕлĕкре кăна пулсан та- манаймастăп.

Манаймастăп: çăлтăрсемччĕ тÿпере,
Шантараттăн татма чи йăлтăрккине.
Манаймастăп: юратуччĕ чун-чĕрере,
Ах, мĕн-ма упрамарăм-ши пуррине?

Урăххи халь çумра, эсĕ мар, эсĕ мар.
Вăл та туйăмсем синчен калаçасшăн.
Ăнланап: иртнине таварма кирлĕ мар,
Эс те, эп те ĕмĕр телейлĕ пуласшăн.

ӐНЛАНМАНЛӐХ

Эп сана кураймастӑп,
Эс мана юратмастӑн.
Чӗресем пӗр-пӗриншӗн - ҫич ют.
Эп санпа канашласшӑн,
Эс вара тӑн парасшӑн.
Тен пулар пӗр-пӗриншӗн
Хӗмленсе тӑран вут?

Эп сана ӑнланмастӑп,
Эс мана тӑнламастӑн.
Хуйхӑрма халь иртнишӗн ҫук шут.
Эп сана кураймастӑп,
Эс мана чӑтаймастӑн.
Пулар пӗр-пӗриншӗн
Ӗмӗрех ҫичӗ ют.

Эп паян хурланмастӑп.
Сан патна ӑнтӑлмастӑп.
Чӗрере халӗ ман - урӑх сӑн.
Эп ӑнах кӑмӑллатӑп.
Эп ӑнах тус тӑватӑп.
Курймастӑн пулсан -
Ырӑ сун.

Эп чӑнах хурланмастӑп.
Ҫав куна асилместӗп.
Ӗмӗтре ман халь - урӑххи.
Эп чӑнах кулянмастӑп,
Иртнине асилместӗп.
Пурнӑҫра ман халь - урӑххи.

АН ВЫЛЯ

Ан выля манпа ача вăйии, ан выля,
Пурнăç мĕнлине пĕлетĕп, чухлатăп.
Ан кала мана суя сăмах тек, ан кала,
Инкеке сирме вăй-хал пурпĕр
çитеретĕп.

Ан выля манпа ача вăйии, ан выля,
Çын сăмах-юмахне пурпĕр çĕнтеретĕп.
Ан вăскат çут тĕнчерен кайма, ан
васкат,
Сан патна эп каярах та пурĕпĕр килетĕп.

Ан выля манпа ача вăйии, ан выля,
Чун-чĕре унсăрăнах шăнса пăрланнă.
Ан тивсем, иртни тек таврăнмĕ каялла,
Мĕнрен мĕн килессине эпир ăнланнă.

Ан выля манпа ача вăйии, ан выля,
Пурнăç унсăрăнах синкерпеле хупланнă.
Ан кала мана суя сăмах тек, ан кала,
Инкеке сирме вăй-хал ялан çитернĕ.

АН КАЛАҪ

Ан калаҫ манпала, ан калаҫ,
Пурпĕрех хуравлаймăп.
Чĕрене ыраттартăн ҫав каҫ,
Пурпĕрех каҫараймăп.

Хушса юрламалли:
Пулнă, иртнĕ,
Нумай шыв-шур юхнă.
Савăкки те пулнах, пулман мар.
Хавасланнă та пуль, ҫунатланнă та пуль,
Ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле пуласса шаннă пуль.

Кирлĕ мар, ан калаҫ манпалан,
Чĕтренет ачаш сассăм.
Ан пăхсам тинкерсе куҫăмран,
Ан сывла эсĕ ассăн.

Кай, тархасшăн, ҫухал ман умран,
Сăмаху сан ултавлă.
Юхса анчĕ куҫҫуль куҫăмран,
Темшĕн вăл пит тăварлă.

Ан калаҫ, иртнине тавăраймăн,
Касса татнă пулсан - сыпма ҫук.
Манăн йӳҫĕ куҫҫуль, ачаш чунăм,
Сан ултавлă чунна витес ҫук.

МĚНЛЕ ĂШĂНАС?

/Ирĕклĕ сăвă/

Эсĕ кайрăн. Илтĕнмест ура сасси те.
Мĕн тăвас? Тен хыçăнтан чупас?
Çук, чĕремре сив кӳренӳ пулин те,
Куçăмри куççулĕме юхма памас.
Чун сан еннеллех туртать пулин те,
Ултавçă хыççăн нихăçан каймас.
Эсĕ кайрăн... Илтĕнмест ура сасси те.

Сивĕ...Сивĕ...Епле ăшăнас? Каласам!
Тулта-шартлама, чĕрере - çил-тăман,
Мĕншĕн ялан чĕрене çунтарас?
Мĕншĕн ялан телейрен пăрăнас?
Мĕншĕн мана çирĕп кăмăл паман?
Мĕншĕн сана юратма вĕрентмен?
Сивĕ...Сивĕ...Епле ăшăнас? Каласам!

Пурăнаççĕ çынсем, сивĕ чунлă пулин те,
Ыррисем çук тесе каламас.
Вĕсем хушшинче сан пекки те,
Мĕншĕн чуна ахалех çунтарас?
Сан пеккисемшĕн тасалăх çукки те,
Пысăк çылăх вырăнне шутланмасть.
Пурăнаççĕ çынсем, чурăс чунлă пулин те.

ЮРАТĂР!

/Розăпа Володя Власовсене/

Тӳпере çăлтăрсем çуталаççĕ,
Саламлаççĕ вĕсем пĕр-пĕрне.
Пуçăмра шухăшсем çуралаççĕ,
Çак ытарлă тĕттĕм каçхине.

Хушса юрламалли:
Иртен пуçласа сĕм каçчен
Юрату çинчен каласар-и?
Иртен пуçласа мĕн каçчен
Пĕр-пĕрне парăнса юратар-и?

Юрату çук тесен - ан ĕненĕр!
Пурах вăл кашнин чĕринче.
Юратма пĕлмесессĕн - вĕренĕр,
Вăл - асамлă та савăк тĕнче.

Кун-çул та иртет мĕн, самант та,
Кăмăла пăсас мар вăрçăнса.
Çулсем хăвалаççĕ пулсан та,
Пурăнар пĕр-пĕрне юратса.

Юратăр, тусăмсем, хыт юратăр.
Юратсассăн тĕнче çутăрах.
Пĕр-пĕрне ăнлансассăн, ан манăр,
Пурăнма чылай çăмăлрах.

ĂÇТА ЭС?

/Шўтлĕ юрă/

Хĕрарăма хăшĕсем вăйсăр тееççĕ,
Пăхăнмалла иккен ун арçынна.
Вăйсăррине пăхсах ĕçлеттереççĕ,
Сив сăмахпа кăшлаççĕ чуна.

Хушса юрламалли:
Эсĕ - ангел, эпĕ - апостол,
Эсĕ - манăн чура.
Эсĕ, тусăм, мансăр юлсан,
Тăрса юлăн çука.

Хĕрарăм - пурнăç тыткăчи тееççĕ,
Çемье ăшши килет мĕн пĕр унран.
Ачисем çўлеллех кармашаççĕ,
Мĕн-ши юлĕ капла кайран?

Эх, хĕрарăм, хĕрарăм, хĕрарăм,
Тиенет пĕтĕм ĕç сан çине.
Астăватăн-и, эп сана каларăм,
Ĕмĕр сакки сарлака тенине?

Эпĕ шантăм, тĕрек тупăп терĕм,
Çамрăк чуна парнелерĕм сана.
Халĕ ăçта эс, манăн тĕрекĕм?
Пĕчченлĕх кăшлать, çиет чуна...

ПУЛ МАН ТĔРЕВ

/Пĕр мăшăр Киселевсене/

Ĕлĕкрех калатчĕç тăтăшах:
"Çемьере асли - арçын, вăл - кил хуçи.
Пурнăçра хĕрарăм вырăнĕ пушах,
Вăл - хуранпа çатма хуçи".

Хушса юрламалли:
Тарçăсем эпир - хĕрарăмсем?
Вăл çитмест, ку çитмест пире ялан.
Пурнăçа тытаймаççĕ арçынсем,
Çемьере вĕсем хуçа пулсан.

Çўçĕ вăрăм, ăсĕ кĕске? Пулинех!
Халь пĕлетпĕр: ĕçĕ çўçре мар.
Алла илтĕмĕр кĕске çўçлисенех,
Текех ĕнтĕ хăратмашкăн кирлĕ мар.

Халь пăхатăп та шутлатăп: ай-яй-яй!
Мĕншĕн пит йўнелчĕç арçынсем?
Алăра сирĕн тулли черкке пĕрмай,
Вĕççĕрех тĕтĕмлеççĕ чĕлĕмсем...

Ман курас килет санра çирĕп тĕрев,
Сан çумнах йăпшăнасчĕ йывăр чух.
Эп - хĕрарăм, эпĕ - вăйсăр, - пул тĕрев,
Тарçă пулмăп эпĕ те ун чух.

АН АТАШ!

Эс килеттĕн те каяттăн васкаса,
Ал сулса хăвараттăн кулса:
"Сывă пул, савниçĕм, эпĕ - сан,
Сансăр пуçне никамах та çук ман".

Хушса юрламалли:
Юратмастăн пулсан - ан калаç.
Ултав сăмахсемпе ан аташ.
Ултавпа çиейместĕн кулач.
Ку ман çĕнĕ савни: паллаш...

Мансăр пуçне никамах та çук ун?
Никамах та тет? Суять мар-и çак чун?
Вĕрентем-ха çав ултавçăна,
Кăтартам-ха мыскара ăна.

Ак шаккать кĕç алăкран васкаса.
Çук, пымастăп унчченхи пек чупса.
Кĕç курать алăк çинче шурă хут:
"Килте çук. Ыран килĕр тепĕр хут".

Кирлĕ мар пĕр-пĕрне улталама.
Ĕмĕрĕ кĕске-çке юратса юлма.
Вунă савни хыççăн чупма кирлĕ мар.
Чун савнинех, чун кĕтнинех тен упрар?

ЮРАТУ ТАТА КĔВĔÇӲ

Юрату тата курайманлăх,
Юрату тата кĕвĕçӳ...
Пĕр-пĕринсĕр пулмасть ниепле те,
Пĕр-пĕринсĕр пулмасть ырату.
Пĕр-пĕринсĕр тухмасть хĕвел те,
Пĕр-пĕринсĕр пулмасть çухату.

Юрату тата курайманлăх,
Юрату тата кĕвĕçӳ...
Юнашар вĕсем паян та,
Юнашар çуралать çухату.
Юнашар, кирлĕ мар пулсан та,
Юнашар чунсенче пăлхану.

Юрату тата курайманлăх,
Юрату тата кĕвĕçӳ...
Кирлĕ мар, çунатăп пулин те,
Кирлĕ мар чуна кăшлакан юрату.
Кирлĕ мар, кĕлленетĕп пулин те,
Кирлĕ мар йĕртекен кӳлешӳ.

Юрату тата курайманлăх,
Юрату тата кĕвĕçӳ...
Кĕтетĕп, чунра пушă пулин те,
Кĕтетĕп, ыраттарĕ тен сăмаху?
Кĕтетĕп, шанчăк çук пулин те,
Эп кĕтетĕп: килетех ырату.

ĂÇТА-ХА ШУРĂ ПӲРТ?

Атте мана шур пӳрт лартса парап
теетчĕ,
Тăватпăр тетчĕ шур пӳртрен кермен.
Манран вăл чаплă çын тума
ĕмĕтленетчĕ:
"Эс ман тĕрекĕм, ывăлăм, ĕнен!"

Хушса юрламалли:
Анчах...Анчах...
"Ăçта аçу? Вăл ма пăхмасть сана?
Вăл мĕншĕн пурăнмасть кунта?" -
Ыйтать, тĕпчет çывăх тусу час-час.
Ах, тусăм-тантăшăм, сана ман мĕн
калас?

Атте мана шур пӳрт лартса парап
теетчĕ,
Сан пур аçу-аннӳ, эсĕ телейлĕ, тетчĕ.
"Эсĕ вĕрен, тĕпренчĕкĕм, кирлех ăс-
тăн,
Пуçра пулсан кăна эс çын ретне кĕрен".

Атте мана шур пӳрт лартса парап
теетчĕ.
Хăй кайрĕ пăрахса, çухалчĕ, тарчĕ.
Пĕлместĕп халь ăçта вăл кун кунлать,
Кам ачине "ман тĕпренчĕкĕмçĕм" тет.

Атте мана шур пӳрт лартса парап
теетчӗ.
Ма улталарӗ вӑл мана? Мӗн-ма
шантарчӗ?
Эп кӳрентертӗм-шим сана, аттеҫӗм?
Эп кам ачи? Ҫунать-ҫке пӗчӗк чунӑм...

АСТĂВАТĂН-И, АННЕ?

Ют хĕре киле ун чух илсе килтĕм,
Ыйтмарăм-тумарăм санран маларах.
Куçăнти ўпкеве чăрсăррăн сиртĕм,
Шухăшларăм: хăть те мĕн каларах!

Хушса юрламалли:
Астăватăн-и, анне?
Сисрĕм, - кўрентĕн.
Кăлартăм пустуй куççульне.
Эсĕ те "ан авлан, ывлăм", темерĕн,
Ăнлантăн арăм хаклăрах иккенне.

Санпа мар, ют хĕрпе туслă пултăм.
Хўтĕлеттĕн манран ăна пурпĕрех.
Телей мар, шав инкек унпа куртăм.
Эс сивлемерĕн: ăнлану килетех.

Каçар. Санран мар, хамран култăм.
Пĕрлешме кирлĕ мар пилсĕрех.
Çăмăллăнах арăм çине алă султăм.
Тĕв турăм юлма пĕччен, килсĕрех.

Пире эсĕ, анне, пĕр эсĕ ăнлантăн.
Мана мар, хўтĕлерĕн киннех.
Çемье ăшшине те пĕр эсĕ упрарăн.
Тайма пуç ăс панишĕн. Тавах!

АСТАРМӐШСЕМ

Пӗлместпӗр - мӗн кирлӗ пире?
Мӗне чарӑнми хӑвалатпӑр?
Мӗн-ма кӑлтлатать-ши чӗре?
Телее пурпӗрех тытаймастпӑр.

Хушса юрламалли:
Вӗсем - хӗр илемӗ,
Вӗсем - чун ҫунтармӑш.
Вӗсем - чун ыйтни те
Вӗсем - ик астармӑш...

Уҫҫӑнах пӗлтерем-ши сире?
Телее кашни кун асӑрхатпӑр.
Ӑна хӗр пытарнӑ хӗве,
Телее кунсерен ачашлатпӑр.

Тути те пылак-ҫке сӗре,
Пуҫа ҫухатсах антӑхатпӑр.
Аса илтерет-ши мӗне?
Пӗлетпӗр-ха та, пытаратпӑр.

ПĔР ЭСĔ

Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...
Манаймастăп –чĕрере пĕр эс.
Манаймастăп –тыткăнларăн эс.
Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...

Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...
Сиретĕп юта –чĕрере пĕр эс.
Чунăмра –кунăмра та –пĕр эс.
Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...

Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...
Сывлаймастăп. Пулăшайăн эс.
Ан кĕттер! Вĕлеретĕн эс.
Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...

Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...
Пурнăç çине хыватăп хĕрес.
Хама валли шыратăп кĕтес.
Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...

Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...
Епле сан патна ман çитес?
Сан тĕнчӳне епле ман кĕрес?
Эсĕ... Пĕр эсĕ... Пĕр эс...

АЛĂ СУЛ ТА?

Алă сул та - уттар малалла?
Иртни пурпĕрех таврăнмасть.
Çук пулсассăн- пĕрех тупăнмасть.
Ан хурлан, ан тинкер каялла.

Алă сул та - пăхсам кунталла.
Куççуль витĕр хĕвел курăнмасть?
Пĕччен пурăнса чуну лăпланмасть.
Ан типсем! Туртăнсам çутталла.

Ан кўрен, алă сул тăшманна,-
Ун усалĕ сана çыпçăнмасть.
Эс пулсам вăйлăрах! Пăсаймасть
вара чурăс çын кăмăлна.

Алă сул та - чуптар малалла!
Пурпĕрех, асту, никам пулăшмасть.
Саншăн паян кун никам тăрăшмасть,-
Асту та çакна, сывла "паянла".

Алă сул та - вĕçтер малалла!..

ЧЕЧЕКРЕЧЧĔ САДСЕМ

/Сăмахĕсем М. Рябининăн
Кĕвви В. Шаинскин/

Тем пулнă пек пуç çаврăнчĕ
Садсем ешернĕ чух.
Кĕтмен-çĕртен пĕр каçхине
"Саватăп" тенĕ чух.
Тем пулнă пек пуç çаврăнчĕ,
Эсĕ ытла ачашчĕ çав.
Ĕнентĕм-çке, чун ĕненчĕ,
Ниме пăхмарĕ çав.

Хушса юрламалли:
Çулла пĕрре сад ешерет.
Юрату тени пĕрре килет.
Пĕрре анчах, пĕр хут анчах
Чунра çапла сад ешерет.
Пĕрре анчах, пĕр хут анчах...

Çӳл тӳперен çăлтăр ӳкет
Садсем ешернĕ чух.
Айван чĕрем кăлт! кăлт! тапать,
Эс туй пирки калаçнă чух.
Текех ĕнтĕ мĕн пытарам
Телейлĕ куççене?
Аннен те ав хĕпĕртесе
Куççуль тулать куçĕсене.

Венчет кĕпи çĕлеттĕмĕр
Садсем ешернĕ чух.
Анчах кĕçех ак пĕтрĕмĕр, -
Теприйĕ умăнта.
Илемлĕ те хăюлласкер,
Курмарĕ манăн телее.
Пăхмарĕ вăл, васкавлăскер,
Аркатрĕ çамрăк чĕрене.

ТЕЛЕЙ

/“Вирус” ушкăн репертуарĕнчен/

Телей çинчен ĕмĕтленет кашни,
Юратура кашни телей тупайтăр.
Хальччен эпир санпа курни-илтни
Çак юрă-кĕвĕре ялан упрантăр.
Сан таврари тус-юлташу, савни,
Кичеммĕн кĕтесре тăма пăрахтăр.
Чĕн вĕсене эс ташă картине,
Санпа пĕрле пĕтĕм тĕнче ташлатăр.

Хушса юрламалли:
Атьăр-ха пĕрле
Юрă юрлатпăр.
Пурте пĕрле чухне
Савăнса юлатпăр.

Пăхсам: савăнать ватти те вĕтти,
Кунсеренех чунра хĕвел вылятăр.
Ан çыпçăнтăр çумна инкек тени,
Тăван-пĕтен хавасланса ташлатăр.
Кичемленсе тăран пĕччен мĕн-ма?
Итле кĕвве, тухсамччĕ ташлама.
Тус-тăванпа чунтан хавасланма,
Çĕн юлташсем пултарĕç тупăнма.

ТУСĂМ

/В. Салтыков репертуарĕнчен/

Тутлă ыйхă ытамĕ
Куççене хупăнтарчĕ.
Шăппăн-ачашшăн эп
Тутуна сĕртĕнетĕп.
Туту çинче, кур-ха,
Çак кун сăнарланнă.
Эс тутлăн çывратăн
Эп шăппăн калатăп: тусăм...

Хушса юрламалли:
Тавах сана куншăн, тавах ырă каçшăн,
Ывăлăмпа хĕршĕн тавтапуç.
Хуйхăпала усала парăнманшăн,
Пирĕн кил-çуртшăн сана тавтапуç.

Çак самант каллех вăл килет,
Пирĕн хĕр те, ак курăн, шанса тăр,
Сан пекех сăпка сиктерет,
Пепкине ачашшăн сăнать.
Кам-тăр ăна та каллех
Ман пекех телей юрри парнелет:
Эс тутлăн çывратăн,
Эп шăппăн калатăп: тусăм...

Мĕн пурри вăл иртет.
Лăпкăн çывăрăр эсĕр.
Турă курса-хĕрхенсе
Хўтĕлĕ, тен, ĕмĕр-ĕмĕр.
Вара манăн та, тен,
Чунăм лăпланĕ.
Пурпĕр юрлатăп эп:
“Эс тутлăн çывратăн,
Эп шăппăн калатăп: тусăм”...

КĔТ МАНА

/Сăмахĕсем К.Симоновăн
Кĕвви М.Блантерăн/

Кĕт мана, эп таврăнатăп,
Питĕ хытă кĕт.
Çумăрлă тăрать пулсан та,
Ан кулян. Эс - кĕт.
Юр çусан та, кĕт мана эс.
Шăрăхра та кĕт.
Ыттисем çинчен мансан та,
Эс - асту. Эс - кĕт.
Çырусем килми пулсан та,
Ан мансам. Эс - кĕт.
Теприсем кĕтми пулсан та,
Эсĕ, эсĕ кĕт.
Кĕт мана. Эп таврăнатăп.
Ан хытар чунна.
Манмалла теççĕ пулсан та,
Эсĕ кĕт мана.
Ывăлпа амăш ĕненĕç
Эпĕ çуккине.
Юлташсем кĕтме пăрахĕç,
Вут умне ларса
Йўç эрех астивсе пăхĕç
Чуна асăнса.
Кĕт! Пĕрле ларса эс
Ĕçме ан васка.
Кĕт мана эс! Таврăнатăп
Чĕрĕлсе тăрса.

Кĕтменни, мĕнех, калатăр,
"Ăнчĕ ун",- тесе.
Вăл çакна халĕ ĕнентĕр:
Çăлтăн ĕненсе...

...

Мĕнле чĕрĕ юлнине
Пĕлĕп пĕр санпа.
Эсĕ кĕтме пĕлнине
Урăхла... - чунпа.

ЧУНĂМÇĂМ

Чунăмçăм эс ман,
Илсем мана пĕрле.
Унта, ют çĕршывра,
Мăшăру пулăп сан.

Чунăмçăм эс ман,
Илĕттĕм те çав.
Унта, ют çĕршывра,
Мăшăрăм пур-çке ман.

Чунăмçăм эс ман,
Илсем мана пĕрле.
Унта, ют çĕршывра,
Йăмăку пулăп сан.

Чунăмçăм эс ман,
Илĕттĕм те çав.
Унта, ют çĕршывра,
Йăмăкăм пур-çке ман.

Чунăмçăм эс ман,
Илсем мана пĕрле.
Унта, ют çĕршывра,
Пачах ют пулăп эп.

Чунăмçăм эс ман,
Илĕттĕм те çав.
Унта, ют çĕршывра,
Мана ют кирлĕ мар.

Кантӑкран та эп шаккарӑм,
Шухӑш пурччӗ йыхӑрма.
Кинона чӗнме шут тытрӑм,
Пӑшӑл-пӑшӑл калаҫма.

Саншӑн мар-и, ман чечекӗм,
Тус юлать тӑшман пулса.
Ӑнланмастӑп-ҫке, хӗвелӗм,
Ма ҫӳрен ялан тарса.

Юнашар та кураймастӑп,
Инҫетре пӗтет чӗре.
Мӗн тӑвас, пурӑнаймастӑп,
Тунсӑхлатӑп-ҫке сӗре.

АСАМЛАРӐН...

/Сӑмахӗсем Н. Заболоцковӑн
Кӗвви М. Звездинскин/

Асамларӑн эс, тыткӑнларӑн эс,
Уй-хирти ҫилпе туслаштартӑн эс.
Сӑнчӑрти пек туятӑн хӑвна эс,
Манӑн чунӑм суйланӑ хӗрарӑм эс.

Хаваса, тунсӑха та туятӑн эс,
Тӳперен аннӑ пек туйӑнатӑн эс.
Ман чуна пӑчӑртан юрӑ-кӗвӗ эс,
Ухмаха кӑларан ялтӑр ҫӑлтӑр эс.

Чӗркуҫҫи ҫине тӑрататӑн эс,
Ытамӑмран тухаймастӑн эс.
Сӑввӑма, куҫҫуле йышӑнсамччӗ эс,
Ҫунтарайччӑр сана. Пит ачаш-ҫке эс.

Ҫук пулсан, мӗнех, хушӑнмасть паллах.
Килеймерӗ-тӗк - манӑҫать паллах.
Ан йӗрсем, пике, таврӑнать часах,
Телейне кӗтсем, вӑл пулать санах.

МĔН ТУСА ХУТĂН, ПОЛИНА?

Алăк çумне сĕвĕнсе çав тери хурлăхлăн йĕрекен хĕре çынсем тĕлĕнсе те шеллесе пăхаççĕ. Мĕншĕн çав териех кулянать-ши çамрăк чун?

"Хамах, пĕтĕмпех хамах айăплă. Мĕншĕн çыхлантăм пулĕ çав мурпалан? Урăх йĕкĕт çукчĕ-и? Сахалччĕ-и хыçран чупакансем? Ухмах пуç, мĕншĕн çын савнийĕ кирлĕ пулчĕ мана?"

...Паллана сукмакпа /ăçтан астума пултарчĕ Полина çак сукмака?/ хĕр хăй сисмесĕрех Атăл хĕрринелле утрĕ. Мăнаçлă та ватă юхан шыв пулăшма пултарнă пек туйăнчĕ ăна халĕ. Çапла, пĕтĕмпех паллă, çывăх вырăнсем кунта. Анчах ун чух çакăнта ирттернĕ вăхăтсенче Полинăн, çамрăк чунчĕре темерĕн, юрлас килетчĕ, пурнăçа, çынсене, çут çанталăка юратас шухăшсем, чĕререн тухакан сăвăсем çуралатчĕç. Паян вара пачах урăхла йĕркесем шăрçаланаççĕ пуçра:

Пурăнаççĕ çынсем, сивĕ чунлă пулин те,
Ыррисем çук тесе калаймастăн.
Пур вĕсем хушшинче сан пекки те,
Мĕншĕн-ха чĕрене çунтаратăн?

Полина ахаль те мĕн пур пулăма,

киревсĕр ĕçсене çав тери чĕре патне çывăха илет. Сахал мар асăрхаттарнă, вăрçнă ăна çакăншăн Миша.

“Миша, ăçта эсĕ? Туятăн-и çак вăхăтра эсĕ мана кирлине? Чĕре мана каллех пирĕн вырăна илсе килчĕ. Астăватăн-и, сахал мар çӳренĕ эпир кунта. Кашни каç чĕресем телейлĕн тапнине итлеттĕмĕр. Шурă пăрахутсене пăхса киленеттĕмĕр.

Аякка-аякка ларса каяс килетчĕ манăн санпа. Миша, Миша, Атăл шывĕ хаяррăн çырана килсе çапнă вăхăтсенче юриех унпа вылянса кĕрешнине те мантăн-ши? Йĕп-йĕпе пулаттăмăр хамăр, анчах чунсенче телейччĕ, юратуччĕ. Иксĕмĕр пĕрле пуласса шанса, кĕтсе хавхаланаттăмăр. Анчах...”

Юратать тесех шухăшлатчĕ Полина Мишăна. Хăш вăхăтра улшăнчĕ унăн кăмăлĕ?

Чăтма пултараймастчĕ çирĕп кăмăл-шухăшлă хĕр çăмăлттайсемпе вĕçкĕнсене. Пуш сăмах çапакансене самантрах вырăна лартатчĕ. Сашăна курсан та, вăл елпĕрсе калаçнине илтсен, ăна лăплантарма шутларĕ. Анчах... Хитре каччăна хирĕç калама пĕр сăмах та тупаймарĕ. Шанках хытса тăчĕ вăл яштака хитре яш умĕнче. Саша та тĕлĕнсе пăхрĕ хĕре.

Манчĕ Полина Мишăна. “Мĕскĕнленсе, сулланса ан çӳре. Урăх хĕр туп”,- тесе хăваларĕ. Часах Сашăпа пĕрлешрĕç вĕсем.

Ăнмарĕ çемье пурнăçĕ. Хăйĕн упăшки

мĕнлерех çын иккенне Полина часах ăнланса илчĕ. Сахал мар хĕре макăртнă иккен унăн юратăвĕ. Çавăнпах хĕр-тантăшĕсем пăрăнса çӳреме пуçларĕç унран. Кĕтмен-çĕртен тата çывăх тантăшĕ çав тери усал хыпар илсе килчĕ: Сашăн малтанхи хĕрĕ йывăр çын иккен. "Эппин вăл манпа паллашиччен урăххипе пурăннă?!." Урăх нимĕн калама, ыйтма та пултараймарĕ улталаннăскер. Шан-н! тутарса пырса çапнăнах туйăнчĕç тантăшĕн сăмахĕсем.

Хура кушак чупса иртрĕ çакăн хыççăн çамрăк мăшăр хушшинче. Полина Сашăн ачаш юрату сăмахĕсем ултавлă, наркăмăшлă пулнине тинех ăнланса илчĕ. "Пулнă-иртнĕ, манăçĕ-ха,.." - çапла та шухăшласа пăхрĕ çамрăк арăм. Анчах чĕрере канăçлăх пулмарĕ. Юрату пулман та пек туйăна пуçларĕ.

Миша каланă сăмахсем те аса килчĕç: "Асту, Полина, тĕпсĕр авăра сикетĕн. Пурнăç çынни мар вăл, пĕлетĕп эпĕ ăна". Çакăн хыççăн Полина Сашăран уйрăлмах шут тытрĕ. Тем пекех тилмĕрчĕ, каçару ыйтрĕ упăшки, анчах чĕрери пăр катăкĕ ирĕлмерĕ. Асапланман тесен суйнă пулĕччĕ. Чĕрене ыраттарса, минтер çыртса макăрнисем - пайтах пулнă. Шăпах тата чĕре айĕнче çĕнĕ чун тапкаланма пуçларĕ. Ăна ашшĕсĕр йывăр пулассине питĕ аван ăнланать Полина. Хăй те çамрăклах ашшĕсĕр тăрса юлнă. Амăшĕ мĕн тери асапланнине

çав тери лайăх астăвать. Анчах ултавçăпа ĕмĕр ĕмĕрлесси çинчен шухăшлас та килмест.

Çапла, сахал пурăнчĕç вĕсем Сашăпа. Пурнăç тути-масине нумай та астивсе курма ĕлкĕреймерĕç. Паян вара... Паян судра вĕсем тек арăмĕпе упăшки маррине пĕлтерчĕç.

Полина Мишăпа час-час ларнă чул катăкĕ çинчен тăчĕ, Атăл çинелле тинкерчĕ. "Пулăшсам мана, Миша, каçар, айăплă эпĕ",.. - пăшăлтатрĕ тăртаннă тути.

Шанса, тем кĕтнĕн икĕ аллипе малалла туртăнчĕ Полина. Иртсе каякан пăрахут çине вĕçсе çитессĕнех туйăнчĕ ăна. Анчах çак самантра чĕре çумĕнчи пĕчĕк чун хăй çинчен аса илтересшĕн пек пулса кăлт! тапса ячĕ. Çамрăк хĕрарăм пит-куçĕ çуталчĕ. "Мĕнех, пурăнатпăр. Хамшăн мар, пепкемçĕм, санăн пуласлăхушăн пурăнмалла манăн. Телейшĕн кĕрешмелле, юратушăн вутра та çунса курмалла"...

КАМ ЭСӖ? ЭПӖ КАМ?

Мӗншӗн ҫыратӑп-ха эпӗ ку ҫырӑва? Пӗлместӗп. Ҫитерӗп-и ӑна сан пата? Мӗнле чӗнмелле ман сана? Эпӗ камне тата мӗнле сӑмахсемпе ӑнлантарас-ши? Пӗлместӗп ҫав, пӗлместӗп. Санӑн вара, паллах, чӑн малтан эпӗ кам, ӑҫтан, мӗнле хӗрарӑм пулнине пӗлес килет, ҫапла-и?

Кам эпӗ? Мӗнех, эпӗ пуррине ҫулталӑк ытла пӗлетӗн, пӗлейместӗн пулсан та сисетӗнех эсӗ. Ҫапла, ҫапла, шӑпах ҫав хӗрарӑм эпӗ. Мана пула мӗн чухлӗ макӑрман, ҫывӑрман пулӗ эсӗ. Мӗн тери курайман эсӗ мана, ҫапла-и? Ылханнӑ, вилӗм суннӑ...Мӗн тери курайман эсӗ мана... Эпӗ вӑл, сирӗн ҫемье пурнӑҫне тамӑка ҫавӑраканӗ, сан Игоряшӑна - ҫапла чӗнетӗн-мӗн эсӗ ӑна - туртса илекенӗ. Ҫемьене ҫавӑн чухлӗ куҫҫуль илсе килнӗ хӗрарӑм ятне упӑшкунтан ыйтас е ыйтас мар тесе мӗн чухлӗ асапланнӑ, иккӗленнӗ эсӗ. Мӑнкӑмӑллӑх тени вара? Мӑшӑрунтан унӑн савнӑ ҫынни ҫинчен ыйтни мӗскӗнленни пулмасть-и-ха вара? Е тен интеллигентлӑха кӑтартать ҫакӑ? Ҫук, хӑйӗнчен мар, унӑн юлташӗпе курса калаҫрӑн, унран ыйтрӑн. Пӗлетӗп, чӳречерен сикес, унран ҫуратнӑ хӗрачасене вӗлерес шухӑш та пулнӑ санӑн. Ниҫта кайса кӗрейменнипе мӑшӑрна та кӑн-кӑвак пуличчен хӗнесе пӗтернӗ. Ҫук, хирӗҫ

тытман вăл. Кĕвĕçӳ-тарăхупа тулнăскер, эсĕ нимĕн умĕнче те чарăнса тăманнине ăнланнă. Кăвакарнă-сарăхнă вырăнсене сĕртĕнсен, куçран мĕскĕннĕн, кулмастăн-и тенĕн пăхатчĕ...

Тинех тăна кĕчĕ, çемьенех таврăнчĕ терĕн пулĕ кăштахран. Теприннпе йăлăхрĕ терĕн-тĕр. Санпа лăпкăнрах, ăшшăнрах калаçма пуçларĕ упăшку. Санăн та, ăна кура, хитререх курăнас, хваттере хăтлăрах тăвас килчĕ пулĕ. Вăл килнĕ çĕре кухньăран тухас та килмест, тутлăран та тутлă апатпа сăйлас килет, çапла-и? Килте мĕн тери аван халĕ?..

Çапларах шухăшланă ĕнтĕ эсĕ юлашки вăхăтра. Çук, йăнăшатăн, эпĕ çуккине пула мар, шăпах эпĕ пуррине пула çакă. Игоряша мана пăрахнă тесе ан шухăшла. Ан чăмăрта, ан лутăрка хут таткине, пит-куçна тарăхупа ан пĕркелентер, сана асаплантарас килмест манăн. Эппин мĕншĕн çыратăп? Пĕлместĕп... Халĕ эсĕ килĕнте пĕччен пулнине, Игорь çак вăхăтра дачăна ун-кун илсе килме вĕçтернине вара питĕ аван пĕлетĕп. Унтан вăл тӳрех ман патăма килет. Ыранхи уяв пирки калаçма. Çапла, ыран, раштавăн 19-мĕшĕнче, санăн çуралнă куну. Виçĕ çул аслăрах-мĕн эсĕ манран...

Çулла паллашрăмăр, пĕрлешрĕмĕр эпир сан мăшăрупа. Экзаменсем пыратчĕç. Йĕрке хуралĕ - çакă унăн тивĕçĕччĕ. Ытла та мĕскĕн, пĕччен курăнчĕ ун чух Игорь. Çав вăхăтрах унра вăрттăн вăй-хăват тапса

тăни сисĕнчĕ. Хăнана пырас кăмăл пуррине пĕлтерсен- хирĕçлеймерĕм. Çывăхрах хутшăнусем пирки систерсен вара... Унăн пĕчченлĕхне/хамăн та çавах мар-и тата?/ хирĕç тăраймарăм. Çук, иртĕхни пулмарĕ çакă. Икĕ пĕчченлĕх туртăнса, пĕрлешсе пĕр пулни, пĕр-пĕрне тупни пулчĕ çакă. Икĕ тăлăх чуншăн Турă кăвак хуппине уçас терĕ пулас...

Эсĕ вара? Эсĕ ăна пĕччен пурăнса пăхтăр, пĕччeнлĕх мĕн тути каланине ăнлантăр тесе тытнă та, ачасене илсе, яла виçĕ уйăха тухса вĕçтернĕ. Нушалантăр тенĕ ĕнтĕ. Эх-х! айванлăх... Çавăн пек пурăнма вĕрентмелле-и ĕнтĕ çынна? Арçынна пушшех те. Кил, çемье ăшши, тутлă апат-çимĕç выранне йытă пек хамлатса тăни камах килĕштĕр?

Пирĕншĕн вара юмахри пекехчĕ çут тĕнче. Те çак ирĕклĕх, лăпкăлăх, савăнăç вăраха пыма пултарайманнине ăнланнăран-ши, кашни саманта киленӳпе тултарма тăрăшаттăмăр. Ют куççем те чарайман пире. Паллакансем урăхларах пăхкалани те. Чарăнăр тени те. Пирĕн çинчен Игорь тăванĕсем те пĕлетчĕç. Пĕтĕм тĕнче пĕлетчĕ. Пирĕн юрату çинчен пĕр çын кăна- эсĕ - пĕлместĕнччĕ. Е пĕлесшĕн марччĕ?

Анчах... Юмахăн та вĕçĕ-хĕрри пур-мĕн. Сан çинчен мар, ачисем çинчен ытларах та ытларах аса илме, калаçма тытăнчĕ Игорь. Эпĕ вара, ăна итленĕçемĕн, ĕненетĕн-и, çук-и, сана шеллеме, ăнланма

тытӑнтӑм. Ман йӑнӑшах тӑватӑн, айван хӗрарӑм. Виҫӗ ҫул кӑна аслӑрах эсӗ манран. Анчах темшӗн хама санран аслӑрах куратӑп. Пурнӑҫа ытларах курнӑран, йӑнӑшнӑранши? Хам мӑшӑра та юратнӑ пулӗ. Ҫавна пулах ирӗклӗхе ҫухатасран темрен хӑранӑ пек хӑраттӑм...

Сирӗнсӗр, ҫемйисӗр пурӑнаймасть вӑл. Ҫемье ҫинченех шухӑшлать. Ман пата вара чиртен сывалма тенӗ пек, чирлӗ йытӑ хӑйне сиплемелли курӑка шыраса тупнӑ пек, килсе тухрӗ пулас. Ыттисем те пулнӑ унӑн, анчах мӗншӗн мана суйласа илчӗ-ха вӑл? Ҫук, ыйтман эпӗ ҫакӑн ҫинчен. Ҫапла, эмел вырӑнне тӑрса юлтӑм акӑ...

Час-часах пулать Игорь ман патӑмра. Анчах хӗрарӑма мар, ытларах йӑмӑкне, амӑшне, е, тен, ҫывӑх тусне курать вӑл манра? Кӗпи ҫинче тӳми татӑлса ӳкнине е ҫӗвӗрен кайнине те курмасть хушӑран. Эсӗ те асӑрхасшӑн мар пулас. Мӗнех, вӑл чӑннипе камӑн тӗрекӗ, камӑн арҫынӗ пулнине пӑхса тӑмастӑп, куҫ курнине йӗркене кӗртме тӑрӑшатӑп.

Игорь вара кунӗн-ҫӗрӗн ҫаплипех икке пайланать. Ӑнлантӑм, ҫемье пуҫӗ, ҫемье ҫынни мар вӑл. Ирӗклӗх! Акӑ мӗн кирлӗ ӑна. Эпӗ вара? Ан пӑшӑрхан, эпӗ те вӑхӑтлӑх йӑпану пулӗ уншӑн. Эсӗ кунсерен кӑларакан ахӑр саманаран, ҫил-тӑвӑлтан тарса пытанмалли хӳтлӗх эпӗ. Ҫавӑ кӑна. Ирӗклӗх яланах малти вырӑнта пулӗ унӑн. Ытти вара уншӑн пӗлтерӗшлех те мар. Мана та юлташӗ

вырăнне кăна хурать. Ыран санăн çуралнă куну терĕ. Хальлĕхе эсĕ çакна пĕлместĕн: Игоряша санпа ыран юлашки хут пулать.

Ĕмĕрлĕх асра юлмалли çуралнă кун пулать вăл саншăн. Çук, çук, савăнмастăп çакăншăн. Манпа та пурнăç пулмĕ унăн. Çакна иксĕмĕр те ăнланатпăр. Уйрăммăн пурăнса пăхасшăн сан мăшăру: санпа та, манпа та мар. Тен, пачах урăххи пулĕ унпа юнашар кĕçех. Ан тарăх, куççульне пустуй ан юхтар. Усал-хаяра ачусем çине ан куçар. Куртăн, нихăшĕ те телейлĕ мар эпир. Иксĕмĕр те малалла мĕн пуласса пĕлместпĕр. Кам эсĕ? Эпĕ кам? Эпĕ хам туйăма шаларах та шаларах пытарма тăрăшатăп. Çынсене хам айванлăха /е, тен, юратăва?/ кăтартма тăрăшмастăп. Шўтлетĕп, калаçатăп...

Пĕлместĕп, мĕншĕн çыратăп ку çырăва? Сан пата çитĕ-ши вăл? Пĕлместĕп. Сана лăплантарас, тăна кĕртес тени-ши çакă? Пĕлместĕп...Темле пулсан та, ан çиллен!

1999 ç.

ÇУРАЛНĂ КУН

Иртенпех йăшкарĕ те йăшкарĕ хĕрарăм чĕри. Хушшăн-хушшăн йĕппе чикнĕ пек ыратрĕ, вăхăт-вăхăтпа тем усала е ырра кĕтнĕн ирĕкелле туртăнакан кайăк пек тăпăлтатрĕ. Çук, çывăрасси пулмĕ текех. Çутă çутса ячĕ çамрăк хĕрарăм. Тăрас-ши, тăрас мар-ши тенĕн ыррăн карăнса илчĕ, чĕнтĕрлĕ сорочка айĕнче кăнтарса тăракан кăкăрĕсене ачашшăн сĕртĕнчĕ. Тутисем сисмен-туман çĕртенех йăл-л! кулса илчĕç. "Парса хăвар эс вĕсене, пурăнаймастăп вĕсемсĕр, мĕн тери илемлĕ, мĕн тери тутлă вĕсем санăн",.. - тени аса килчĕ-тĕр. Аса илӳ тыткăнĕнчен хăтăлас тенĕн, лăстăр-р! силлерĕ Алиса вăрăм çӳçне. Вăш-ваш диван çинчен сиксе тăчĕ, магнитофон пускăчне пусса лартрĕ.

"Пĕччен кашкăр, эс хăратăн çут кунран.

Пĕччен кашкăр, мĕншĕн ним те шарламастăн?"-янăраса кайрĕ пӳлĕмре юрă. Кĕвĕ майăн илемлĕ пӳ-сине ун-кун хуçкаларĕ çамрăк хĕрарăм, пит-куçне аллисемпе çăтти-çатти çупкаларĕ, юлашкинчен ваннăна чăмрĕ. "Пăхăпăр унта, пĕччен кашкăр-и вăл, анчах вăл пурĕпĕр манăн пулать",.. - шухăшларĕ хăй.

Çуралнă кун пулчĕ Алисăн ĕнер. Шефĕ - Николай Спиридонович: "Ресторана кайăпăр, ĕмĕр асăнса пурăнмалăх

савăнăпăр",.. - терĕ. Укçа нумай-ха унăн, тăкаклантăр. Арăмĕ, ав, патша майри пек тăхăнса-сăрланса çӳрет. Алиса ларакан йышăну пӳлĕмне кĕрет те вара саркаланса: "Ман Коляçăм пек лайăх упăшка лектĕрччĕ сана",.. - тет, юрланăн калаçаканскер. "Ийя çав, Николай Спиридонович пек арçынсем сахал паян. Мĕн тери тимлĕ, ачаш çын вăл сирĕн,- килĕшет унпа Алиса та. - Пирĕн шефа çитекенни çуках"...

Чăнах та, хăш-хăш енĕпе Николай Спиридоновича çитекенни çуках. Мăшăрĕ умĕнче ун-кун кускаласа, тапăртатса кăна тăрать: "Марь Петровна, урусем ывăнчĕç пулĕ, кил, пушмакна хывăпăр, сăтăрам-ха", " Марь Петровнан ăшĕ хыпрĕ пулĕ, чей илсе кĕр-ха!"... Хирĕçлемест Алиса, тăрăшать, шеф арăмĕ паракан парнесене те хаваспах йышăнать. Паракантан ил... тесе ахальтен каланă-и-мĕн? Пурăнса пăх-ха секретарь укçипе, наччасрах урусене тăсса хурăн. Шефпа урлă пулма юрамасть. Укçана катса юлма та, хушса пама та ирĕк пур унăн. "Манран иртмесен мул айне тăвăп",.. - тенĕччĕ вăл Алисăна ĕçе илнĕ чухнех унăн тăп-тăп кĕлетки çине çуллă куççемпе пăхса. Пурнăç тути-масине ăнланакан хĕрарăм та аптраса тăмарĕ: "Çăкăр-тăвар хире-хирĕç",.. - тесе печĕ-хучĕ. О-хо-хо та, унтанпа çăкăрĕ пайтах пулчĕ.

Алиса та акă чăн-чăн секретарь пулса-пиçсе çитрĕ. Хуçишĕн тем тума та хатĕр.

Клиентсен кăмăлне алăк уçălнă-уçăлман пĕле пуçларĕ. "Николай Спиридонович пушă мар-ха, кĕтĕр кăштах, кĕрсе ыйтам-ха",.. - тет те, йăпăштах тăвать шеф кабинетне, йăпăр-япăр хăпарса ларать унăн чĕркуççийĕ çине, чăпăрт! чуптуса илет питĕнчен. Лешне çакă кăна кирлĕ. Йăтса илет те чипер секретаре, хыçалти алăкран кĕрсе çухалать... Тепĕртакран вара Алиса пÿлĕмрен ĕçлĕн утса тухать, аллинчи хучĕсене сĕтел çине хурать, 5-10 минутран черетлĕ клиента шефĕ патне кĕме ирĕк парать.

Эх-х! Пачах урăх пурнăç çинчен ĕмĕтленетчĕ хĕр çамрăк чух. Хăйĕн умне юмахри пек чипер каччă чĕркуçленсе ларасса кĕтетчĕ. Халĕ акă ватсупнă çын чури пулса пурăнма тивет. Вăй-хăвачĕ пулсан юрĕччĕ-ха. Çук вĕт, Алисăнах айăплама пăхать-ха тата: "Эс мана илĕртме пĕлместĕн"... Эх, тăмсай, хăй çине пăхасчĕ малтан, сăнĕ-пичĕ юлман та вĕт. Укçа, машина пулман пулсан, тупата, тахçанах алă сулатчĕ те...

Ĕнер вара, ĕнер çиçĕм хыççăн аслати кĕрлесе кайнăнах туйăнчĕ. Шефĕ, ытларах шантарма юратать пулин те /Алиса валли хаклă тиртен çĕлетнĕ кĕрĕк виçĕ çул туянать ĕнтĕ/, çуралнă куна палăртма ресторанах çул тытрĕç. Никамах та çук иккен унта. Илемлĕ кĕвĕ янăранă майăн ĕçрĕç, çирĕç, савăнчĕç. Николай Спиридонович аллине ирĕке яма та хăтланчĕ, Алисăна

кăкăрĕнчен хытах чĕпĕтрĕ. Тарăхрĕ те вара ҫамрăк хĕрарăм. Ыратакан кăкăрне аллипе сĕртĕнсе сăтăрма пуҫланăччĕ кăна, хăй ҫине такам пăхнине туйса пуҫне вăштăрах пăрчĕ. Аякри сĕтел хушшинче, тĕттĕмрех вырăнта, ҫамрăк арҫын ăна тинкерсе пăхса ларать. Хăйне асăрханине сиссе, питĕ ачашшăн, хĕрхенсе тенĕ пек куларах пăхрĕ вăл. Пушшех тарăхрĕ Алиса хăйĕн шефне, ара, ĕҫре пур-ҫук хăвачĕпе нушалантарни ҫитмест Алисăна, ҫын умĕнче те намăс кăтартать тата. Кăмăлĕ самантрах сӳнчĕ. Ҫăварне хупма пĕлмесĕр пакăлтатакан юлташĕн сăмахĕсене те итлеми пулчĕ, хăйне, ҫамрăк пурнăҫне питĕ те шеллесе кайрĕ, тем пулнăн хытса ларчĕ. Тăна ҫухатнă пек тĕлĕрӳрен ăна тĕлĕнмелле кăмăллă сасă туртса кăларчĕ: "Сирĕн хĕре ташлама чĕнмешкĕн юрать-и?" Астумасть, мĕн хуравларĕ шефĕ, ирĕк пачĕ е ҫук, ют арҫын аллисем хăй патнелле туртăннине асăрхарĕ. Ҫитĕ сана, вăран, тенĕн ҫав арҫын унăн пилĕкĕнчен ҫирĕппĕн тытсан кăна тăна кĕнĕ пек пулчĕ ҫамрăк хĕрарăм.

-Питĕ илемлĕ эсир, палламан пике...

-Ан вăтантарăр ĕнтĕ,.. - хăйса сăмах хушрĕ Алиса. Ăна куҫĕнчен пăхма пултарчĕ-пултарчех. Симĕс куҫсем... Амăшĕ те Алисăна час-часах "Симĕс куҫ - кушак куҫ" тесе йĕкĕлтетчĕ. Мĕн сыхăнăвĕ пултăр кунта кушак куҫĕпе? Ав епле илемлĕ ку каччă: куҫĕ пысăк, куҫ тĕкĕсем вăрăм, хуп-хура... Чăнах тĕпсĕр кӳлле аса илтереҫҫĕ.

Кур-ха, епле пӑхать ку арҫын: йӗкӗлтесе-кулса мар, ӑнланса. Хӗрелсе кайрӗ Алиса, Николай Спиридонович ларакан еннелле вӗлт! пӑхса илчӗ. Ҫук та тейӗн уншӑн Алиса, черкке хыҫҫӑн черкке йӑвантарать, мур илесшӗ. Ҫав ӳсӗр арҫынпа ҫӗр каҫмаллине аса илсен, йӗрӗнсе кайрӗ хӗрарӑм. Ют каччӑн аллисем вара, Алисӑна ӑнланнӑнах, ӑна вальс ҫеммипе хаваслӑнрах ҫаврӑнма хистенӗн, хытӑрах пӑчӑртарӗҫ.

-Мӗн ятлӑ эсӗ, пике?

-Али-и-иса,- чӗтренсе тухрӗ сасӑ.

-Алиса... Мӗн тери хитре ят. Эпӗ вара Дмитрий, Митя. Алиса, кам вӑл санӑн?- ыйтрӗ пуҫне сӗлтсе кӑтартса. - Тус та мар пек, мӑшӑр тесен пушшех те...

-Пуҫлӑх вӑл манӑн. Манӑн ҫуралнӑ кун тата паян. Ҫавӑнпа кунта эпир...

-Саламлатӑп, пикеҫӗм! Итле-ха, вӗҫтертӗмӗр кунтан. Эсӗ кирлӗ мар халь ӑна. Ирчченех вӑранаймӗ-и тен. Кайрӑмӑр ман пата, пӗчченех пурӑнатӑп, ан шиклен, авланма ӗлкӗреймен-ха. Ҫуралнӑ куна иккӗн паллӑ тӑвӑпӑр. Кайрӑмӑр, Алиса...

Чӗнмерӗ ҫамрӑк хӗрарӑм. Каччӑна мӑшӑр куҫӗнчен ыйтуллӑн тинкерчӗ. Ҫук, усал шухӑшлӑ пек туйӑнмарӗҫ вӗсем. Тепӗр тесен, мӗн ҫухатмалли пур унӑн? Йӑлӑхтарчӗ кунашкал пурнӑҫ. Тен, Митя пулӑшӗ урӑх пурнӑҫ пуҫлама? Вӑратмарӗ вӑл тӗлӗрсе ларакан шефне, пукан айккине ҫакса янӑ пӗчӗк сумкине илчӗ те Митя хыҫҫӑн урамалла утрӗ.

Самантра тенĕ пек илсе çитерчĕ вĕсене такси халиччен палламан каччă пурăнакан çурçĕр-хĕвел анăç районĕнчи пилĕк хутлă çурт умне. Хваттерĕ икĕ пӳлĕмлĕ. Тирпейлĕ. Куç хупса иличчен тенĕ пек сĕтел çине хатĕрлерĕ Митя. Ресторантан илсе килнĕ Шампань эрех пăкки мачана çапăнчĕ, кăпăкланса тăракан эрех чĕрене ыррăн кăтăкларĕ. Сăнать, сăнать ăна Митя, тем ыйтасшăн, тем каласшăн хăй. Фотоальбом çине пăхса ним сисмĕше персе ларакан çамрăк хĕрарăм юлашкинчен чăтаймарĕ, çунса каяс пек пĕçерекен питне каччă кăкăрĕ çине хучĕ.

-Алиса, пул эс манăн,.. - пăшăлтатрĕ каччăн куштăрханă тути.

Çук, кăкăрĕ çине хунă алăсене илсе пăрахаймарĕ, хăй ăшĕнчи капланса килнĕ вĕри туйăма хирĕçлеме пултараймарĕ вăл, чĕрери ырату-юрату капланăвне парăнса, каччăн тутисем патнелле туртăнчĕ...

-Алиса, ăнланăн-ĕненĕн-ши, эсĕ манăн пĕрремĕш хĕрарăм пултăн. Тавтапуç сана пуриншĕн те, каçар,.. - вăтанчăклăн пăшăлтатрĕ Митя хăлхаран. - Юл ман патăмра, мĕн тери лайăх санпа...

-Пултараймастăп, Митя. Хĕр мар вĕт эпĕ. Йĕри-тавра, ав, мĕн чухлĕ чипер хĕр-упраç. Ыранах ӳкĕнĕн акă. Мана та питĕ килĕшрĕ санпа. Мĕнлерех ачаш эсĕ. Эпĕ пĕрремĕш пулни ниме те пĕлтермест вĕт-ха. Чылай тĕл пулăн ман пеккисене каярах та. Турă çырни те алăк умнех килĕ. Пурпĕрех

тав сана самантлăх юрату туйăмĕ парнелеме пултарнăшăн та,.. - хурлăхлăн калаçрĕ çамрăк хĕрарăм кайма пуçтарăнса.

- Килĕшместĕп. Пурпĕрех манăн пулатăн эсĕ. Ку тĕл пулу пирĕн юрату пуçламăшĕ кăна-ха. Парса хăвар эсĕ мана кăкăрусене, пурăнаймастăп вĕсемсĕр, мĕн тери илемлĕ, мĕн тери тутлă вĕсем...

“Эх, Алиса, Алиса, мĕн тесе çав териех сапаланса пурăнмаллаччĕ-ха санăн? Тен, Митя санăн Турă çырни?” - ӳкĕнсе хăйпе хăй калаçрĕ çамрăк хĕрарăм, ĕçе пуçтарăннă май. Мĕн пытармалли пур, килĕшрĕ ăна Митя. Çук, арçын ăна-кăна халиччен те пĕлменни мар, ачаш пулни кăна та мар, вăл Алисăра çынлăха курма пултарни туртрĕ ăна. Çук çав, укçара кăна мар пурнăç пĕлтерĕшĕ. Çитет пуçлăх çумĕнчи анчăк пулса. Паянах, халех вĕçлес кун пек пурнăçа. Анчах тупайĕ-ши Алисăна Дмитрий? Юрăри пĕччен кашкăр шăпи кĕтмĕ-и ăна?

Тĕрлĕ çулта çырнă статьясем

ПАЯН ПУР ТА, ЫРАН - ÇУК

Мĕн тума килет этем тени çĕр çине? Ĕçлес тесе пурăнма е пурăнас, куллен хырăма тăрантарас тесе ĕçлеме кăна? Темле пулсан та кашни çын çак çут тĕнчене телей курма килет тесе шухăшлар. "Çĕр çинчи пурнăç хăналăх кăна, чăн пурнăç вара - чун пурнăçĕ - çĕр çинче мар, вăл тӳпере, Турă аллинче," - тенине эпĕ кăна мар, вулаканăмăрсем те илтнех. Çак сăмахсем чăн пулнине вара эпир кашни кун тенĕ пек асăрхатпăр. Пĕр-пĕрне темĕн чухлĕ тарăхтарсан, кӳрентерсен е, пачах урăхла, пулăшса пурăнсан, пĕри çĕрме пуян е килсĕр-çуртсăр çапкаланса çӳресен - пурпĕр пурте вилетпĕр. Шел, темшĕн çамрăксем, ырă çынсем, вĕчĕх, нишлĕ чунлисемпе танлаштарсан, маларах та ытларах уйрăлса каяççĕ пиртен. Тĕслĕхрен, акă, çамрăксенех илер. Шкул ачисем çакăннă, балкон таврашĕ çинчен сиксе вилнĕ, пĕри теприне çĕçĕпе чикнĕ, видеоаппаратурăшăнах касса е пăвса вĕлернĕ текен тĕслĕхсем çинчен тăтăшах илтетпĕр мар-и-ха? Е тата Шупашкар хулинче икĕ пĕчĕк ача грипп чирĕпе вилнине мĕнле ăнлантармалла-ха?

Организмĕ чире хирĕç тăрайман тенипех лăпланмалла-ши? Тĕнче пĕтес умĕн Турă хăй патне чи лайăххисене, ыррисене, сăпайлисене пуçтарса каять теççĕ те, çаплах-шим?

Чăваш Республикин культурăпа ӳнер çыннисене, ĕçченĕсене те пырса тивет çакă. Виталий Петров юрăç, Александр Волков çыравçă-журналист,Кирилл Кириллов критик. Авенир Петровский тата. Ун пирки тӳрремĕнех артист е художник теме çук паллах. Анчах наци политикинчи, чăвашлăх аталанăвĕнчи пĕлтерĕшĕ чăннипех те пысăк унăн.

Чăн та ĕнтĕ, "Пирĕн урам анаталла" юрра паян кам та пулсан Виталий Петров пек сасăпа шăрантарма пултарайĕ-ши? Е тата Мефодий Денисов пек юрлайĕ-ши кам та пулин "Хăмла пахчине"? К. Кириллов сарăмсăр вилчĕ те, вăйлă критиксăр тăрса юлтăмăр. Театрсен ĕçĕ-хĕлне тĕпчекен, тишкерекен çын çук вĕт паян. А.Петровский пек кăвар чĕреллĕ çынсем те сахаллансах пыраççĕ мар-и-ха тата? Унччен те, "Булгар-1" предприятие йĕркелесе ярсан, чăвашлăх тымарĕнчен уйрăлмарĕ Авенир Андреевич. Астăватăп-ха,"Хыпар"хаçатра Пушкăртстанри Давлекан районĕнчи Чунчă-Николаевка ятлă чăваш ялĕнчен хĕрӳ чĕреллĕ хĕрарăм, вырăнти шкул директорĕ чăваш кĕнекисем вĕсен сахал пулни, Шупашкарпа çыхăну япăх пулни пирки пăшăрханса çырнăччĕ. Тепĕр кун вара ир-

ирех шăнкăравларĕ редакцие Авенир Андреевич, Пушкăртстанри чăвашсем валли кĕнеке туянма 400-500 пин тенкĕ уйăрма хатĕррине пĕлтерчĕ. Каярах та чăвашлăх ыйтăвĕсемпе, ЧР тулашĕнчи ентешĕмĕрсен ĕçĕ-хĕлĕпе интересленсех тăчĕ. Пурне те май пур таран пулăшма тăрăшатчĕ. Ахальтен мар усал хыпар Мускавра пурăнакан ентешĕмĕрсене те пысăк хуйха ячĕ. Çапла, ĕç май-мелне, мĕнрен мĕн пуласса, укçа тума, малашлăхалла пăхма пĕлетчĕ тус-юлташăмăр. Укçи-тенкине те хĕрхенместчĕ. Питех те шел. Питех те йывăр çак çухатусене тӳссе ирттерме.

Ытлашши аякка каяр мар, 2000 çул тата мĕн кăтартрĕ-ха пире? Ĕмĕрсен чикки пулнăран-ши е урăх сăлтавпа, вăхăт çитмесĕрех мĕн чухлĕ паллă ăсчах, культурăпа ӳнер ĕçченĕ уйрăлса кайрĕ пиртен: Мефодий Денисов, Валерий Важоров, Ефим Никитин, Хветĕр Уяр, Элли Юрьев... 2001 çулта тата Валентина Чаплина çыравçăпа, Олег Турхан ӳнер ăстипе сывпуллашрăмăр. Пирĕншĕн, чăваш халăхĕпе пĕтĕмĕшле чăваш тĕнчишĕн мĕн чухлĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсем хăварчĕç вĕсем те халăх çӳпçинче.

Шел те, вĕсен вырăнне килме, тăма, вĕсен шайне çитме пултаракансене вара курмастăп эпĕ. Мĕн çинчен калать çакă? "Наци генофончĕ" тени чухăнланса пыни çинчен мар-и-ха?..

Нумаях пулмасть тата тăвана юлашки çула ăсатма тиврĕ. Çук, виле пытарас йăла-йĕрке çĕнелсе, улшăнса, çăмăлланса, çав йĕркесене пĕлекенсем сахаллансах пыни çинчен мар паянхи сăмахăм. Çынсем чунчĕрипе хытса пыни шухăша ярать. Виле çинчех харкашаççĕ, ĕçеççĕ, кулаççĕ. Тен, çапла пулмалла та? Ара, пĕр çын вилнипех пурнăç чарăнса, пĕтсе лармасть. Йывăç-курăкĕ çав-çавах ешерĕ, хĕвелĕ пăхĕ, çамрăксем авланĕç, качча тухĕç, ачасем çуралĕç, урамра машинăсем чупĕç. Çав çын нихăçан та пулман пекех...

Паян пур та эпир, ыран - çук. Инкек тени куçа курăнса килмест çав. Ӳкессе пĕлнĕ пулсан тӳшек сарса хумаллаччĕ теççĕ-и-ха? Паян-ыран вилсе выртасси пуçра та çук çав. Тем чупкалатпăр, ăшталанатпăр, пĕр-пĕрне кӳрентеретпĕр, теприн шăмми-шаккине шĕкĕлчетпĕр - мĕн тĕллевпе?! Пытарма кирлĕ мар, юлашки вăхăтра кĕвĕçӳ, ура хурасси, элек сарасси, сутасси тата та вăйланчĕ вĕт. Кашни харпăр хăйшĕн тăрăшать. Анчах уйрăм çын пуйнипе кăна общество аталанаймасть. Ирĕксĕрех хальлĕхе çав "сурăх тирĕ витĕннĕ кашкăрсене" пăхăнма, итлеме тивет. Анчах Турă умĕнче пурте пĕр тан эпир. Никам та вилĕмсĕр мар. Эппин, тен, Турă вĕрентнĕ пек /ан ултала, ан вĕлер, усал ан ту т.ыт. те/ пурăнмалла?

2001.

ЧĂВАШ КĔНЕКИ ДОТАЦИПЕ КĂНА ВĂЙ ИЛЕЙМĔ

Пасар экономики саккăрла çаптарнă саманара кĕнеке издательствисем те йывăр лару-тăрăва кĕрсе ÿкрĕç. Статистика кăтартăвĕсене ĕненес пулсан, 1988 çулта çĕршыври кашни пĕр çын пуçне 10 кĕнеке кăларнă. 1995 çулта вара çак шут виççĕ таран чакса ларнă. Ку - Раççейре. Чăваш Республикинче тата лару-тăру еплерех-ха?

Чăваш кĕнеке издательствисĕр пуçне республикăра тĕрлĕ литература пичетлесе кăларас тĕлĕшпе "Чувашия", "Руссика", Чăваш патшалăх университечĕн тата Чăваш патшалăх гуманитари институчĕн, Э. Патмарăн издательствисем, районсен типографийĕсем, пĕчĕк предприятисем çумĕнче уçнă ытти пĕчĕк издательствăсем ĕçлеççĕ пулин те, тĕп ĕçĕ пĕрремĕшĕ çинех тиенет тесе калас килет. Вăл вара тĕпрен илсен бюджет укçипе тытăнса-тăранса пурăнать.

"Чăваш кĕнеке издательстви те тĕрлĕ детектив-фантастика кăлара пуçларĕ. Вĕсен тиражĕ 3-5 пин кăна мар. Çав вăхăтрах чăтăмсăррăн кĕтекен чăвашла кĕнекесем 1-3 пин тиражпа тухни питĕ те сайра", - тесе кÿренсе калаçнине тăтăшах илтме тивет паян. Çапла çав ĕнтĕ, унччеххи çулсенче Чăваш кĕнеке издательстви

çулталăкра 150а яхăн кĕнеке кун çути кăтартни те пулнă. 1995 çулта вара 61 кĕнеке кăна тухнă. 1996 çулта тематика планне 68 кĕнеке кĕртнĕ пулнă. Дотаци укçи 1 миллиард та 953,9 миллион тенкĕ - 24 кĕнеке валли кăна çитнĕ.

Темле пулсан та наци кĕнеки, литературин кăларас ĕç путлансах ларманха. Тĕслĕх вырăнне ача-пăча литературинех илсе пăхар. Сăмах май, вăрçăччен ку енĕпе çулталăкне 60 ытла кĕнеке тухни те пулнă. Вĕсене ют чĕлхене те куçарнă. Халĕ вара ку ĕç путланса ларнă тесен те пысăк йăнăшах пулмĕ. 1991 çулта - 36, 1992 - 23, 1993 -17, 1995 çулта 17 кĕнеке кăна вулакан аллине çитнĕ. 1996 çулта палăртнă кĕнекесем те пурте тенĕ пекех пичетленчĕç. Анчах тепĕр япала пăшăрхантарать. Чăвашла тухнă кĕнекесен тиражĕ çав тери пĕчĕк. Анчахрах Валем Ахунăн "Хӳкле кĕвви" сăвăсен кĕнеки тухрĕ. Çамрăк вулакана хамăр пурăнакан тавралăха сăнама, илеме упрама, пурнăçра тавçăруллă пулма вĕрентет вăл. Тиражĕ - 1 пин. Ӳкерчĕксемпе, тĕрлĕ тĕспе кăларнă кĕнекене пысăкрах тиражпа кăларма пулман-и вара? Ача-пăча литератури çителĕклĕ тетĕр-и? Çук, тĕрĕс мар çакă. Вулакана, паллах, 40 сыпăкран тăракан "Улăп" эпос та кирлех. Ача сачĕсенче, пуçламăш классенче усă курма вара вăл мар, Матвей Сакмаровăн "Мăр-мăр кушак" ятлă кĕнеки пекрех литература кирлĕ вĕт-

ха. Хула шкулĕсенче пуçламăш класран пуçласах чăваш чĕлхи урокĕсем иртеççĕ тесе мухтанатпăр тата. Хула ачисене ЧРăн икĕ патшалăх чĕлхине те пĕр шайра вĕрентме условисем пур-и-ха, вĕренӳ кĕнекисем çитеççĕ-и? Çук паллах. Нумаях пулмасть Г.В.Лукояновăн "Учимся говорить по-чувашски" кĕнеки кун çути курчĕ. Мĕн тери илемлĕ, чи пахи - усăллă кĕнеке! Тиражĕ вара 3 пин кăна. Çителĕклĕ-и-ха çакă? Шупашкар хулинче кăна 63 шкул. Пĕрремĕш классем кăна кашнинче 3-4. Кашни класра 25-30 вĕренекен. Асăннă кĕнекепе пуçламăш класра кăна мар, аслăраххисенче те усă курма тивет. Çапла вара кама валли кăларнă çав 3 пин кĕнекене? Шел те, чылай кĕнекене пырса тивнĕ çак шăпа.

1997 çул пуçланчĕ. ЧР "Чăваш Республикин бюджечĕ çинчен" Саккунĕпе килĕшӳллĕн, кĕнеке издательствине кăçал 2 миллиард тенкĕ уйăрса панă. Паллах, çителĕклĕ мар çакă. Эппин каллех чăваш кĕнекине "ĕне çиес" хăрушлăх пур. Кĕнеке кăларас ĕçе чарса лартас мар тесе урăх çул-йĕр шырама пулĕ-ха /тĕслĕхрен, "Грибы" евĕр туххăмра саланса пĕтекен кĕнеке тейĕпĕр/. Пурĕпĕр чăваш кĕнеки кун çути курассине пĕлтерĕшлĕ çăмăллăх памаллах пек туйăнмасть-и сире?

1997, кăрлач.

ХИСЕПЛӖ ЯТА КАМ ТИВӖҪЛӖ?

Рынок саманинче пулса иртекен пӑтӑрмахсем хистеҫҫӗ ҫак йӗркесене ҫырма. Хӑшӗ-пӗриншӗн вара ҫакӑ шӑпах питӗ йӗркеллӗ, чӑннипех те ҫапла пулмалла пек туйӑннине те пӗлетӗп. Анчах чун йышӑнасшӑн мар ҫак "йӗркене". Вулакансем хушшинче те ман пек шухӑшлакансем пурри пӗртте иккӗлентермест.

Хисеплӗ ятсем... Чӑннипех те темӗн тӗрлӗ "тава тивӗҫлӗ", "халӑх" ӗҫченӗсем нумайланнӑҫемӗн нумайланса пыраҫҫӗ паян. Начар-и? Ҫук, паллах. Ӗҫне кура - хисепӗ, тесе ахальтен каламан ватӑсем. Тӗрӗссипе, паян та ҫаплах пулмалла. Ҫын тар кӑларса ӗҫлет, ҫӗршыва усӑ кӳресшӗн кунне-ҫӗрне пӑхмасӑр тӑрӑшать пулсан, мӗншӗн кӳрентерес ӑна? Ун пеккишӗн пӗр-пӗр Хисеп грамоти кӑна мар, медаль, орден е чыслӑ-сумлӑ ята та шеллесе тӑмалла мар. Анчах " рынок самани" тени кунта та пулсан хӑйӗн йӗркисене кӗртет. Аякка каяр мар, хамӑрӑн культурӑпа искусство ҫыннисене, ӗҫченӗсенех илер. Вӗсемпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлеме тивнӗрен, ҫав йӗрке тӳрех куҫа тӑрӑнать. Илер, акӑ, пурте пӗлекен юрӑҫах. Ӗҫленӗ те ӗҫленӗ хайхискер, Чӑваш Республикинче кӑна мар, республика

тулашӗнче пурӑнакан чӑвашсем патӗнчен тухма пӗлмен темелле, ҫӗр-ҫӗр юрӑ шӑрантарнӑ, концерт таврашӗ ирттернӗ. Паянхи хӑш-пӗр эстрада "ҫӑлтӑрӗсем" пек фонограмма янраттарман, алла микрофон тытман. Тӗрӗссипе халӑх хушшинче вӑл тахҫанах хисеплӗ ята тивӗҫнӗ тейӗпӗр. Анчах ҫӳлтисем ҫакна ниепле те йышӑнасшӑн пулман: "Ара, вӑл хушӑран чиркӗве те юрлама ҫӳренӗ тет вӗт-ха"... Хирӗҫлемен лешӗ, чун туртнипе ҫӳренӗ вӗт-ха вӑл унта. Паллах, ӑнлантарма, тӳрре тухма, каҫару ыйтма, юсанмашкӑн шантарма, пулӑшу сӗнме, укҫа-тенкӗпе "сӗрме", кирлӗ хутсене хӑех кабинетран кабинета пуҫтарса ҫӳреме, юлашкинчен ҫав "тава тивӑҫлӗ" ята илме пултаратчех пулӗ. Анчах пурте пултараймаҫҫӗ ун пек. Ҫавӑнпа хирӗҫсе тӑман пирӗн юрӑҫ, ҫаврӑннӑ та утнӑ хӑйӗн ҫулӗпе. /Сӑмах май, каярах пулин те, тивӗҫнӗ-тивӗҫнех вӑл "Чӑваш халӑх артисчӗ" ята. Чӑннипех те тивӗҫлипех/.

Паян вара чылайӑшӗ шӑпах ҫӳлте асӑннӑ "шуҫлак ҫулпа" ҫӳле ҫӗкленет. Именмест те вӗт. Юрӗ, Ҫеҫпӗл Мишши, Ҫемен Элкер, Митта Ваҫлейӗ тата ытти премисен лауреачӗ, темиҫе хутчен те " тава тивӗҫлӗ", "халӑхӑн" пул. Мӗне пӗлтерет-ши ҫакӑ? Каллех укҫа, сӑмсана каҫӑртни кӑна вӗт-ха. Халӑх пӗлет-и сана, ӗҫӳсене? Чылай чух, темиҫе хут хисеплӗ ята илнӗ пулин те, хӑвӑнсӑр, ҫумри пӗчӗк ушкӑнсӑр пуҫне никамах та палламасть, пӗлмест,

хакламасть сана. Çаплипех леш тĕнчене куçса каятăн.

Кам тивĕçлĕ хисеплĕ ята? Ман шутпа, çакна çемçе пукансем çинче ларакан чиновниксен мар, халăхăн татса памалла пек туйăнать. Шăпах вăл мар-и-ха таса чунлă, никамран хăраман тӳре? Чăваш халăх поэчĕ Г.Ефимов калани аса килет: "Эпир çамрăкрах, хĕрсе кайса ĕçленĕ вăхăтра хисеплĕ ят илме питĕ йывăрччĕ. Тивĕçлĕ ĕçчен тупăнсан, чăн малтан унăн ĕçĕ-хĕлне малтан секцире, çыравçăсен пĕрлехи пухăвĕнче, парти бюровĕнче пăхса тухса хаклатчăç. Кайран тин документсем награда пайне çитетчĕç. Кунта тата тем вăхăт выртнă вĕсем. Халĕ вара? Пĕр-пĕр учреждени /коллектив та мар, 2-3 çын/ сĕнӳ тăратать". Пуху ирттерсе аппаланмаççĕ /е ячĕшĕн кăна иртттереççĕ/, "Яратпăр-и?", "Ярас!" теççĕ те - ĕç вĕçленнĕ. Телефонпа калаçса кăна ĕç туни те тĕл пулкалать. Ялан çапла мар паллах. Анчах мĕнле йĕрке çакă?

Ним çукран мар, паян ку тĕлĕшпе пулса пыракан лару-тăрăва пула çырăнчĕç çак йĕркесем. Малашне те халăх шухăш-кăмăлне шута илмесен, мĕнле культура çинчен калаçма пултарăпăр эпир?..

1997, чӳк.

“ПРЕЗИДЕНТ АЧИСЕМ”

Çук, Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В.Федоров ачисем çинчен пымасть, паллах, сăмахăм. Шупашкар хулинчи 56-мĕш вăтам шкулти 1 “Б” класра вĕренекенсене çапла чĕнеççĕ. Ай-уй, мĕнле майпа çакăн пек чыса тивĕçнĕ вара ку ачасем тетĕр-и?

Тĕп хулари шкулсенче наци класĕсем уçни, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен эпир пĕлтерсех тăратпăр. ЧР Вĕрентӳ, ăслăлăх тата аслă шкул министерствин пай ертӳçи Михаил Николаевич Федотов калана тăрăх, хальлĕхе хулара çакăн пек шкулсем 7. Вĕсем, 1996-97 вĕренӳ çулĕнче кăна уçăлнă пулин те, лартнă тĕллеве самай ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ. Мĕнле тĕллевсем-ши? Ачасене чăвашла вулама, çырма, калаçма хăнăхтарас, тăван халăх историне, культурине тĕплĕ вĕрентес шухăш çеç мар çакăнта. Тĕп ыйтусенчен пĕри - чăваш ывăл-хĕрне мĕн пĕчĕкрен политик пулма хатĕрлесси. Парламентăн Культура, вĕрентӳ, информаци политики тата çыхăну енĕпе ĕçлекен комитечĕ ку енĕпе сахал мар тăрăшать пулин те, хăшĕ-пĕри “ура хурса” пынине кура ĕçсем ытлашши тухăçлă пурнăçланаймаççĕ. Тĕслĕхрен, Шупашкарăмăрта Г.Лебедев ячĕллĕ наци лицейĕ ĕçлет. Çапла, ĕçлет. Анчах “наци”

лицейĕ тетпĕр пулин те, асăннă вĕренӳ заведенийĕ ку енĕпе мар, ытларах музыкăна вĕрентес енĕпе палăрса тăрать. Тĕп хуламăрти 6-мĕш шкула та чăваш шкулĕ текелесе пăхрăмăр, анчах унта кружоксемпе уроксемсĕр пуçне чăвашлăх вăй илни курăнмасть-ха. Пĕртен-пĕр чăваш садикĕ пурччĕ Шупашкарта. Шел, ăна та пулин упраса хăвараймарăмăр.

Темле пулсан та, ытлашши пессимистла шухăшлас килмест. Мĕншĕн тесен "чăваш генофончĕ" тени ытлашши вăйсăр, пахалăхсăр теме çук. Тĕслĕхрен, çӳлерех асăннă тĕп хуламăрти 56-мĕш шкулах çитсе килер-ха. 1 "Б" класс наци элитине, интеллигенцине, пулас политиксене хатĕрлекен наци класĕ шутланать. Ытарлăн вĕсене, малашлăха кура-тăр, "Президент ачисем" теççĕ. /Пĕлсе пĕтер, тен пĕри-пĕри чăннипех те каярах, ӳссе çитсен, Президент пулма тивĕçĕ/. Класра 26 вĕренекен. 16 арçын ача тата 10 хĕрача. Пурте 8 çултисем. Шкулта пĕрремĕш классем -5. 1 "Б" кăна таса чăваш программипе /ял шкулĕсенчи пек/ вĕренет. Унсăр пуçне Занков меслечĕпе тухăçлăн усă кураççĕ. Эрнере пурĕ 27 сехет. Сехетсем тăрăх пăхсан та уйрăмлăх пур. 1 "Б"-ра " русское чтение" предмет - 7 сехет, ыттисенче - 1 сехет. "Президент ачисем" чăваш букварĕпе паллашрĕç те ĕнтĕ. Халĕ вара "Тăван сăмаха" шĕкĕлчеççĕ. 1 "Б"-ра чăваш чĕлхи эрнере 6 сехет, ыттисенче -

3. Ыттисем пекех математика, вырăс чĕлхи, вулав урокĕсем иртеççĕ. Унсăр пуçне кану-динамика, оригами /хачăсăр, çилĕмсĕр хутран япаласем ăсталаççĕ/, экономика /рынок, бизнес, банк/, хореографи, шахмат, акăлчан чĕлхи сехечĕсем те пур. Куратăр, ачасене мĕн пĕчĕкрен пурнăçпа тан утма хăнăхтараççĕ. Ют чĕлхе /эрнере 3 сехет, кружок мар, пĕтĕмпех тӳлевсĕр/ кирлине те шута илеççĕ.

Çапах та камăн ывăл-хĕрĕ вĕренет-ха кунта? Каллех, шухăшланă пек, "шишкăсен" ачисем кăна пулĕ? 1 "Б" класс ертӳçи Галина Николаевна Николаева /сăмах май, вăл хăй те опытлă специалист, Чăваш патшалăх университетне пĕтернĕ, ку шкулта кăна саккăрмĕш çул ĕçлет/пĕлтернĕ тăрăх, пурте "ахаль" çын ачисем иккен. Ашшĕ-амăшсем вĕсен - вĕрентекенсем, инженерсем, художниксем те пур. Ăс-тăн, тăрăшулăх çук, чăвашла пĕлмест пулсан, ку класа лекеймĕн. Çук, никам та хирĕçлемест, кутăнлашмасть. Мĕншĕн тесен ачасене, вĕсен ашшĕ-амăшне мĕн тĕллевпе пĕр класа пуçтарнине ăнлантарнă. 1-мĕш класа ачасем çак йышпах вĕçлĕç. Малалла вара? Ытттисемпе тан ĕлкĕрсе пырайманнисене çитес вĕренӳ çулĕнче е вĕренӳ çулĕ пынă вăхăтрах урăх класа куçараççĕ, вĕсен вырăнне вара урăх классенчен йышăнаççĕ.

1 "Б"-ра вĕренекенсемпе ыйтăм

ирттертĕмĕр. "Президент ачисем" тесе калатпăр-ха. Çак яваплăха ирĕксĕр тиеместпĕр-и-ха вĕсем çине пĕчĕклех? Тĕрлĕ куравсене, театрсене /вырăс, чăваш драма театрĕсенче те час-час пулаççĕ. Пуканесен театрне çӳрес тĕлĕшпе театр администрацийĕ 1 "Б"-сене "хулари чи хастар класс" тесе палăртнă, тӳлевсĕр курава чĕннĕ/ ушкăнпа кайса çӳрес вырăнне, тен, ачасен урамра выляс килет? Кам пулас килет вĕсен ӳссе çитсен? 26 вĕренекенрен пĕри кăна "манăн Президент пулас килет" тесе хурав пачĕ. Ултташĕ - учитель /завуч, директор/, тăватташĕ - художник, виççĕшĕ - артист, тепĕр виççĕшĕ - тухтăр, иккĕшĕ - ученăй, ыттисем çар çынни, милиционер, композитор, çĕвĕç пулса ĕçлес кăмăл пуррине пĕлтерчĕç.

Паян кун ертсе пыракан пысăк должноçсенче чăвашсем питĕ сахал. Çавăнпа пуçланă ĕçе сӳнме, хавхаланăва пĕтме парас марччĕ. Паллах, 56-мĕш шкул администрацийĕ те /ытти 6 наци класĕ ĕçлекен шкулта та çавах пулĕ тетпĕр/ май пур таран пулăшма тăрăшать-ха. Анчах правительство ертӳçисен те интересленме, пулăшма вăхăт пулĕ çак тĕлĕшпе? Чăваш политикĕсене пĕчĕкрен, ачаран хăнăхтарса, вĕрентсе ӳстермесен, нимĕнле "Чĕлхе саккунĕ" те пурнăçланмĕ, тăван республикăра тăван чăваш чĕлхи хуçаланаймĕ.

1997, пуш.

ЧĔЛХЕНЕ СУД ТĂВАÇÇĔ

Паян тăван чăваш чĕлхи мĕнле шайра пулни, аталанни /е аталанманни/ халăхăн пысăк йышне пăшăрхантармасăр тăма пултараймасть. Хаçата килекен çырусенче те çак шухăш тĕп вырăнта тăрать: Чăваш Республикин тĕп халăхĕн чĕлхине упраса хăварма, унпа анлăрах усă курма кирлĕ условисем туса хумаллах. Юрĕ, ЧР Аслă Канашĕ 1990 çулхи юпа уйăхĕн 27-мĕшĕнче "Чăваш Республикинчи Чĕлхесем çинчен" Саккун йышăнчĕ. Чăваш чĕлхи те, унпа килĕшӳллĕн, патшалăх чĕлхи пулса тăчĕ. Тĕпрен илсен, асăннă саккун чăн малтанах тăван атте-анне чĕлхине юратас тата упраса хăварас тивĕçе аса илтерет, ытти халăхсен чĕлхине хисеплеме вĕрентет. Унтах чăваш чĕлхине патшалăх статусĕ пани ытти наци халăхĕсен конституци прависене - вырăс тата ытти чĕлхесемпе усă курассине - пырса тивменнине палăртнă. ЧР Аслă Канашĕн Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи Чĕлхесем çинчен" калакан саккунне ĕçе кĕртмелли йĕрке çинчен" Постановленийĕ те пĕтĕмĕшле çак шухăша çирĕплетет. Хăш-пĕр статьясемсĕр пуçне саккун 1991 çулхи кăрлачăн 1- мĕшĕнчен ĕçе кĕрессине те питĕ ăнланмалла çырса хăварнă. Асăннă постановленин 3-мĕш пунктĕнче ун чухнех çакăн пек çырни те пулнă: Чăваш

Республикин Аслă Канашĕн культура, чĕлхе аталанăвĕ тата нацисем хушшинчи хутшăнусем енĕпе ĕçлекен комиссийĕпе пĕрле патшалăх чĕлхисене пĕлекен çын йышăнма тивĕçлĕ специальноçсемпе должноçсене шута илсе палăртмалла, çавăн пекех экзаменсене чăваш чĕлхипе йышăнакан, специальность паракан вăтам тата аслă вĕренӳ заведенийĕсенчи специальноçсен списокне палăртмалла".

Саккуна йышăннăранпа 6 çул иртрĕ. Халиччен вăл е ку статья тĕрĕс мар, улăштармалла ăна, кăларса пăрахмалла тесе суда паракан никам та пулман. Ĕнер вара ЧР Аслă сучĕ /пĕрремĕш инстанци/ ЧР Прокуратури тăратнă заявление пăхса тухнă.

Мĕншĕн? Мĕн килĕшмен Прокуратура ĕçченĕсене Чĕлхесем çинчен калакан саккунра? Чăн малтанах çакă этем прависене хĕсни пулать иккен. Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе килĕшӳллĕн, РФра граждансене социаллă сие, расăна, нацие, чĕлхене, тĕне кура пайлани пулмалла мар. РФ Ĕç çинчен калакан саккунăн 16 статйи те çынна ĕçе илнĕ чухне расăна, хăш наци представителĕ пулнине, мĕнле чĕлхепе калаçнине пăхмалла мар тет. РФ Конституцийĕн 32 статйин 4-мĕш пайĕ, 1995 çулхи утă уйăхĕн 31-мĕшĕнче йышăннă "Раççей Федерацийĕнчи патшалăх службин никĕсĕсем çинчен" федераци саккунĕн 21

статйин 2-мĕш пайĕ те çак шухăшах çирĕплетеççĕ. РФ Конституцийĕн 43 статйин 2, 3 пайĕсемпе, "Вĕрентӳ çинчен" федераци саккунĕн 5-мĕш статйин 1-мĕш пункчĕпе, 16 статйин 3 пайĕпе килĕшӳллĕн те граждансене аслă тата ятарлă вăтам професси пĕлĕвĕ паракан вĕрентӳ заведенийĕсене вĕренме илнĕ чух та раса, наци тата чĕлхе çине пăхмалла мар. Çапла вара асăннă постановлени граждансен конституци прависене тата ирĕклĕхне "хĕсни" пулса тухать имĕш. Заявление ЧР прокурорĕн çумĕ, юстици аслă советникĕ Г.А. Михопаркин ал ă пуснă.

Ĕнер пĕрремĕш лару пулчĕ. Аслă суд асăннă ĕçе эрне кун, пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче, тепĕр хут пăхса тухма йышăнчĕ. Мĕншĕн тесен ЧР Прокуратури тăратнă заявление вырăсла кăна çырнă. Пирĕн вара патшалăх чĕлхи иккĕ. Унсăр пуçне суд ларăвне пыма чĕнекен хута тепĕр енĕ /Парламент ятĕнчен Культура, вĕрентӳ, информаци политики тата çыхăну енĕпе ĕçлекен комитет ертӳçи Г.Н.Архипов калаçрĕ/ питĕ кая юлса - пуш уйăхĕн 21-мĕшĕнче кăна - илнĕ. Хатĕрленме вăхăт пулман та темелле.

Акă мĕнле ăнлантарчĕ Чĕлхесем çинчен калакан саккуна суд тунине Г.Н.Архипов: Прокуратура 3-мĕш пункт çын прависене хĕсни пулать тесе çирĕплетет. Айтăр, эппин, çак ыйту çине тепĕр енчен пăхар. Чăваш Республикинче пурăнатпăр

эпир, таçти ют çĕршывра мар. ЧРта çурри ытла - чăвашсем. Патшалăхăн 2 чĕлхе: вырăс тата чăваш. Мĕншĕн 2 чĕлхине те пĕр шая лартмастпăр? Ертсе пыракан органсенче чăвашсем çукпа пĕрех. Акă Шупашкар хула пуçлăхне суйларăмăр. Хăй те чăваш мар. Унăн аппаратĕнче те чăвашсем çукпа пĕрех тесен те йăнăш пулмасть. Прокурор та вырăнти халăх чĕлхисене пĕлмест. Гражадансене йышăнакан пулăшаканĕ те пулсан вырăнти халăхăн чĕлхине - чăваш чĕлхине - пĕлмест. Ун патне йышăнăва килекен ял çынни пур чухне те хăй ыйтăвне вырăсла кирлĕ пек тĕплĕ ăнлантарса пама пултарать-и-ха? Çук паллах. Хăш-пĕр министр патне пыр-ха тата. Чăвашла калаçмĕç кăна мар, итлемĕç те. Мордовире, сăмах май, культура министрĕ мордва чĕлхине пĕлменшĕн еплерех шăв-шав çĕклерĕç. Пирĕн вара? Вырăс чĕлхине пĕлместĕн пулсан, хамăр Чăваш Республикинче те ниçта та ĕçе илмĕç сана. "Пĕр-пĕр колхоза кайса ĕçлĕр",..- тейĕç. Çакă чăваш халăхĕн прависене хĕсни пулмасть-и вара? Çавăнпа постановленин 3-мĕш пунктне пăрахăçламалла мар, пурнăça кĕртмелле"...

Кама кирлĕ çакă? Кирек мĕнле шухăшласан та, патшалăх чĕлхисем иккĕ тетпĕр пулсан, çакна саккунпа çирĕплетнĕ пулсан, ун-кун пăхма, калаçма пăрахмалла, чарăнмалла. Сăмах май, хăш-пĕр çĕршывсенче тĕп патшалăх чĕлхине

пĕлмесен пуçлăх мар - таксист, сутуçă та пулса ĕçлеймĕн. Çапла çав, хăшĕ-пĕри ытларах чух халăха мар, чиновниксене лайăх пултăр тесе çунса çÿрет. Халĕ акă атте-анне, мăн асатте-асаннесен тăван чĕлхине суд тăватпăр. Çук, пĕртте савăнтармасть ку. Хамăра хамăр пĕтерниех мар-и-ха çакă?

1997, пуш, 25.

ЧĂВАШ - ЧĂВАША...

Тамăк. Ангел анчах вилнĕ çын чунне ăçта мĕн вырнаçнине кăтартать. Икĕ пы-ы-ысăк хуран. Пĕрне - витнĕ, тепри - хупăсăрах. Мĕншĕн апла-ха? "Витнинче - еврейсем. Пĕри тухма пултарсан - ыттисене те туртса кăларать. Çавăнпа витмесĕр май çук. Тепринче - чăвашсем. Пĕри хурантан хăпарма тытăнсанах ыттисем ăна каялла туртса антараççĕ, тухма памаççĕ. Çапла вара ку хурана витме те кирлĕ мар",- ăнлантарать хайхи ангел.

Паян кулăш кунĕ, çавăнпа шӳтлет-ха ку тесе шухăшлама ан васка, вулаканăм. Çӳлерехри пурнăç "анекдотне" те ахальтен илсе кăтартмарăм. Пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче Чăваш Республикин Аслă сучĕ пăхса тухнă ĕç шăпах çав тамăкри лару-тăрăва аса илтерчĕ.

Вулакансене маларах ЧР Прокуратури ЧР Аслă судне заявлени тăратни çинчен пĕлтернĕччĕ. Унта ЧР Аслă Канашĕн "Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи Чĕлхесем çинчен" саккунне ĕçе кĕртмелли йĕрке çинчен" Постановленийĕн 3 пункчĕн 3 абзацне, çакă РФ Конституцине хирĕçлет тесе, пăрахăçлама ыйтнă.

...Юстици çурчĕн ларусен залĕ. Кунта паян ЧР Прокуратури тăратнă ыйтăва пăхса тухаççĕ. Тăван чĕлхе пуласлăхне хӳтĕлеме

килнисем те кунтах: ЧР Патшалăх Канашĕн Культура, вĕрентӳ, информаци политики тата çыхăну енĕпе ĕçлекен комитечĕн ертӳçи Г.Архипов, Патшалăх Канашĕн юридици пайĕн ертӳçи А.Ухтияров, Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ В.Никитин-Станьял, ЧНК секретариачĕн ертӳçи О.Цыпленков, общественноç ятĕнчен - В.Иванов профессор, М.Антонов, В.Туркай поэт. Судьяран пĕрремĕш асăрхаттару илнĕ хыççăн Валери Туркай суд залĕнчен тухса кайрĕ. Пĕрремĕш итлеври пекех, Прокуратура хăй ыйтăвне тивĕçтерме, Постановленин 3 пункчĕн 3 абзацне пăрахăçлама ыйтать, мĕншĕн тесен çакă Чăваш Республикинче пурăнакан халăхăн 32 проценчĕн /68 проценчĕ вара- чăвашсем. - Авт./ прависене хĕсни пулать имĕш. "Хĕстерни" - лару тăршшĕпех илтĕнчĕ çак сăмах. Чăннипе вара камăн прависене хĕсет-ха асăннă пунктра çырса хăварнă шухăш? Çавна май вулакансене 6 сехет хушшинче пуçа килсе тухнă хăш-пĕр шухăш-самантсемпе паллаштарасах килет.

Чăн малтанах, мĕншĕн Чĕлхесем çинчен калакан саккуна йышăннăранма 6 çул иртсен кăна вăраннă-ха прокуратура? Çак 6 çул тăршшĕпе пурте пĕри теприне хĕсни-мĕннине асăрхамасăрах пурăннă. Çиччĕмĕш çулне вара сасартăк "куçсем" уçăлнă пек пулнă. Прокуратура представителĕсем ăнлантарнă тăрăх, çакă

РФ Тĕп прокуратурин 1996 çулхи хушăвĕпе /вырăнсенчи саккунсем РФ саккунĕсене хирĕçлемеççĕ-и, пурнăçланаççĕ-и- çакна тĕрĕслеме хушнă/ çыхăннă. Тĕрĕссипе вара Прокуратурăн йышăннă саккунсене хăйĕнех куллен, хушасса кĕтмесĕр 6 çул иртсен мар, яланах тĕрĕслесе тăмалла пулман-и-ха?

Иккĕмĕш самант. Вăл е ку аслă вĕренӳ заведенине вĕренме кĕнĕ чухне пурте вырăс чĕлхипе экзамен тытатпăр. Паллă ĕнтĕ, çакăн хыççăн абитуриентсен чылай пайĕ "шĕкĕлченет". Кам иртеймест? Ытларахăшĕ - чăваш ывăл-хĕрĕ. Ахальтен мар, палăртрĕ Г.Архипов, республикăри аслă вĕренӳ заведенийĕсенче вĕренекенсен 25 процентĕ кăна - ялтан килнисем. Эппин, вырăс чĕлхипе экзамен тыттарни чăваш çыннин прависене хĕсни пулмасан, мĕншĕн-ха чăваш чĕлхипе экзамен тыттарнăшăн хурах кăшкăрмалла?

Шел те, тăван республикăмăрта та пулин хамăра хӳтĕлейместпĕр, аталанма условисем тăваймастпăр та, тулай чăвашĕсем пирки мĕн аса илмелле пур пулĕ. Акă Чĕлхесем çинчен калакан саккунăн чăвашлăхшăн, чăваш аталанăвĕшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ абзацне Аслă суд пăрахăçларĕ. Мĕнех, РФ саккунĕсене пăхăнмалла тенине, паллах, хирĕçлеймест вырăнти влаç. Çав вăхăтрах вара хамăрăн вăйсăрлăхран та, каçарăр та, тĕлĕнме пăрахаймастăн. Шăпах 3 абзацра асăннă специальноçсен спискĕ

хальччен те хатĕр мар-мĕн. Çапла аталанать тата аталантаратпăр чăвашлăха Чăваш тĕнчин тĕп утравĕнче.

1997, ака, 1.

АФГАНИСТАНА ПАРĂНТАРМА ПУЛАТЬ-ШИ?

2001-мĕш çулхи авăн уйăхĕн 11-мĕшĕнче Америкăра пулса иртнĕ террорла ĕçсене "21-мĕш ĕмĕрте пулса иртнĕ чи хăрушă ĕç" тесе хакларĕç. Çапла калама сăлтав çук мар çав. Çĕр-çĕр çын, пĕр сăлтавсăр-айăпсăр, пурнăçпа сывпуллашрĕ. Камăн айăпĕпе çапла пулса тухрĕ-ха? Мĕн çитмен террористсене? Тата мĕн кĕтмелли юлать мирлĕ пурнăçпа пурăнас текен çынсен?

Хăшĕ-пĕри виççĕмĕш тĕнче вăрçи пуçланас хăрушлăх тухса тăни çинчен уççăнах пĕлтерме те хăраса тăмасть. Çапла калама сăлтавсем çук мар. Вулаканăмăрсем астăваççĕ пулĕ-ха, 10 çула тăсăлчĕ Раççейпе Афганистан çĕршывĕсем хушшинчи вăрçă. Мĕн чухлĕ куççуль тăкăнчĕ ун чухне Чăвашра та. Мĕн чухлĕ чăваш ывăлĕ Афганистанран цинк тупăкра таврăнчĕ çав çулсенче. Çук, пурпĕр парăнмарĕ вĕт ун чухне те туллă-сăртлă çĕршыв. Паллах, халĕ урăх вăхăт, урăх хĕç-пăшал теме пулать. Анчах афган çыннин /мирлĕ халăхăн мар паллах!/ кăмăлĕ çавах юлни никама та иккĕлентермелле мар. Хăй ятне, чысне, халăх йăли-йĕркине пырса тĕкĕнме, хурлама /культура, социаллă пурнăç шайĕ темĕнле пĕчĕк пулсан та/ ирĕк памасть

афган-чечен çынни.

Пентагон Афганистана хирĕç тăнăранпа вăхăт сахал мар иртрĕ. Палăртнă пекех, Америкăн "Симĕс беретсем" ятлă ятарлă ушкăнĕ, "Коммандос" тата SEALпа Delta ушкăнсем Афганистан çĕрĕ çине пырса çитнĕ, Усама бен Ладен вырнаçнă тесе шухăшлакан бункерсене аркатнă, талибсен чылай çар объектне пĕтернĕ, анчах "Афганистана, талибсене 1-2 уйăхрах чĕркуççи çине тăратасси" палăртнă пек пурнăçланайман. Усама бен Ладен çул-йĕрне халиччен те йĕрлесе тупаймасть ура тупанĕнчен пуçласа пуç тӳпине çити чи-чи çĕнĕ хĕç-пăшалпа, ытти йĕрлев-сыхлав япалисемпе тивĕçтернĕ Америкăн ятарлă шырав ушкăнĕ. Бен Ладен çав-çавах чĕрĕ-сывă, çав-çавах ун тавра шанчăклă çыннисем. Тĕлĕнмелле те, хăйне пула çĕршер мирлĕ çын пурнăçĕ татăлни те шухăшлаттармасть пулас 1-мĕш номерлĕ терориста. Халĕ, акă, унăн çул-йĕрне пачах Афганистанра мар, Иракра, Ливанра, Сирире, Палестинăра шырамалла теççĕ.

Америка Çĕр чăмăрĕ çинче кам хуçа пулнине кăтартас тесе çуннă вăхăтра /ку– манăн шухăш –авт./ тĕнчери ытти çĕршывсем çак ахăрсамана саманчĕпе хăйне май усă кураççĕ. АПШри Мичиган штатĕнчи пĕр фирма, акă, туалета çӳремелли ятарлă хут кăларма тытăннă. Хут çинче – бен Ладен сăнĕ. Мĕнех,

бизнесра та кам мĕнле пуйма пултарать тейĕпĕр. Ăнланмалла çакă. Анчах Ташкент хулинче "Талибан" ятлă футбол команди "Северный альянс" ятлă ушкăна футболла выляса çĕнтерни те шухăша ярать. Эппин, ку хутĕнче тĕрĕслĕх шыраса пуçланă хирĕç тăру, вăрçă икĕ çĕршыва кăна мар, пĕтĕм тĕнчене ура çине тăратнă.

2001 çулхи юпа уйăхĕн 7-мĕшĕнче ислам тĕнчине хирĕç пуçланă вăрçă 1-2 уйăха кăна мар, чылай çула тăсăлса каясси паян никамшăн та вăрттăнлăх мар ĕнтĕ. Д.Буш тата АПШ администрацийĕ "Вьетнам синдромне", Талибана, Америкăна хирĕç тăракан ислам вăйне тĕпĕ-йĕрĕпе пĕтермесĕр вăрçă пĕтмест, чарăнмасть тесе уççăнах пĕлтереççĕ. Çав вăхăтрах бен Ладенпа Талибана вăй илме хăйсемех пулăшнине вара манаççĕ. Астăватăр-и, 3 çул каялла кăна Америка Туркменирен Пакистана çул хывас тесе талибсен правительствине йышăнма та хатĕрччĕ. Паян Америкăра пурăнакансен 55 процентĕ, теракт хăрушлăхне йышăнаççĕ пулин те, "Тавăру" юхăмĕ пуçланнине ырламаççĕ. Вăрçă ыран-паян вĕçленессе те шанмаççĕ, мĕншĕн тесен унччен Вьетнампа Америка хушшинчи вăрçă та 1-2 уйăха кăна пырать тесе шантарнă пулнă. "Вьетнам синдромĕ" вара халиччен те пĕтмен...

Мĕнле шухăшлатăн, хисеплĕ вулаканăм, Афганистана парăнтарма

пулать-ши? Паллах, тӗрлӗ шухӑш пулма пултарать. Чылайӑшӗ Совет Союзӗ хӑй вӑхӑтӗнче Афганистанпа ҫапӑҫнӑ чух 15 пине яхӑн ҫамрӑк вӑйпитти яш пурнӑҫӗ татӑлнине астӑватех. Ҫавӑнпа ӑслӑ-тӑнлӑ ҫынсем ку хутӗнче кирек мӗнле пулсан та Америкӑпа Афганистан хушшине кӗме кирлӗ маррине, Афганистана парӑнтарма ҫуккине ҫине тӑрса ӑнлантараҫҫӗ. Талибан юхӑмне, 1994 ҫулта Кандагарта йӗркеленӗскере, бен Ладена тытнипе-вӗлернине кӑна пӗтерме ҫук, ашшӗсемшӗн каярах та, вӑрҫӑ чарӑнсан, вӗсен ывӑлӗсем, мӑнукӗсем таварӑҫҫӗ тесе ҫирӗплетеҫҫӗ вӗсем.

Америкӑн патшалӑх департаменчӗ вара тӗнчери террорла еҫсем тӑвакан организацисен шутне 28 ушкӑна кӗртнӗ. Ҫак списока "Буш списокӗ" те теҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах талибсен те хӑйсен тӑшманӗсен списокӗ пур. Унта 106 ҫын. Пурне те вӗлермелле тунӑ. Йышра Афганистанӑн унчченхи патши Захир Шах та пур-мӗн. Ҫапла вара Америкӑпа Афганистанӑн пайламалли, татса памалли мӑй таранах. Хӑшӗ те пулин парӑнасса кӗтмелли ҫук. Америка хӑй вӑйне кӑтартма, пуҫ пулма хӑнӑхнӑ, Афганистан та парӑнма хӑнӑхман. Икӗ вӑй: пӗри уҫҫӑнах пӗтӗм тӗнче илтмелле хӑйпе пӗрле пулманнисем – пирӗн тӑшман тесе ҫирӗплетет /Америка/, тепри шӑппӑн, вӑрттӑн тенӗ пек ҫӗнӗрен ҫӗнӗ террорла

ĕçсем хатĕрлет /Талибан/. Биотеррор тĕслĕхĕсем паян /Çĕпĕр шыççи çинчен пырать сăмах - авт./Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен Канадăна, Великобритание, Германие, Англие, Франциe, Израиле, Раççее те çитрĕç. Вилнĕ тĕслĕхсем те пур. Çакă вара биологи вăрçин пĕрремĕш тапхăрĕ кăна теççĕ. "Гардиан" хаçат тĕнчери халăхăн биотеррорăн иккĕмĕш тапхăрне те хатĕр пулмалла тесе асăрхаттарать, мĕншĕн тесен тепĕр чир - шатра /оспа/ вирусĕн хăрушлăхĕ пурри çинчен те уççăнах асăрхаттарать хăшĕ-пĕри.

2002, кăрлач.

ТУПМАЛЛИ

Ăста эс, вичкĕн куслă хăюллă Чăвашăм?..

Чăваш Енĕм .... 5 стр.
Мĕскĕнех-шим юлăпăр? 6
Эп - Канашсем 7
Самана 8
Канашсене 9
Эп - сан хĕрӳ 10
Çĕр пус е çĕр тус? 11
Йртет кун-çул 12
Çĕр-Аннем 13
Тĕттĕм 14
Сирте - малашлăх! 15
Самана 17
Тепĕр хут-и? 18
Санра - пуласлăх 19
Тăвансем 20
Ку - юлташ мар! 21
Ан пăрахăр ачăрсене! 22
Сана, Шупашкарăм! 23
Поэт чунĕ 24
Çĕнтерӳ 25
Пурăнатпăр-ха! 26
Саншăнах 28
Савăнар, туссем! 29
Çĕнĕ çул 30
Пуçла чупма! 31

Куççенче, асăрха, кĕркунне ман...

Нимĕн те ешермест ĕмĕр-ĕмĕр 32
Ку- телей мар! 33
Типнĕ çеçке 34
Çухалчĕç Ырăсем 35
Эп- çӳпĕ мар! 36
Пĕлĕтсем 37
Куççенче - кĕркунне 38
Элекçĕ эсĕ 39
Вăхăт çитмен 40
Ырăпа Усал 41
Хашĕ çĕнтерет? 42
Тавăру 43
Пĕчченлĕх 44
Хуçăлчĕ çунатăм 45
Касрĕç 46
Ыйтмастăп нумай 47
Шурă юр 48
Эпе вăл- эпĕ! 49
Айăпна ăнлан! 50
Савăнтарам-и? 51
Тăлăх чун сăмахĕ 52
Пĕччелĕх 53
Шикленӳ 54
Шухăшăмсем - çунатăмсем 55

Телейкре те пулин килсемччĕ...

Ан çиллен! 63
Ăçта пулнă? 64
Салам 65
Кам каларĕ? 66
Турă пилĕ 67
Эп килмĕп мар 68
Шăнкăравла! 69
Эс пулман пулсан 70
Тĕлĕк мар 71
Инçет 72
Килсемччĕ 73
Манпах 74
Кам эсĕ? 75
Ĕмĕрсем урлă 76
Салам! 77

Шыраççĕ санах.. 78
Хăвартăн.. 79
Шутламанччĕ.. 80
Шеллемерĕр... 81
Ан йĕрсем... 82
Уçă çил эпĕ... 83
Каятăп... 84
Ăна ан тив!.. 85
Усал мар эсĕ... 86
Сыв пулăр!... 87
Эс - вĕсен ратти... 88
Санпа кăна.. 89
Эсĕ тата эпĕ.. 90
Сансăр... 91
Чăваш Юпи ытамĕнче.. 92
Çемьеллĕ эсĕ... 93
Пурăнас тесех... 94
Шутламанччĕ.. 95
Мĕн черечĕ?.. 96
Эс килмерĕн.. 97
Юратăвăмах.. 98
Саншăнах.. 99
Юрату вилмест... 100
Ăнлан.. 101
Ан кулян!... 102
Эп таврăнмас... 103

Эпир санпа - услăхри икĕ тусан пĕрчи...

Эх-х-х!.. 104
Манăçмаççĕ... 105
Мĕн кĕтетĕн, тăванăм?... 106
Сан яту.. 107
Сăн ӳкерчĕк.. 108
Ултавлă тĕнче.. 109
Юратусăр... 110
Эсĕ кай.. 111
Кӳршĕ каччи... 112
Ирĕк кайăкĕ... 113
Кам эпĕ?.. 114
Эпĕ - çăткăн?.. 115
Сентиере... 116
Сентиере... 117
Каях.. 118
Эсĕ çуралтăн!... 119
Тăвансем... 120
Чунăмрах.. 121
Эпир - тусан пĕрчисем?.. 122
Хура хурлăхан.. 123
Черемре - çуркунне... 124
Тӳпене савса çĕклерĕн.. 125
Шыратăп сана... 126
Пул эс манăн.. 127
Манаймастăп... 128
Ăнланманлăх.. 129
Ан выля... 130
Ан калаç.. 131
Мĕнле ăшăнас?.. 132
Юратăр!.. 133
Ăçта эс?... 134
Пул ман тĕрев... 135
Ан аташ!... 136
Юрату тата кĕвĕçӳ.. 137
Ăçта-ха шурă пӳрт?.. 138
Астăватăн-и, анне?.. 140
Астармăшсем.. 141
Пĕр эсĕ.. 142
Ала сул та?... 143
Кусарусем..... **144**
Калавсем..... **156**
Тĕрлĕ çулта çырнă публицистикăлла статьясем... **172**

ЛИДИЯ ФИЛИППОВА

До встречи в объятии душ

На чувашском языке

Редактор М.Федорова
Корректор Н. Соловьева
Художник А. Турхан
Верстка Н. Анисимовой

Подписано в печать 21.05.2002. Формат 60x84/16. Бумага писчая. Печать офсетная. Гарнитура "Journal". Усл. печ. л 11,62. Уч.-изд. л. 8,0. Тираж 1000. Заказ № 411

Издательство Чувашского университета
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15

25.00

Лидия Ивановна Филиппова – Канаш районĕнчи Çеçпĕл-Малтикас ялĕнче çуралнă. Кăвар чĕреллĕ поэтăмăрпа пĕр вырăнта кун çути курнăранах-тăр унăн сăввисенче чăвашлăх, нациллĕх, ырăпа усал çинчен тарăннăн шухăшлани сисĕнет.

Л. Филиппова – журналист, Раççей Федерацийĕн Журналистсен союзĕн членĕ. Хăй вăхăтĕнче, Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, Пушкăртстан чăвашĕсем валли тухса тăракан "Урал сасси" республика хаçатĕнче, каярах – Шупашкарта "Хыпар" хаçат редакцийĕнче, "Чăваш Ен" телерадиокомпанире тăрăшнă. Пĕтĕм ĕç каçалăкĕ унăн чăвашлăх туйăмĕпе, ăнтăлăвĕпе çыхăннă теме пулать. Халĕ те, акă, Чăваш патшалăх университетĕнче вăй хунă май, çак туртăма тĕпплĕнрех пурнăçа кĕртес тесе тăрăшать.